ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ

# Шкулчченхи вĕренӳ организацийĕсенче ирттермелли мероприятисем

*Сценарисен пуххи*

Шупашкар 2020

УДК 373.2
ББК 74.100.58
Д56

Пухса хатĕрлекенĕсем –
**Н.В. Доброва**, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн доценчĕ,
**Л.А. Смирнова**, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн методисчĕ

**Д56** Шкулччченхи вĕренӳ организацийĕсенче ирттермелли мероприятисем: сценарисен пуххи / Н.В. Добровăпа Л.А. Смирнова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ. 2020. – 72 с.

Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ çулсерен сценарисен «Чăвашла уяв янратăр!» республика конкурсне ирттерет. Ку кĕнекене çак конкурса тăратнă чи лайăх сценарисене кĕртнĕ. Вĕсем ача садĕнче ĕçлекен воспи-тательсемпе музыка ертӳçисене те, ашшĕ-амăшне те усăллă пулĕç.

УДК 373.2
ББК 74.100.58

© Доброва Н.В., Смирнова Л.А. пухса хатĕрленĕ, 2020
© ЧР ВМХПВ «Чаваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ

# УМСĂМАХ

Çитĕнсе пыракан ăрăва халăх культурипе, тăван тавралăхăн йăли-йĕркипе, хăй халăхĕн чунлăхпа этеплĕх хаклăхĕсемпе паллаштарас ĕç вĕренӳпе воспитанин пур шайĕнче те пулса пымалла. Ку ĕçре шкулчченхи ӳсĕм пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртмалла. Шăпах çак вăхăтра, пурнăçăн малтанхи çулĕсенче, харпăрлăхăн социализаци процесĕнче ача культурăна, хăйĕн тăван чĕлхине, халăхне, тĕрлĕ япаласемпе пулăмсене ырă туйăмсемпе йышăнасси аталанма пуçлать.

Чăваш халăхĕн культури пуян та хăйне евĕрлĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Чăваш Ене çĕр пин юрă, çĕр пин сăмах, çĕр пин тĕрĕ çĕр-шывĕ теççĕ. Чăваш халăхĕ хăйĕн йăли-йĕркине сыхласа хăварас тесе тăрăшать, çавăнпа та халăх сăмахлăхне тата ăсталăхне хаклă япала пек упрать. Чăваш çĕр-шывĕнче пурăнакансем хăйсен историйĕпе те питĕ интересленеççĕ. «Хăйĕн историне пĕлмен халăхăн пуласлăхĕ çук», – тенĕ ваттисен сăмахĕнче. Ачасемшĕн пĕлтерĕшлĕ тата ăса хывма çăмăлрах наци культурин элеменчĕсем шутне юмах, юрă, вăййасем, халăх пултарулăхĕ, ӳнер, йăла-йĕркесем тата ыттисем те кĕреççĕ. Ачасем вĕсене кăмăлласа йышăнаççĕ.

Ача садĕнчи пурнăç хаваслă вăййасемпе кану мероприятийĕсемсĕр, шавлă уявсемпе ăмăртусемсĕр пулма пултарайманнине эпир пурте ăнланатпăр. Вĕсенчен хăшĕсем тавçăрулăха аталантарма пулăшаççĕ, теприсем – ăнкарулăха, виççĕмĕшĕсем вара – ăсра сăнарлама пултарнине. Анчах вĕсене пурне те пĕрлештерсе тăраканни – ачасен хусканусем тăваслăхне тата пурнăça çĕкленӳллĕ йышăнассине хăнăхтарасси.

Культурăллă кану ĕç-хĕлне йĕркелесси, пушă вăхăтпа усă курасси пĕтĕмĕшле культурăпа, педагогăн пĕлӳ тата ăсталăх шайĕпе, ашшĕ-амăшĕсен эстетика туртăмĕпе, ача садĕнче иртекен мероприятисене килсе курас килнипе тата май пулнипе, шкулчченхи вĕренӳ организацийĕн пурнăçĕнче активлă хутшăнас килнипе тачă çыхăннă. Уйрăмах çакăн пек ĕç-хĕлре кашни ачан пултарулăх енĕсене палăртма, ачана хăйне творчествăри тата пĕлӳри пултарулăхне туллинрех уçса пама май парать. Çынсен хутшăнăвĕпе культурин хутлăхне тĕпчекенсем ачасен канăвне тĕрĕс йĕркелени воспитани ĕçĕнчи чылай проблемăсене татса пама пултарнине палăртаççĕ.

Юлашки вăхăтра шкул çулне çитмен ачасен вăхăтне усăллă йĕркелесе тĕрлĕ енлĕ аталантарасси çине, культурăллă кану ĕç-хĕлĕнче ашшĕ-амăшĕсемпе ачисен хутшăнăвне çирĕплетесси çине уйрăмах тимлĕ пăхни пурне палăрать. Тĕрлĕ мероприятисене хутшăнтарса ачасене чунĕпе татах та ырăрах, пĕрпĕрин патне тимлĕрех пулма, хăйсен тата юлташĕсен çĕнтерĕвĕшĕн савăнма вĕрентетпĕр.

Вĕрентекенсен кулленхи ĕçне çăмăллатма çителĕклĕ чухлĕ чăвашла уяв сценарийĕ пуçтарас, тăван чĕлхене, литературине тата культурине аталантарас енпе творчествăллă ĕçлекен педагогсене тупса палăртас, вĕсен паха опытне сарас тĕллевпе Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ çулсерен сценарисен «Чăвашла уяв янратăр!» республика конкурсне ирттерет. Ку кĕнекене çак конкурса тăратнă чи лайăх сценарисене кĕртнĕ. Вĕсем ача садĕнче ĕçлекен воспитательсемпе музыка ертӳçисене те, ашшĕ-амăшне те усăллă пуласса шанатпăр.

## ШКУЛЧЧЕНХИ ВĔРЕНӲ УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕНЧЕ УЯВСЕМ ИРТТЕРЕССИ

Ача садĕнче ирттерекен кашни уяв е кану мероприятийĕ вăл вĕренӳ ĕç-хĕлĕн пайĕ пулса тăрать. Ятарласа йĕркеленĕ вĕренӳ ĕç-хĕлĕпе тĕрлĕ уяв-мероприятисем пĕр тĕллевех пурнăçлаççĕ – тĕрлĕ енлĕ аталаннă, ăс-тăн енчен пуян, малашнехи (тепĕр тапхăрти) пурнăçа хатĕр ачасене çитĕнтересси. Çав вăхăтрах тĕрлĕ уявсене хутшăнса ачасем ытларах илемлĕх, кăмăл-туйăм енчен аталаннине палăртас килет. Кашни мероприяти хатĕрленӳ тапхăрĕнчен пуçласа вĕçлениччченех ачасене ушкăнпа ĕçлеме, пĕр-пĕринпе хутшăнма, пĕр-пĕриншĕн кулянма е савăнма вĕрентет. Çĕкленӳллĕ кăмăлпа тулса уявран савăнăç, ырăлăх кĕтеççĕ пурте.

Кашни уяв-мероприяти хатĕрленӳ тапхăрĕнчен пуçланать. Ку тапхăрта ачасем тĕрлĕ костюмсем хатĕрленисĕр пуçне таврари хутлăха та палăртнă тематикăпа килĕшӳллĕн йĕркелеççĕ, литературăпа музыка произведенийĕсене вĕренеççĕ. Çакă пĕтĕмпех ачасенче илемлĕх туйăмĕсене вăратса аталанма пулăшать. Фольклор материалĕсем, Тăван çĕр-шыв, çут çанталăк, ĕç çинчен çырнă сăвăсемпе юрăсем патриотизмла туйăмсене çирĕплетеççĕ. Юрă, сăвă, ташă вĕренсе ачасем хăйсен çĕр-шывĕ, çут çанталăк, тĕрлĕ наци халăхĕ çинчен нумай çĕннине пĕлеççĕ. Апла пулсан ачасен тавра курăмĕ, ас тăваслăхĕ, пуплев хăнăхăвĕ, ăсра сăнарлама пултарни аталанать. Уявсене хутшăнни ачасене йĕркене çирĕп пăхăнма, ушкăнра хăйсене культурăллă тытма хăнăхтарать. Вăйăсем выляни, ташлани тата ытти тĕрлĕ хусканусем туни çамрăк организма çирĕпленме пулăшать, хусканусене координацилет.

Уявсем ирттернин тĕллевĕсенчен пĕри вăл – ачасен кăмăлне çĕклесси, ырă кăмăлне хускатасси тата уяв культурине йĕркелесси. Ĕçе ячĕшĕн, тĕплĕ шухăшламасăр, кашнинчех пĕр евĕр ирттернине ачасем хăвăрт туйса илеççĕ. Çавăнпа та педагогăн кашни юрра-сăвва, вăййипе ташшине, илемлĕх элеменчĕсене тĕплĕ шухăшласа суйламалла.

Уявăн никĕсĕнче тĕп шухăш пулмалла, ăна пур ачан та туйса илмелле. Çак шухăш мероприятин пуçламăшĕнчен вĕçне çитиччченех палăрса пымалла.

Мартăн 8-мĕшĕ пулсан – мĕнпур хĕрарăма саламламалли уяв, майăн 9-мĕшĕ пулсан – Çĕнтерӳ кунĕ тата ытти те. Уяв содержанине юрă-сăвă кăна мар, тавраша мĕнле илемлетни те уçса парать.

Уявсемпе кану мероприятийĕсем ирттерни ачана хăйĕн пултарулăхĕпе талантне тупса палăртма, унчченех пулнă хăнăхусене аталантарма пулăшаççĕ. Ачасем хăйсен çитĕнĕвĕсене кăтартаççĕ, тата, унсăр пуçне, кашни уяв çĕнĕ хавхалану туянмалли çăл куç, малашне аталанмалли стимул пулса тăрать.

Ачасене уйрамах ашшĕ-амăшĕ е ытти çывăх çыннисем уява пĕрле хутшăнни савăнтарать. Ашшĕ-амăшĕ е аслашшĕ-асламăшĕ юнашар чухне вĕсен куçĕсем те хаваслăнрах çиçеççĕ. Çавăнпа та педагогăн тепĕр тĕллевĕ ашшĕ-амăшĕсене уява хатĕрлеме кăна мар, ăна ирттерме те активлă хутшăнтарасси пулса тăрать. Культурăпа кану ĕç-хĕлне ашшĕ-амăшĕсене хутшăнтарни ача сачĕпе çемье хутшăнăвĕсене çирĕплетмелли ăнăçлă формăсенчен пĕри пулса тăрать. Ку вăл тата ачасене çитĕннисемпе хутшăнма вĕрентет, ашшĕ-амăшĕсемпе килтинчен урăхларах лару-тăрура пулма майсем туса парать.

Ачасем валли йĕркелекен уявсене тĕллевĕпе задачисене кура, содержанине кура тĕрлĕрен ушкăнланисем тĕл пулаççĕ. Эпир çак классификаци çинче чарăнса тăрăпăр:

- халăх тата фольклор уявĕсем: сурхури, çăварни тата ыт. те;
- патшалăх тата граждансен уявĕсем: Çĕнĕ çул, Çĕнтерӳ кунĕ, Хула тата кунĕ ыт. те;
- тĕнче уявĕсем: Амăшĕсен кунĕ, Ачасене хӳтĕлемелли кун, Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ тата ыт. те;
- йăларисем тата çемьерисем: çуралнă кун, Букварь уявĕ, Сывă пул, ача сачĕ тата ыт. те;
- çут çанталăк вăхăчĕпе çыхăннисем: Кĕр уявĕ, Хĕле ăсатни, кайăксен кунĕ тата ыт. те;
- ачасене илĕртме, савăнтарма ятарласа шухăшласа кăларнă уявсем: Оригами уявĕ, Хĕрлĕ тĕс уявĕ тата ыт. те.

Кану мероприятийĕсен тĕслĕх классификацийĕ:

- театр формиллĕ: пукане театрĕ, теттесен театрĕ, фланелеграф тата театрăн ытти тĕсĕсем; инсценировкăсем тата ыт. те;
- пĕлӳ илмеллисем: КВН; композиторсен, художниксен, артистсен, писательсемпе поэтсен пурнăçĕпе пултарулăхĕпе çыхăннă викторинăсем; йăла-йĕркесемпе, экологипе çыхăннă викторинăсем тата ыт. те;
- спорт енĕпе: спорт вăййисем, аттракционсем, хускануллă вăйăсем, ăмăртусем, эстафетăсем тата ыт. те;
- концертсем: тематика концерчĕсем, музыкăпа литература концерчĕсем тата ыт. те;

• халăх ваййисем: тупмалли вăйăсем, йăпатмăшсем, вăйă картисем тата ыт. те;

• видео- тата телефильмсем пăхни, аудиозаписьсем итлени тата ыт. те.

Ачасен уявĕн сценарийĕ – содержанине тата ĕçсен йĕркине тĕплĕн çырса хатĕрлени. Сценарире уявра мĕн пулса иртессине йĕркипе тата çыхăнуллă палăртса тухаççĕ: темăна уçса пани, пĕр пайран тепĕр пая куçнине кăтартни, усă куракан произведенисем е произведени сыпăкĕсем пулмалла. Çавăн пекех уява хутшăнакансене интереслентерсе хастарлăрах хутшăнтармалли формăсене, зала мĕнле илемлетнипе кирлĕ оборудование палăртмалла.

Мĕнле самантсем çине тимлĕрех пăхмалла-ха педагогăн уявăн тĕллевĕпе задачисем пурнăçланччăр тесен?

***Ачасен ĕç-хĕлĕ уявра ăнкаруллă пулмалла***. Ача уяв мĕнне, мĕнле уява хатĕрленнине, мĕнле тĕллевпе сăвă-юрă вĕреннине ăнланса илмелле. Çакăн пек чухне çеç ĕç-хĕлĕн кирлĕ сăлтавĕсене палăртма, лайăх результатсем курма пулать.

***Пуплев материалне*** ачасен пуплевне аталантармалли программа ыйтнисене кура активлă словарь йышне шута илсе суйласа илмелле. Çавăн пекех кашни ачан пуплевĕ мĕнле шайра аталаннине, кашнин хăйне уйрăм пултараслăхне тĕпе хумалла.

***Сăвăсем вĕреннĕ чух*** вăл сасă тĕлĕшĕнчен мĕнле янăранипе пĕрле текстăн содержанине те тишкеретпĕр.

Уяв сценарийĕпе ачасене туллин паллаштарма кирлĕ мар, унсăрăн малалла мĕн пулса пынине пĕтĕмпех пĕлсе тăни уяв хаваслăхне, вĕсен интересне пĕтерет. Пĕр ача та айккинче тăрса юлмалла мар, кашни ачан, ушкăнăн пултарулăхне шута илсе пурне те хутшăнтарамалла.

Уяв е кану мероприятийĕн тăршшĕ вăрах тăсăлса каймалла мар: аслă тата шкул умĕнхи ушкăнсенче 45-50 минут, кĕçĕн тата вăтам ушкăнсенче 35-40 минут. Уяв вăрăма тăсăлни ачасене ывăнтарать, вĕсен тимлĕхне çухатать.

Мероприяти вĕçленнĕ хыççăн ачасен кăмăл-туйăмне, вĕсем уявра мĕн çĕннине пĕлнине  ыйтса пĕлме манмалла мар. Тĕслĕхрен, пĕтĕмлетӳ тăвас тĕллевпе ачасемпе ӳкерме пулать. Ӳкерни ачасен ăшри туйăмĕсене çирĕплетме, сăнарлă ас тăвăма аталантарма пулăшать.

Уяв интереслĕ те усăллă иртtĕр, тĕллевпе задачăсем пурнăçланччăр тесен педагогăн нумай тăрăшмалла. Шкулччченхи пĕлӳ паракан программăсем ыйтнисене тивĕçтерсе ăс-тăн енчен тĕрлĕ енлĕ аталаннă тата ӳт-пӳ, сывлăх тĕлĕшĕнчен çирĕп ачасене çитĕнтермелле.

# ТӐВАН ЧӖЛХЕ – АТТЕ ӐС-ПУҪӖ,
# ТӐВАН ЧӖЛХЕ – АННЕ САССИ

*(Ача ашшӗ-амӑшӗ пухӑвӗн сценарийӗ)*

**Ӗҫ тӗллевӗ:** ачасен ашшӗ-амӑшӗсене тӑван чӗлхене мӗншӗн юратмалли тата упрамалли ҫинчен ӑнлантарасси, чӑваш чӗлхин пуянлӑхне уҫса кӑтартасси, чӑвашла калаҫма кӑмӑл-туйӑм ҫуратасси.

**Мероприятире кирлӗ хатӗрсем:** чӑваш юрри-кӗвви, музыка техники, ваттисен сӑмахӗсемпе паллӑ ҫынсен каларӑшӗсене ҫырнӑ плакатсем, ашшӗ-амӑшӗсем валли хатӗрленӗ анкетӑсем, курӑмлӑх материалӗ т. ыт. те.

## Уяв йӗрки

Залра илемлӗ чӑваш кӗвви янӑрать. Воспитатель ачасен ашшӗ-амӑшӗсене ҫавра сӗтел хушшине вырнаҫса ларма сӗнет.

Ырӑ кун пултӑр, ашшӗ-амӑшӗсем! Вӑхӑт уйӑрса пирӗн пата килнӗшӗн тавтапуҫ пурне те. Эпир сире курма яланхи пекех питӗ хавас! Паянхи пухӑва хаваслӑ кӑмӑл-туйӑмпа, ҫӗнӗ ӗмӗтпе пуҫлар.

Кашни юнашар ларакана хаклӑ сӑмах каласа савӑнтарар-ха. Тӗслӗхрен: «Светлана, эсир паян ытти чухнехи пекех питӗ кӑмӑллӑ…».

Пуху тӑршшӗпех пирӗн чӗресенче ҫакӑн пек ырӑ туйӑм хуҫалантӑр.

Паянхи пухӑвӑн теми: **«*Тӑван чӗлхе – атте ӑс-пуҫӗ, тӑван чӗлхе – анне сасси*».**

Тавах, анне, ҫуратнӑшӑн,
Сӳнми телей пилленӗшӗн,
Ҫуратнӑшӑн, юратнӑшӑн,
Чӗкеҫ чӗлхи пилленӗшӗн!

Ҫыннӑн пӗр анне. Тӑван чӗлхе те пӗрре. Пирӗн тӑван чӗлхе – чӑваш чӗлхи. Чӑваш чӗлхи – пуян, илемлӗ, ҫепӗҫ, паха тата асамлӑ. Вӑл чӑваш юрри пек янӑравлӑ та кӗвӗллӗ, унпа чуна ачашлама е йӑпатма, ӗҫклеме, хавхалантарма пулать. Ҫак чӗлхепе чӑвашсем пин ҫул каяллах калаҫнӑ, ӑна вӗсем пӗр-пӗрне ламран лама, сыпӑкран сыпӑка халалласа пынӑ, куҫ пек упрама тӑрӑшнӑ.

Тӑван чӗлхере халӑхӑн йӑли-йӗрки, илемӗпе чун асамлӑхӗ, ӑсӗпе мулӗ сӑнарланаҫҫӗ. Ачаранах пире тӑван чӗлхе ҫут тӗнчене ӑнланма, хамӑр валли пысӑк пурнӑҫ тӗнчине уҫма пулӑшать. Чӗлхесӗр общество та аталанма пултараймасть. Этем тени пӗр-пӗринпе хутшӑнмасӑр пурӑнаймасть. Хутшӑнма вара ҫынна чӗлхе кирлӗ. Чӗлхе пӗр-пӗринпе паллаштарать, туслаштарать, тепӗр чухне кӳрентерет те, ҫапӑҫтарать те. Ваттисем ахальтен каламан: «Йытӑпа йытӑ харкашса паллашать, ҫынпа ҫын – калаҫса». Чӗлхе пире ӗҫре те, уявра та, вӗренӳре те кирлӗ. Чӗлхе ҫынна вӗрентет, унӑн тавра курӑмне анлӑлатать, курманни-пӗлменни ҫинчен пӗлтерет, ҫыннӑн ӑс-тӑнне кӑна мар, туйӑмне те тарӑнлатать.

Чĕлхе урлă çынпа çын кăна мар, халăхпа халăх та пĕр-пĕринпе хутшăнать. Чăваш чĕлхи тĕрĕк чĕлхисемпе хурăнташлă. Ку чĕлхесен йышĕ чылаях пысăк – вăтăр виççĕ. Çак ушкăна турккăсем, тутарсем, узбексем, казахсем, азербайджансем, уйгурсем тата ыттисем те кĕреççĕ. Çак чĕлхесенче хăш-пĕр сăмахсем пĕр евĕрлĕ илтĕнеççĕ. Тĕслĕхрен, чăвашла – *анне*, *чечек*, ытти тĕрĕк чĕлхисенче – *ана, она, чэчэк*. Турккăсем, азербайджансем, туркмен-сем кашни хăй чĕлхипе калаççан та пĕр-пĕрне лайăх ăнланаççĕ. Тутарсемпе пушкăртсем те, казахсемпе кăркăссем те çавнашкал.

Чăваш чĕлхи витĕмлĕ те сăнарлă. Акă, тĕслĕхрен, çăлăн куçĕ те, хĕвелĕн ури те, уйăхăн хăлхи те çук. Анчах халăх çут çанталăка чĕрĕ пек курса, сăнарлă ӳкерсе кăтартнă.

Хĕвел, тух, хĕвел, тух!
Хĕвне кулă чиксе тух.
Вăй выля пирĕнпеле,
Ташă ташла пирĕнпеле.
Ай-ар-ай-яр! Ай-я-ра!
Хĕвел, тух, хĕвел, тух!
Хĕвне кулă чиксе тух.
Шевлӳсене парнеле,
Сарă кун пире пилле.
Ай-ар-ай-яр! Ай-я-ра!

Анне каççерен юрланă сăпка юррисен, асанне юптара-юптара панă тĕлĕн-мелле асамлă халап-юмахсен хакĕ çук.

П. Хусанкай çырнă «Сăпка юрри» юрра итлесе пăхар (*видеоролик кураççĕ*). Эсир вара чăвашла мĕнле сăпка юррисем пĕлетĕр? Ачасене сăпка юррисем юрласа паратăр-и? (*Ашшĕ-амăшĕсен хуравĕсем.*)

И.Я. Яковлев пирĕн чăваш çĕр-шывне çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ, çĕр пин сăмах çĕр-шывĕ тенĕ. Чăнах та, юррисем кăна мĕн тĕрли çук пулĕ чăваш халăхĕн: ташламалли марш, мухтанмалли гимн, чĕрене тивекен тĕрлĕрен юрăсем. Эпĕ сире И. Сакмаров илемлетнĕ «Уттарар-и утсене» халăх юррине итлеме сĕнетĕп. (*Видеоролик кураççĕ.*)

Чăваш ташши тата мĕнле илемлĕ те çăмăл! Хĕрарăмсем çемçен, тикĕс, лăпкăн ташланă. Ташланă чухне урасене урайĕнчен уйăрманпа пĕрех, аллисене вара куç шайĕнчен çӳле çĕклемен. Арçынсен ташшисем урăхларах пулнă: вĕсем хăвăрт, хĕрӳ ташланă. (*Видеоролик кураççĕ.*)

Эсир ачасемпе чăваш вăййисем вылятăр-и? Атьăр пĕр вăйă выляса пăхар.

Воспитатель ачасен ашшĕ-амăшĕсене «Ят пĕлмелле» вăййапа паллаштарать.

Малтанах ертсе пыракана суйлар. Эпĕ шут сăвви калатăп.

Пĕрре Вера качча кайнă,
Шăрттан касма çĕçĕ панă,

Çĕçĕ вĕçĕ хуçăк пулнă.
Алтать, палтать, тенкĕ çапать,
Кам телейлĕ, çав тухать.
(*Вăйă выляççĕ.)*

Эсир ачасемпе çакăн пек интереслĕ вăйăсем килте те выляма пултаратăр. Чăваш вăййисемпе çак кĕнекесенче паллашма пулать. (*Воспитатель ачасен ашшĕ-амăшĕсене «Ача-пăча вăййисем», «Пĕрле выляр-ха» кĕнекесемпе паллаштарать.)* Н.К. Крупская пирĕн чĕлхе пирки акă мĕн каланă: «Эпĕ чăвашсем калаçнине илтнĕ, вĕсен чĕлхи тĕлĕнмелле çепĕç чĕлхе». Чăн та, чăваш чĕлхинчен çепĕçреххине те, илемлĕреххине те, пуянраххине те, янăравлăраххине те урăх ниçта та тупаймăн. Эпир вара паянхи пухура сирĕнпе çакна курса ĕнентĕмĕр.

Воспитатель ачасен ашшĕ-амăшĕсене анкетăри ыйтусем çине хуравлама сĕнет.

Юлашкинчен манăн çакна калас килет: «Чăвашсем, хăвăрăн чĕлхĕре ан манăр, ăна ан çухатăр, ăна çухатсан эпир хамăр та çухалăпăр. Чăваш ячĕ те çĕр çинче юлмĕ. Апла пулсан тăван чĕлхене упраса хăварассишĕн çине тăрсах тăрăшар, унăн малашнехи кун-çулĕ вăрăм пултăр тесе те чуна парсах ĕçлер.

Сирĕн çемьере яланах юрату, килĕшӳ, ăнлану, ырлăх, сывлăх хуçалантăр. Телейлĕ пулăр!

**Литература**


*Антонова З.С., Портнова З.Н.* Пĕрле выляр-ха: ача сачĕсем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1992.

*Воронцов Г.И.* Ача-пăча вăййисем: Вăйăсем. Шăпа сăввисем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1992.

*Васильев Н*. Кĕçĕннисен кĕнеки. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1992.

Чăваш халăх сайчĕ – интернет-сайтри материалсем.



***Н.Н. Андреева**, Канаш районĕнчи*
*Уçырмари «Хĕвел» ача сачĕн*
*воспитателĕ*

# ÇАМРĂК КĔРЕШӲÇĔН ШКУЛĔ

*(5–7 çулхи ачасем валли хатĕрленĕ спорт уявĕн сценарийĕ)*

**Тĕллевĕ**: ачасене Раççей çарне хисеплеме, Тăван çĕр-шыва юратма хăнăхтарасси; паттăр, вăйлă пулма ăнтăласси; ашшĕсем пек, аслашшĕ-кукашшĕсем пек пулма вĕрентесси.

**Мероприятире кирлĕ хатĕрсем:** «Салтака манмалла мар» презентаци-видеоролик.

### Уяв йĕрки

Ачасем зала вăрçă маршĕпе кĕрсе стройпа тăраççĕ, сăвăсем калаççĕ.
Ачасем «Маттур салтаксем» юрă юрлаççĕ, вырнаçса ларaççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Ырă кун пултăр, ачасем, хаклă хăнасем, сире çак уявра курма эпир питĕ хавас. Кашни çул пирĕн çĕр-шыв Çĕнтерӳ кунне паллă тăвать. 75 çул каялла юлашки хăрушă бомба сассисем шăпланнă. Çак уява эпир вăрçă хирĕсенче çапăçнă салтаксене халаллатпăр.

Кăшт вăхăт иртсен пирĕн арçын ачасем ӳсĕç те паян çĕр-шыва сыхлакансен вырăнне йышăнĕç. Халĕ манăн арçын ачасене пĕрремĕш ыйту парас килет: мĕнле çарсем пур-ха пирĕн çĕр-шывра.

А ч а с е м. Сывлăш çарĕ, ракета çарĕ, спецслужба…

Е р т с е  п ы р а к а н. Çамрăк кĕрешӳçĕн шкулне эсир вĕренсе тухма хатĕр-и?

А ч а с е м. Хатĕр!

Е р т с е  п ы р а к а н. Паян пире ачасем çара кайма мĕнле хатĕрленмеллине кăтартса парĕç, вĕсене вара çар службине тивĕçлĕ пурнăçланă ашшĕсем пулăшĕç.

Сцена çине уява хутшăнакан ашшĕсемпе вĕсен ачисене чĕнетпĕр. Вĕсем командăра хăйсен пултарулăхне, тавçăрулăхне, вăр-варлăхне кăтартĕç. Паянхи уяв савăнăçлă иртсе кайтăр тесен эпир икĕ командăна пайланăпăр. Командăра 6 ашшĕпе 6 арçын ача, хăш-пĕр конкурссене пурте хутшăнма пултараççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Пирĕн арçын ачасем призывниксем пулĕç, ашшĕсем вара – вĕсен командирĕсем, вĕсем хăйсем çине ертсе пырас явапа илĕç. Çак вĕренӳ мĕнле иртнине тимлĕн пăхса пыма тĕп штаб пуçлăхне ача сачĕн ертӳçине Дмитриева Наталия Николаевнăна тата Антонова Татьяна Петровна методиста чĕнетпĕр.

Паян пирĕн икĕ команда пулĕ: «Лётчиксем» тата «Моряксем».

Командăсем шеренгăна тăраççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Паянхи вĕренӳ çăмăл пулмĕ: эсир пурте хатĕр-и? Хатĕр пулсан сире валли пĕрремĕш ĕç.

*1-мĕш эстафета*: «Çапăçу тревоги». Пĕрремĕш хутшăнакан каска тăхăнса, алла пăшал тытса паллă тунă вырăн таран чупса кайса килет те каскăпа пăшала тепĕр ачана тыттарать, çапла кашни ача…

Е р т с е  п ы р а к а н. Пĕрремĕш ĕç валли япăх мар, çапăçу тревоги урăх пулмĕ, çарта лăпкă кунсем пуçланаççĕ, салтаксем çар ĕçне вĕренеççĕ. Халĕ эсир пире хăвăр вăр-варлăха кăтартăр.

*2-мĕш эстафета*: «Пехотинец». Хутшăнакансем паллă тунă таран утса каяççĕ. Ашшĕсем пысăк утăмсем тăваççĕ, ачисем вара, çĕлен евĕр, вĕсен ури хушшипе утаççĕ. Каялла чупса килеççĕ. Пĕрре, иккĕ, кайрăмăр!

Е р т с е  п ы р а к а н. Пурте маттурсем. Малалла каятпăр. Ачасем, эсир пĕлетĕр-и вăрçă вăхăтĕнче паттăр хĕрсем пулнине? Вĕсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр вăрçă хирĕнче аманнă салтаксене сыватнă. Халĕ эпир пирĕн аннесем пултаруллă та хастар медсестрасем пулнине пăхăпăр. Кашни командăран икшер аннене чĕнетпĕр.

*3-мĕш эстафета:* «Пĕрремĕш пулăшу». Амăшĕсен ашшĕсене пĕрремĕш пулăшу памалла. Аманнă салтака бинтпа хăвăрт тата тĕрĕс çыхса ямалла, пĕтĕм бинчĕпе усă курмалла. Ĕçе вĕçлесен алсене çĕклĕр.

Е р т с е  п ы р а к а н. Çапла, çар службинче çăмăл мар халĕ. Канса илме те юрать. Кану вăхăтĕнче вара салтаксем юрлама тата ташлама юратнă.

«Смуглянка» ташă.

Е р т с е  п ы р а к а н. Мĕн тери маттур эсир, ачасем! Çар службинче çапăçма кăна мар, апат пĕçерме те тивнĕ салтаксен.

4-*мĕш эстафета*: «Кухньăри дежурнăй». (*Ашшĕсем хутшăнмаççĕ.*)

Кашăк, кашăкра çĕр улми. Чупма юрамасть, чĕтретме юрамасть, ерипен утмалла. Сигналпа карçинккаран çĕр улми илетпĕр те кашăка хуратпăр, асăрханса кастрюле кайса хуратпăр та каялла таврăнса кашăка тепĕр ачана паратпăр: пĕтĕм ача çапла тăвать.

Е р т с е  п ы р а к а н. Ашшĕсем те, ачисем те питĕ пысăк маттурсем. Апла пулсан малалла кайăпăр. Эсир йĕнерпе мĕнле усă курма пултарнине тĕрĕслер-ха.

Штаба питĕ пĕлтерĕшлĕ çыру илсе çитермелле.

*5-мĕш эстафета*: «Çыру илсе çитерни».

Ачасем – юлан утçăсем, ашшĕсем – лашасем. Ашшĕсен çурăмĕ çине ларса çыру илсе çитермелле. Пĕрре, иккĕ, кайрăмăр!

Е р т с е  п ы р а к а н. Пурте маттурсем, çăмăллăнах ĕçе пурнăçларăр.

*6-мĕш эстафета*: «Пĕр-пĕрне пулăшни». Ачасем çурăм çинчи михĕпе пластунла шăваççĕ, михĕсене ашшĕсене тыттараççĕ. Ашшĕсем миххĕ ăшне кĕрсе тăрса каялла сиксе каяççĕ, миххе тепĕр ачана тыттараççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Эсир питĕ пултаруллă, эпир вара малалла кайăпăр. Сирĕн аçăрсем те тахçан пĕчĕккĕ пулнă, вĕсем те «Казаксемпе вăрă-хурахсем» вăййа выляма юратнă. Халĕ эпир аттесене вĕсен ачалăхне илсе çитерĕпĕр.

«Казаксемпе вăрă-хурахсем» вăйă (*ачасем вылямаççĕ*).
«Анне, ан хăра, эпĕ санпа» юрă.

Е р т с е  п ы р а к а н**.** Ку йывăрлăха та çăмăллăнах çĕнтертĕмĕр. Ман алăра пакет. Айтăр-ха çак пакета уçса вулатпăр. «Енчен те эсир çак пакета тупса вуларăр пулсан, пур йывăрлăха та çĕнтертĕр пулсан эсир пултаруллă, хăвăрт, вăр-вар ачасем». Анчах та эпир сирĕн ăс-тăна та тĕрĕслесшĕн. Акă сире тепĕр ĕç.

«Çапла е çук» вăйă. Малтан ачасем хуравлаççĕ.

– Пирĕн çар вăйлă-и?

– Пирĕн çĕр-шыва хӳтĕлет-и?

– Хĕрсене пĕрле илеççĕ-и е çук?

– Илья Муромец паттăр-и?

– Шăпчăк хураха çĕнтернĕ-и?

– Пăшалтан персе пăрахнă-и?

– Буратинăн сăмси вăрăм-и?

– Вăл пăрахут çинче матрос пулнă-и е çук?

– Паян пирĕн уяв иртет-и?

– Аннепе хĕр ачасене саламлатпăр-и?

– Килĕшӳ пурри аван-и?

Е р т с е  п ы р а к а н. Ачасем, эсир маттурсем, халĕ аттесене тĕрĕслер-ха, вĕсене тупмалли юмах парар.

– Ветеран – пултаруллă ватă салтак-и ?

– Çарти повар – кок-и?

– Пур пистолет та вăл револьвер-и?

– Самолетри тата пăрахутри руль вăл штурвал-и?

– Постра тăни вăл дозорта тăни-и?

– Папаха вăл пур аттесен пуçа тăхăнмалли япала-и?

– «Катюша» вăл пур Катьăсен ячĕпе панă çăмăл машина марки-и?

Е р т с е  п ы р а к а н. Ку йывăрлăха та çăмăллăнах тӳссе ирттертĕр. Юлашкинчен сире валли вăйă хатĕрлерĕмĕр: «Хаваслă команда».

Е р т с е  п ы р а к а н. Çакăнпа пирĕн конкурс вĕçленсе пырать. Малтанах йывăртарах пулчĕ пулсан та пурте тăрăшрĕç, йывăрлăхсене çăмăллăн тӳссе ирттерчĕç. Çапла хуллен-майĕпен эпир сирĕнпе пирĕн çĕр-шыва хӳтĕлеме хăнăхса пырăпăр. Аттесем вара хăйсен çамрăклăхне аса илчĕç пулĕ тесе шутлатăп. Халĕ вара эпир хамăрăн тĕп командира Дмитриева Наталия Николаевнăна сăмах парăпăр.

Ачасене медальсем пани.

Е р т с е   п ы р а к а н.
Епле хитре умри тĕнче!
Çакна чунпа туйса илсемĕр.
Ялан мир пултăр çĕр çинче,
Çĕр-шыв татах та илемлентĕр!

***О.В. Евстрикова, Р.П. Чеменева**, Шупашкар районĕнчи Кӳкеçри «Ягодка» ача сачĕн воспитателĕсем.*

## ПĔЧĔК ТЕНКĔ ПАТНЕ ХĂНАНА

(Уяв сценарийĕ)

### Уяв йĕрки

Е р т с е   п ы р а к а н. Ачасем, манăн тупмалли юмах пур, пĕлеетĕр-ши хуравне?

– *Вĕсем хутран та пулаççĕ, пăхăртан та, çутатаççĕ те.*

– *Ăна ĕçленĕшĕн параççĕ, вĕсем пурне те питĕ кирлĕ.*

– *Кам унпа пĕлсе усă курать, çавна финанс ăнăçăвĕ кĕтет!* Мĕн-ши вăл?

А ч а с е м. Укçа, пурлăх!

Е р т с е   п ы р а к а н. Тĕрĕс, паян эпир сирĕнпе укçа пирки калаçăпăр.

Ачасем укçа çинчен сăвăсем калаççĕ. «Укçа чечекĕ» юрă юрлаççĕ. Шăнкăрав сасси илтĕнет.

Е р т с е   п ы р а к а н. Ачасем, итлĕр-ха, пирĕн пата такам скайппа шăнкăравлать.

Ачасем экран çине пăхаççĕ. Унта Тенкĕ хĕр ача тухать, вăл ачасене çул çӳреве Финансовск хулине чĕнет.

Е р т с е   п ы р а к а н. Мĕнех, ачасем, йышăнăпăр-и чĕнĕве?

А ч а с е м. Йышăнар!!!

Е р т с е   п ы р а к а н. Çул çӳреве мĕнпе кайма пулать-ши, ачасем? Çакна эпир тупмалли юмах тупсăмне пĕлсе хуравлăпăр.

Тĕлĕнмелле çурт пырать çулпа,
Çаврака резин ура.
Пассажирсемпе тулли,
Бензинпала бак тулли. (*Автобус*.)

Кашни хăйĕн вырăнне йышăнар та çула тухар!

Ачасем юрă юрлаççĕ.

«ТАВАР УЛĂШĂВĔ» вăййи.

Е р т с е п ы р а к а н. Кам пире кĕтсе тăрать-ха, атьăр палласа илер.

Çĕр çине вăл килнĕ йывăç пуленкинчен,
Папа Карло пит тăрăшнă çак илемлĕ теттешĕн. (*Буратино.*)

Залра кĕвĕ илтĕнет, ачасене Буратино кĕтсе илет.

Б у р а т и н о. Ырă кун пултăр сире, ачасем, эпĕ питĕ хавас сире курма. Ман сире пĕр халап каласа парас килет. Ĕлĕк-авал, цивилизаци пуçланиччен, арçынсем мамонт тытма çӳренĕ, хĕрарăмсем вĕсене çĕр хăвăлĕнче кăвайт умĕнче кĕтнĕ. Хуллен çынсем çĕр ĕçне вĕренсе пынă, пахча çимĕç ӳстерме хăнăхнă, савăт-сапа, атă-пушмак тума вĕреннĕ. Пĕри чашăк тума аван пĕлнĕ, анчах та мулкач тытма пĕлсех каяйман. Теприн вара тепĕр ĕç лайăхрах пулнă. Вара çынсене пуçа пĕр шухăш пырса кĕрет: хăйсем тунă япалисемпе улшăнасси! Таварпа улшăнасси çын пурнăçне çапла кĕрет. Ачасем, эсир пĕрпĕринпе япаласемпе улшăнатăр-и?

Е р т с е п ы р а к а н. Буратино, çак мая вĕсем питĕ лайăх пĕлеççĕ, кун пирки сăвăсем те калама пултараççĕ.

Ачасем сăвăсем калаççĕ.

Б у р а т и н о. Маттур, ачасем. Халĕ ман сирĕнпе пĕр вăйă выляс килет. Вăл «Тавар улăшăвĕ» ятлă.

Ачасем вăйă выляççĕ.

**Физкультура вăхăчĕ.**

Б у р а т и н о. Ачасем, сирĕнпе вăхăта ирттерме питĕ кăмăллă. Эсир çăмăллăнах пур ĕçе пурнăçларăр, хăвăр ăс-тăнăрпа мана тĕлĕнтертĕр. Манăн вара кайма вăхăт. Тавах сире! Чипер юлăр!

Е р т с е п ы р а к а н. Сана тавах, Буратино. Эпир вара малалла каятпăр, пурте хăвăр вырăна йышăнăр. Тепĕр чарăну – «Тупăш-тăкак».

«ТУПĂШ – ТĂКАК» чарăну.

Кĕвĕ илтĕнет, ачасене Матроскин кушак кĕтсе илет.

М а т р о с к и н к у ш а к. Салам, ачасем, эпĕ – Матроскин кушак, Простоквашино ялĕнчен. Мĕнле аван эсир пирĕн пата килни! Сире эпир мĕнле туслă пурăнни çинчен каласа паратăп. Шарик сăн ӳкерчĕксем тăвать. Ăна куншăн шалу укçи параççĕ, Хветĕр техникумра вĕренет – ăна лайăх вĕреннĕшĕн укçа (стипенди) параççĕ, эпĕ вара тивĕçлĕ канăва тухнă, мана та укçа (пенси) параççĕ.

Е р т с е п ы р а к а н. Ачасем, туссен тупăшĕ мĕнрен пуçтарăнать?

А ч а с е м. Шалу укçинчен, пенси укçинчен тата стипендирен.

М а т р о с к и н к у ш а к. Çак пĕтĕм укçана эпир тупăш тесе калатпăр. Шалу вăл – ĕçлесе илнĕ укçа. Укçана пĕтернине вара тăкак теççĕ. Эпĕ сирĕнпе

вăйă выляс тетĕп, çак вăйă «Тупăш – тăкак» ятлă. Эпĕ пуçламăшне калатăп, эсир вара – вĕçне. Пурте пĕрле хуравне калăр, тăкак-и ку е тупăш?

Анне шалу укçи илчĕ – *тупăш*,
Кукамай чирлерĕ – *тăкак*,
Парне çĕнсе илтĕр – *тупăш*,
Енчĕке çухатрăр – *тăкак*,
Асанне вак кукăль сутрĕ – *тупăш*,
Хваттершĕн тӳлерĕр – *тăкак*,
Укçа тупрăр – *тупăш*,
Пукане илтĕр – *тăкак*.

Е р т с е  п ы р а к а н. Мĕнех вара, ачасем, эпир пурте тупăшпа тăкак çинчен тĕплĕнрех пĕлтĕмĕр. Тавах сана, Матроскин кушак. Ачасем те сана тав тăвасшăн, илемлĕ ташă ташласа парасшăн.

Ачасем ташă ташлаççĕ.

М а т р о с к и н  к у ш а к. Тавах, ачасем, чипер юлăр.

Е р т с е  п ы р а к а н. Ачасем, хăвăр вырăна йышăнăр, çула тухатпăр. Тинех эпир Финансовск хулине çитрĕмĕр.

«ФИНАНСОВСК» чарăну.

Т е н к ĕ  х ĕ р  а ч а. Эпĕ питĕ хавас сире Финансовск хулинче курма. Ман пата çитиччен эсир тĕрлĕ пăтăрмахсемпе тĕл пултăр, вĕсене çăмăллăнах тӳссе ирттертĕр, хăвăрăн пĕлӳпе тавçăрулăха кăтартрăр. Сирĕн тăрăшулăхшăн эпĕ сире валли парне хатĕрлерĕм. *(Ачасене пухмач кăтартать.)* Ачасем, эсир мĕнле шутлатăр, мĕн-ши ку?

А ч а с е м. Пухмач!

Т е н к ĕ  х ĕ р  а ч а. Тĕрĕс! Кам калĕ, мĕн вăл пухмач? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Ачасем, камăн килте пухмач пур? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Пухмач вăл – укçа-тенкĕ пухмалли савăт. Вăл тем тĕрлĕ те пулать.

Е р т с е  п ы р а к а н. Мĕн тума кирлĕ-ши çак япала? *(Ачасем хуравлаççĕ).*

А ч а.

Укçана эп юрататăп,
Яланах ăна пухатăп,
Пухмача укçа яратăп.
Ман сысна тулса пырать,
Манпа пĕрле савăнать.

Т е н к ĕ  х ĕ р  а ч а. Ачасем, мана питĕ интереслĕ: мĕншĕн укçана пухмалла-ха? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Укçапа мĕн илеççĕ?

Манăн сире пĕр сĕнӳ парас килет. Укçана пухма та пулать, пĕтерме те аван. Пуçтарса пыма ачаранах вĕренсе пымалла. Пуçтарнă укçана кайран шутлама питĕ аван-çке! Халĕ вара ман сирĕнпе пĕр вăйă выляс килет.

«Укҫа мĕн тума кирлĕ?» вăйă. Тĕрĕс хурав илтсен алă ҫупăр, тĕрĕс мар хурав пулсан урасемпе тапăр:

– Аннене пулăшма,

– Ҫăкăр илме,

– Кушакпа выляма,

– Кĕнеке вулама,

– Сăвă калама,

– Хваттершĕн тӳлеме.

Т е н к ĕ  х ĕ р  а ч а. Маттур, ачасем! Пĕтĕмпех тĕрĕс хуравсем патăр. Халĕ вара укҫа ҫинчен тĕплĕнрех астуса юлма сире мультфильм кăтартас тетĕп. «Финанс пĕлĕвĕн урокĕсем» ятлă.

Ачасем «Смешарики» мультфильмăн пайне пăхаҫҫĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Тавах сана, Тенкĕ хĕр ача. Халĕ эпир пĕтĕмпех укҫа ҫинчен пĕлетпĕр, ăҫтан укҫа пуҫланса кайнă тата мĕнле унпа усă курмалла? Анчах та, ачасем, ҫакна та палăртса хăварас килет: укҫа пурнăҫра пысăк вырăн йышăнать пулин те Туслăх, Юрату, Ырлăх ҫинчен те манмалла мар!

Ачасем ваттисен сăмахĕсене калаҫҫĕ.

– Укҫапа ан мухтан, ĕҫпе мухтан.

– Укҫи пур та, ĕҫĕ ҫук.

– Укҫалла веҫех илеймĕн.

– Ырă ят укҫаран пахарах.

Ҫак ваттисен сăмахĕсене эсир мĕнле ăнланатăр-ши, ачасем?

Е р т с е  п ы р а к а н. Халĕ пирĕн каялла кайма та вăхăт ҫитрĕ.

Ачасем юрă юрлаҫҫĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Сире паянхи ҫул ҫӳрев килĕшрĕ-и? Эпир ăҫта пултăмăр? Сире мĕн ытларах килĕшрĕ? Мĕнле йывăрлăхсем пулчĕҫ? Мĕн ҫĕнни пĕлтĕмĕр? *(Ачасем хуравлаҫҫĕ.)*

Ертсе пыракан пурне те канфет-тенкĕ парнелет.

**Литература**

*Блискавка Е.* Дети и деньги. Самоучитель семейных финансов для детей. – М.: Манн, Иванов и Фербер. – 2014. – 80 с.

*Крючкова Н.А.* Учебно-методическое пособие по повышению финансовой грамотности «Первые шаги по ступеням финансовой грамотности» (для дошкольников). – Калининград, 2013.

***О.В. Евстрикова, Р.П. Чеменева****, Шупашкар районĕн Кӳкеҫри «Ягодка» ача сачĕн воспитателĕсем.*

# ЫРĂ, ЧĂТĂМЛĂ ПУЛСАССĂН ТĔНЧЕ ТЕ ПУЛĔ ÇУТĂРАХ

*(Мероприятие шкулченхи вĕренӳ организацийĕсенчи 6–7 çулхи ачасем валли хатĕрленĕ)*

**Ĕç тĕллевĕ:** ачасене «ырă», «усал», «чăтăмлăх» ăнлавсемпе паллаштарасси; пурнăçра ырăпа усала уйăрма вĕрентесси.

**Задачăсем:** ачасен пуплевне аталантарасси, кăмăл-сипет туйăмĕсене аталантарасси; пĕр-пĕриншĕн тăрăшма, çынсен кăмăл-шухăшне лайăххрах ăнланма пулăшасси.

**Маларах туса ирттернĕ ĕçсем:** «Ырă ят» сценка хатĕрлесси; «Тилĕ тус» юрра вĕренесси.

**Кирлĕ хатĕрсем:** В. Сухомлинскин сăн ӳкерчĕкĕ; И.Я. Яковлевăн сăн ӳкерчĕкĕ; альбом листисемпе сăрăсем; лăпкă кĕвĕ; хаваслă кĕвĕ; мучи костюмĕ; тилĕ костюмĕ; кĕреçе; хурăн йывăççи; йăвача.

### Уява ирттермелли йĕрке

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, паян эпир ырăпа усал çинчен калаçăпăр. *Ырă çынна ыр ятпа асăнаççĕ, усал çынна – усалпа* теççĕ ваттисем. Халĕ эпĕ сире пĕр калав итлеме сĕнетĕп.

*Тип çеçен хирте – çăл. Çăл çывăхĕнче – пӳрт. Унта аслашшĕпе мăнукĕ пурăнаççĕ. Çăл патĕнче вĕрен çыхнă витре. Иртен-çӳренсем чарăнса тăрса çăлран шыв ĕçеççĕ, асаттене тав тăваççĕ. Пĕррехинче ялан пурана сĕртĕнсе çинçелнĕ вĕрен татăлса кайнă, витре вара тарăн çăла ӳкнĕ. Асаттен урăх витре пулман. Текех вĕсем нимĕнле савăтпа та шыв ăсса илме пултарайман. Пĕр кун шыв ĕçмеççĕ аслашшĕпе мăнукĕ, иккĕмĕш кун… Чăтма çук шыв ĕçмесĕр. Виççĕмĕш кун ирпе ирех пĕр çул çӳрен килсе тухрĕ. Асатте унăн урапи çинче улăм айĕнче витре пуррине асăрхарĕ. Çул çӳрен малтан çăл çине пăхса илчĕ, унтан – аслашшĕпе мăнукĕ çине, вара лашине çавăрчĕ те малалла уттарчĕ.*

*– Мĕнле çын пулчĕ ку? – ыйтрĕ мăнукĕ аслашшĕнчен.*

*– Ку çынах мар, – хуравларĕ аслашшĕ.*

*Кăнтăрла тĕлне асаттен çурчĕ умĕнче тепĕр çул çӳрен чарăнчĕ. Вăл урапа çинчен витре илчĕ, ăна вĕренпе çыхса шыв ăсса кăларчĕ, аслашшĕпе мăнукне ĕçтерчĕ, унтан витрине хăйăрпа тасатрĕ те ăна хăйпе илсе кайрĕ.*

*– Мĕнле çын пулчĕ ку? – ыйтрĕ мăнукĕ аслашшĕнчен.*

*– Ку та çынах мар, – хуравларĕ аслашшĕ.*

Ыйтусем.

1. Иртен-çӳренсене асатте мĕнле кăмăлпа шыв ĕçтерет?
2. Аслашшĕпе мăнукĕн мĕнле инкек сиксе тухать?
3. Çул çӳрекенсем вĕсене пулăшаççĕ-и? Эсир вĕсем çинчен мĕн калама пултаратăр?

4. Сирĕн шутпа, çак калав мĕнле вĕçленĕ-ши? (*Ачасен хуравĕсем.*)

В о с п и т а т е л ь. Халĕ калава малалла итлĕпĕр.

*Каç енне асатте çурчĕ умĕнче виççĕмĕш çул çӳрен чарăнчĕ. Вăл урапа çинчен витре илчĕ, ăна вĕренпе çыхса шыв ăсса кăларчĕ. Ĕçсе тăрансан малалла кайрĕ. Витрине кунтах хăварчĕ.*

*– Мĕнле çын пулчĕ ку? – ыйтрĕ мăнукĕ аслашшĕнчен.*

*– Сăпайлă çын пулчĕ ку. Ыттисене пулăшма хатĕр çын, – хуравларĕ аслашшĕ.*

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, çак калава мĕнле ят пама пулать-ши? (*Ачасен хуравĕсем.*) Ку калава паллă вĕрентекен Василий Сухомлинский çырнă. (*Сăн ӳкерчĕкне кăтартни.*) Çак калав «Сăпайлă çын» ятлă.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ «Ырă ят» сценка пăхма сĕнетĕп.

Палюк йывăç çине хăйĕн ятне касса тăрать. Мучи килсе тăрать.

М у ч и. Эх-хĕм, эх-хĕм. Палюк, мĕн тăватăн-çак эсĕ?

П а л ю к. Муççи мучи, пĕлетĕн-и? Эпĕ йывăç çинче «Палюк – лайăх ача» тесе çыратăп.

М у ч и. Мĕн тăватăн унпа?

П а л ю к. Хам çинчен ырă ят юлтăр тетĕп. Вара пурте эпĕ пуррине пĕлĕç, тата ятăм та нумайлăха юлĕ.

М у ч и. Ав мĕнле шухăш тытнă эсĕ, ачам, тĕллевӳ аван-ха, анчах ĕçне вырăнлă тумастăн, атя пĕрле, хам пулăшам сана ырă ят илме.

Мучи Палюка кĕреçе тыттарать. Хăй пĕчĕк хурăн йăтать.

М у ч и. Çак хурăна çырма хĕррине лартăпăр та, вăл аякран-аякран курăнса ларĕ. Эсĕ ăна тимлĕ пăхма тăрăш: кашни кун шăвар, выльăх-чĕрлĕхрен сыхла.

Палюк шăтăк чаврĕ, хурăн лартрĕ.

М у ч и. Тата темиçе çултан эс лартнă хурăн сарăлса ешерĕ. Ян çыннисем вара пурте ку Палюк хурăнĕ тейĕç. Çынсем хушшинче санăн ырă яту çӳрĕ.

Ыйтусем.

1. Палюк ырă ят илес тесе мĕн тума шутлать?

2. Муççи мучи Палюка мĕнле майпа пулăшать?

В о с п и т а т е л ь. Апла пулсан кашни çыннăн ырă пулма тăрăшмалла. Ачасем, эсир ырă тенине мĕнле ăнланатăр? (*Ачасен хуравĕсем.*)

Ырă – лайăххи, илĕртӳлли, килĕшӳлли, усăлли, кăмălли.

Ырă çын – ăшă кăмăллă, ăнланакан, хĕрхенекен, йăваш характерлă.

В о с п и т а т е л ь. Усал тенине мĕнле ăнланатăр? (*Ачасен хуравĕсем.*)

Усал – начарри, сиенли, инкек, кăмăлсăрлăх, çилĕ, кӳренӳ.

Усал çын – ырă сунман, кама та пулин курайман, пĕр-пĕринпе хирĕçсе пурăнакан.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ вăйă выльăпăр. (Тĕллевĕ: ачасене çыннăн ырă мар енĕсем çине тимлĕх уйăрмалла маррине вĕрентесси.)

Ачасем карталанса тăраççĕ, алăран алла тытăнаççĕ. Лăпкă кĕвĕ янăрать. Пĕр ача çаврака варрине тăрать. Ачасем черетпе унăн ырă енĕсене калаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. И.Я. Яковлев (*сăн ӳкерчĕкне кăтартни*) чăваш ачисемшĕн нумай ырă ĕç тунă: чăваш ачисем валли шкулсем уçнă, чăваш алфавитне йĕркеленĕ, пĕрремĕш чăваш букварьне çĕнетсе пичетлесе кăларнă, калавсем çырнă. «Ӳкĕт» калавра вăл ачасене ырă çын пулма хистет. *(Хăшпĕр йĕркесене вуласа пани.)*

Вată çынсене, хăвăнтан аслисене хисепле, тантăшусем умĕнче пуçна ан каçăрт, хăвăнтан кĕçĕннисене пурне те кăмăл ту.

Сана усал тума çуратман, ырă тума çуратнă.

Усал ĕç тума мар, усал сăмах та ан кала.

Ваттисем калаçнă чух вĕсен сăмахне ан пӳл, пĕр чĕнмесĕр итлесе тăр.

Çук çынсене мĕн вăй çитнĕ таран пулăш.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпир халĕ ӳнерçĕ пулса тăрăпăр. Сирĕн шутпа, ырăпа усала мĕнпе танлаштарса ӳкерме пулать-ши? (*Ачасен хуравĕсем.*)

Хĕвел ырра, хура пĕлĕт усала пĕлтерĕ. *(Ачасем ӳкерчĕк туни, выставка йĕркелени.)*

В о с п и т а т е л ь. Воспитатель санăн аннӳпе е аçупа калаçса тăрать. Санăн воспитателе мĕн те пулин каламалла. Эсĕ мĕн тунă пулăттăн? (*Ачасен хуравĕсем.*)

В о с п и т а т е л ь. Воспитатель ачана ыйту панă. Ача тĕрĕс хурав парайман. Эсĕ мĕн тунă пулăттăн? (*Ачасен хуравĕсем.*)

В о с п и т а т е л ь. Тӳсĕмлĕх вăл – çынпа çемçе кăмăллă пулни, килĕшме пĕлни, ăна ăнланни, хисеплени. Пирĕн пурин те тӳсĕмлĕрех пулма тăрăшмалла.

Хаваслă кĕвĕ янăрать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн уява такамваскать пулмалла.

Тилĕ костюмĕ тăханнă а ч а тухать.

Т и л ĕ. Ырă кун пултăр!

А ч а с е м. Сывлăх сунатпăр, тилĕ тус!

Ачасем карталанса тăраççĕ, юрă юрлаççĕ

**Тилĕ тус**

Сăвви *В. Давыдов-Анатрин*, кĕвви *Ф. Лукинăн*

А ч а с е м.

Тиллит-тиллит тилĕ тус,
Ăçта каян, тилĕ тус?

Т и л ĕ.

Васкап эпĕ ялалла,
Манăн чĕпсем тытмалла.

А ч а с е м.

Ах, пĕлмен-çке халиччен
Эсĕ усал иккенне.
Кайса калăп сан çинчен
Хамăр касри вĕшлене.

В о с п и т а т е л ь. Тилĕ тус, эс яла ан кай, чĕпсене ан тыт. Ачасем сана йăвачапа ханалĕç.

Т и л ĕ. Эпĕ çав тери йăва çиме юрататăп. Тавтапуç, ачасем. Апла пулсан эпĕ те малашне сирĕн пек ырă кăмăллă пулма тăрăшăп.

Ачасем пурте пĕрле йăвачапа сăйланаççĕ.

***В.В. Иванова,***
*Канаш хулин 11-мĕш ача сачĕн воспитателĕ*

## СУРХУРИПЕ РАШТАВ УЯВĔ

*(Аслă ушкăн ачисене ăс-тăн парас уçлăхпа хатĕрленĕ сценари)*

**Вĕрентӳ тĕллевĕсем**.

Ачасене нумай çул каялла (ĕлĕк) тата хальхи вăхăтра чăваш халăхĕ паллă тăвакан Сурхури, Раштав уявĕсемпе паллаштарасси.

Сурхури уявĕнче чăвашсем Çĕнĕ çул çитнине паллă тунине ăнлантарасси. Кăрлачăн 7-мĕшĕнче эпир пирĕн Туррăн Иисус Христосăн çуралнă кунне, Раштав уявне, паллă тунине пĕлтересси. Çак уявсене ăнланма пулăшасси. Ачасене пĕрле калаçса, выляса хутшăнма хăнăхтарасси.

**Аталану тĕллевĕсем.**

Ачасене чăвашла шӳтлĕ юрă-сăвăсем (колядкăсем) юрлама вĕрентесси. Ачасенче килнĕ хăнасене тараватлăн кĕтсе илме пĕлнине аталантарасси, вĕсене тутлă апат-çимĕç парса ярса ăсатса яма вĕрентесси. Ачасене шӳтлĕ юрă-сăвăсене ăнланма хăнăхтарасси.

**Воспитани тĕллевĕсем.**

Ачасене малалла та чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе, уявĕсемпе паллаштарасси. Эпир чăваш ачисем пулнине, чăвашла калаçнине, юрланине, чăваш халăхĕн уявĕсене паллă тунине ăнланма пулăшасси. Тăван чĕлхене юратма, хамăр чăваш пулнăшăн савăнма вĕрентесси, чăвашла таса, ирĕклĕн калаçма хăнăхтарасси.

**Кирлĕ хатĕрсем.**

Капăр чăрăш, çĕр хăвăлĕн макечĕ, Раштав ячĕпе икона, улăм, теттесем –

ĕне, сурăхсем, качакасем, йывăçран тунă сырăш, сырăш çинче пукане выртать, ăшаланă пăрçа, тулă, 3 турилкке, кукăль çимĕç, конфет, укçа, пĕремĕк, майăр, пĕр татăк хура çăкăр, хулпуççи çине çакмалли хутаç, картонран хатĕрленĕ виçĕ пÿрт, хĕвел маски, асамлă хутаç, тĕрлĕ професси çыннисене ÿкернĕ карточкăсем, картонран касса кăларнă çăлтăрсем, виçĕ пукан.

**Материалсемпе оборудовани:** проектор, флешка, ноутбук, колонкăсем.

**Маларах туса ирттернĕ ĕçсем.**

Ачасемпе вылянă, ташăсем ташланă, чăвашсен ваттисен сăмахĕсене вĕреннĕ, чăвашла шÿтлĕ юрă-сăвăсем (колядкăсем) вĕреннĕ.

Ачасемпе калаçусем ирттернĕ, кĕнекесем курнă.

Уява ирттерме кĕвĕ залне илемлетнĕ, япаласем хатĕрленĕ.

**Словарь ĕçĕ:** Раштав, Сурхури.

## Уяв юхăмĕ

Илемлĕ кĕвĕ илтĕнет. Ачасемпе кĕвĕ (музыка) залне кĕретпĕр. Зал варринче капăр чăрăш ларать. Чăрăш çумнерех, пĕр енне, урайне улăм сарнă. Çак улăм сарнă вырăнта Раштав уявĕ ячĕпе çĕр хăвăлĕн (вите) макетне туса хунă. Çакăнтах Раштав ячĕпе икона та пур. Улăм çинче, сырăшра, шурă пирпе чĕркенĕ пукане выртать. Тата теттесем: ĕне, сурăхсем, качакасем – улăм çинче выртаççĕ.
Чăрăш айккинче, стена çумĕнче, картонран тунă виçĕ пысăк пÿрт ларать. Пÿртсем хушши 1,5 метр пулать. Кашни пÿрт çумĕнче пĕчĕк пукан. Икĕ пуканĕ çине турилккепе тутлă апат-çимĕç хунă. Виççĕмĕш пÿрт çумĕнчи пукан çинчи турилккере – пĕр татăк хура çăкăр. Ачасене мультфильм кăтартма проектор хатĕрленĕ.

В о с п и т а т е л ь. Сывлăх сунатăп сире пурне те – килнĕ хăнасем, ачасем.

А ч а с е м. Сывлăх сунатпăр.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, калăр-ха мана, тархасшăн, çут çанталăкăн мĕнле вăхăчĕ халĕ урамра?

А ч а с е м. Хĕлле.

В о с п и т а т е л ь. Тĕрĕс каларăр. Хĕлле. Ачасем, килĕштеретĕр-и-ха эсир хĕллене?

А ч а с е м. Килĕштеретпĕр.

В о с п и т а т е л ь. Мĕншĕн-ха эсир хĕллехи вăхăта юрататăр?

А ч а с е м. Мĕншĕн тесен эпир хĕлле анчах пĕр-пĕрне юр чăмаккисемпе пемелле вылятпăр, йĕлтĕрпе, конькипе ярăнатпăр. Тата çунашкасемпе те тăвайккинчен ярăнатпăр. Юртан тĕрлĕрен кĕлеткесем йăвалатпăр.

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем. Чăнах та, эсир хĕллене питĕ килĕштерни сисĕнет. Паян эпир яланах хĕлле пулакан Сурхури ятлă чăваш уявне паллă тума пуçтарăнтăмăр. Сурхури уявĕнче чăвашсем Çĕнĕ çул çитнине паллă тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Атьăр-ха пĕрле калатпăр: Сурхури.

А ч а с е м. Сурхури.

В о с п и т а т е л ь. Сурхурипе пĕрле эпир Раштав уявне те (Рождество)

паллă тăватпăр. Сурхури уявĕ Раштав уявĕпе пĕр вăхăтра килет. Рождество тесе вырăсла калатпăр, чăвашла – Раштав тетпĕр.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр ушкăнпа калатпăр: Рождество – Раштав.

А ч а с е м. Рождество – Раштав.

В о с п и т а т е л ь. Раштавра ялан ешĕл чăрăш лартаççĕ. Пирĕн те залра мĕнле капăр, илемлĕ чăрăш. Ачасем, капăр чăрăш хăйĕн çинчен юрă юрланине питĕ юратать. Сирĕн ăна юрă юрласа парса савăнтарас килмест-и?

А ч а с е м. Савăнтарас килет.

В о с п и т а т е л ь (*ёлка çине пăхса*). Илемлĕ чăрăш, итле хăвăн çинчен юрă юрланине.

Ачасем юрă юрлаççĕ.

Ай да ёлочка хороша, хороша,
Ай да ёлочка в гости к нам пришла…

В о с п и т а т е л ь. Маттурсем. Чăрăша эпир юрлани питĕ килĕшрĕ. «Рождество» (Раштав) сăмах родился, çуралнă тенине пĕлтерет. Кăрлачăн 7-мĕшĕнче эпир Туррăн – Иисус Христосăн çуралнă кунне паллă турăмăр. Çак уяв çинчен эпĕ сире мультфильм курма сĕнетĕп. Ачасем, сирĕн курас килет-и?

А ч а с е м. Курас килет.

Ачасем Раштав çинчен мультфильм кураççĕ (проектор).

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сире мультфильм килĕшрĕ-и?

А ч а с е м. Килĕшрĕ.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ эсир Çĕнĕ çул хыççăн мĕнле уяв паллă тунине пĕлтĕр ĕнтĕ.

Ачасем, мультфильмра эпир Турă витере, çĕр хăвăлĕнче, çуралнине куратпăр. Пăхăр-ха, ачасем, эсир елка айĕнче çĕр хăвăлĕн макетне куратăр. Çакăнтах Раштав ячĕпе икона та пур. Калăр-ха мана, тархасшăн, ачасем, мĕнле чĕр чунсене куратăр-ха эсир витере?

А ч а с е м. Ĕне, сурăхсем, качакасем.

В о с п и т а т е л ь. Тĕрĕс калатăр. Эпир икона çинче Турă амăшĕ Мария пĕчĕк ачана чĕркесе сырăш çине хунине куратпăр. Пирĕн те кунта, мультфильмри пекех, сырăшра шурă пирпе чĕркенĕ пĕчĕк ача выртать.

Эпир тата сирĕнпе Турă Иисус Христос витере çурални çинчен юрă та пĕлетпĕр. Килнĕ хăнасен çак юрра питĕ итлес килет. Юрласа кăтартатпăр-и?

А ч а с е м. Юрлатпăр. *(Ачасем юрă юрлаççĕ.)*

Овечки, коровки, склоня свои головки,
Приятно удивились, что гости к ним явились…

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем. Пурне те питĕ килĕшрĕ эсир юрлани. Иисус Христос Турă пире ялан курса тăрать. Çынсене йывăрлăхран сыхлать. Эпир лайăх ĕçсем тунăшăн Иисус Христос савăнать. Эпир начар ĕçсем тусас-

сăн – хурланать. Çавăнпа та пирĕн, ачасем, яланах ырă ĕçсем тумалла.

Иисус Христос Турă çуралсан пĕлĕтри çăлтăрсем те питĕ савăннă. Пирĕн капăр чăрăш çинче те, чи çӳлте, çăлтăр йăлкăшать. Тата эпир, ачасем, çăлтăрсемпе ташлама пĕлетпĕр.

Ачасем маларах хатĕрлесе хунă çăлтăрсене алла тытса ташлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпĕ маларах каларăм ĕнтĕ Сурхурипе Раштав уявĕсем яланах пĕрле килеççĕ тесе. Сурхури уявĕнче чăвашсем Çĕнĕ çул çитнине паллă тăваççĕ. Сурхури ячĕпе саламлатăп тени сана Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп тенĕ пекех шутланать. Сурхури уявĕ ячĕпе пурте пĕр-пĕрне саламлаççĕ. Кил хуçи хĕрарăмĕсем тутлă апат-çимĕç пĕçерсе хатĕрлеççĕ. Сирĕн пек ачасем тата пысăкраххисем килтен киле çӳресе çынсене уяв ячĕпе саламлаççĕ. Аслисем те, ачасем те пĕр-пĕрне ахаль сăмахсемпе анчах мар, ятарласа хывнă шӳтлĕ юрă-сăвăсемпе саламлаççĕ. Çак шӳтлĕ юрă-сăвăсене колядки теççĕ. Атьăр-ха пĕрле калатпăр.

А ч а с е м. Колядки.

В о с п и т а т е л ь. Нумай-нумай çул каялла, ĕлĕкрех, юрлакан çынсем кашни киле кĕрсессĕн урайне яланах ăшаланă пăрçа тата тулă сапнă. Мĕншĕн тулă сапнă-ха?

А ч а с е м. Мĕншĕн тесен тулă авăртса çăнăх тăваççĕ. Çăнăхран чуста хурса çăкăр пĕçереççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Тĕрĕс каларăр, çăкăр вăл çынсемшĕн мĕн ĕлĕк-авантанпах чи хаклă çимелли апат-çимĕç шутланать. Çăкăр çинчен мĕнле ваттисен сăмахĕсем пĕлетĕр эсир?

А ч а с е м.

– Çăкăртан асли çук.

– Питне çумасăр çăкăр ан тыт.

В о с п и т а т е л ь. Кил хуçисем юрлакансене хаваспах кĕтсе илнĕ. Вĕсене кукăль çимĕç, конфет, укçа, пĕремĕк, мăйăр тата яланах ăшаланă пăрçа хутаç ăшне ярса панă. Хăш-пĕр килте тутлă çимеллисем памасан е килĕнчи çынсем хыт кукар пулсан юрлакансем вĕсене питлесе, кулса, шӳтлĕ, кӳренмелле мар сăвă-юрă юрланă.

1-м ĕ ш  а ч а.

> Помогаю маме я,  
> Колядую до утра.  
> Пожалейте деточку,  
> Дайте мне конфеточку.

2-м ĕ ш  а ч а.

> Коляда, коляда,  
> А бывает коляда  
> Накануне Рождества.

Коляда пришла,
Рождество принесла.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр юлташсене, тантăшсене пĕрле пуçтарăнма чĕнер. Çитнĕ Сурхури ячĕпе килĕрен киле саламласа çӳрер.

А ч а с е м (*пурте пĕрле*).

Сурхури! Сурхури!
Çитрĕ кĕтнĕ Сурхури!
Сурхури çитнĕ, куртăр-и?
Хирĕç тухса илтĕр-и?
Хапха уçса хутăр-и?
Атьăр, тухăр, ачасем,
Урам тăрăх кайăпăр,
Килĕрен киле çӳрĕпĕр,
Салат-хăмла пухăпăр,
Кукăль-çимĕç пухăпăр,
Сурхури ĕçки тăвăпăр!
Сурхури тĕк Сурхури,
Чаплă пултăр Сурхури!
Кĕркури те Варвари,
Сурхурине пыратăр-и?
Пырассине пыратпăр,
Кĕмĕл нухрат парат(ă)р-и?

В о с п и т а т е л ь. Атьăр кайрăмăр, ачасем. Çынсене Çĕнĕ çул ячĕпе саламлăпăр. Килĕрен киле çӳрĕпĕр. Кукăль çимĕç пухăпăр.

Кашни пӳрт патĕнче пĕрер ача турилккепе çимĕç тытса тăрать.
Вĕсем кил хуçисем пулаççĕ.
Илемлĕ кĕвĕ илтĕнет. Ачасем ирĕклĕн, алăсене пĕр-пĕринпе тытмасăр елка тавра юрласа çаврăнаççĕ.

Сурхури! Сурхури!
Çитнĕ кĕтнĕ Сурхури!

Чăрăш айккинче, стена çумĕнче, картон пӳрт. Пӳрт çумĕнче пĕр ача аллинче турилккепе конфет, печени тытса тăрать.
Воспитательпе ачасем кантăкран шаккаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Тук-тук-тук! Килте пур-и?

А ч а. Пур. Килтех эпĕ.

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн кĕме юрать-и?

А ч а. Юрать. Иртĕр. Вăтанса ан тăрăр.

А ч а с е м (*пĕрле*). Çĕнĕ çул ячĕпе, Сурхури ячĕпе сире саламлама килтĕмĕр.

А ч а. Тавтапуç саламланăшăн.

Ачасем юрлаççĕ.

Пурте килĕр васкаса,
Кил умĕнче коляда.
Алăксене уçăр,
Конфетсем валеçĕр.
Сире сывлăх сунатпăр,
Конфетсене илетпĕр.

Пӳрт çумĕнчи ача турилкке çинчен конфет, печени илсе юрлакансенчен пĕрин хулпуççи çине çакнă хутаçне ярать.

А ч а с е м. Виçĕ тĕслĕ выльăх-чĕрлĕх хутаçлă пăрça пек хунавлă пултăр. *(Ачасем урайне ăшаланă пăрça, тулă сапаççĕ.)*

Пĕр вĕçĕ шыв патĕнче пултăр,
Тепĕр вĕçĕ картара пултăр!

А ч а с е м (*пурте пĕрле*). Тавтапуç.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ тепĕр киле кайăпăр.

Илемлĕ кĕвĕ илтĕнет. Ачасем капăр чăрăш тавра утса çаврăнаççĕ (алăсене пĕр-пĕринпе тытмасăр, хăйсем тĕллĕн, ирĕклĕн). Чăрăш айккинче, стена çумĕнче, ларакан иккĕмĕш пӳрт патне пыраççĕ. Пӳрт çумĕнче иккĕмĕш ача аллинче турилккепе сушка, кукăль-çимĕç, мăйăр, укçа тытса тăрса кĕтсе илет.
Воспитательпе ачасем кантăкран шаккаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Тук-тук-тук! Килте пур-и?

А ч а. Пур.

А ч а с е м. Пирĕн кĕме юрать-и?

А ч а. Юрать. Иртĕр. Килти пекех пулăр.

А ч а с е м (*пĕрле*). Сурхури ячĕпе, Çĕнĕ çул ячĕпе сире саламлама килтĕмĕр!

А ч а. Тавтапуç пире хисеп туса килнĕшĕн.

Ачасем (*пĕрле юрлаççĕ*).

Пире укçа парăр,
Пире конфет парăр.
Эпир начар тумастпăр,
Сире ырă сунатпăр.
Парне памасăр ан юлăр.

Ача аллинчи турилккере мĕн пуррине (сушка, кукăль çимĕç, мăйăр, укçа) юрлакансенчен пĕрин хутаçне хурать.

А ч а с е м. Виçĕ тĕслĕ выльăх-чĕрлĕх шӳтернĕ пăрça пек мăнтăр пултăр. *(Ачасем урайне ăшаланă пăрça, тулă сапаççĕ.)* Пĕр вĕçĕ шыв патĕнче пултăр, тепĕр вĕçĕ картара пултăр!

Тавтапуç кил хуçисене!

Тухса каяççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ тепĕр киле кайăпăр.

Илемлĕ кĕвĕ илтĕнет. Ачасем капăр чăрăш тавра ирĕклĕн утса çаврăнаççĕ те чăрăш айккинче, стена çумĕнче, ларакан картонран тунă виççĕмĕш пӳрт патне пыраççĕ. Пӳрт çумĕнче виççĕмĕш ача аллинче пĕр татăк хура çăкăр хунă турилккепе тăрать. Воспитательпе ачасем кантăкран шаккаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Тук-тук-тук! Килте пур-и?

А ч а. Пур.

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн кĕме юрать-и?

А ч а. Юрать. Иртĕр малалла.

А ч а с е м (*пĕрле*). Сурхури ячĕпе, Çĕнĕ çул ячĕпе сире саламлама килтĕмĕр.

А ч а. Тавтапуç.

Кил хуçи хытă пирки ачасем питлесе-кулса юрлаççĕ.

А ч а с е м.

Çакă хытă кил хуçин<br>
Ырашĕ ăнса пултăр.<br>
Пучахĕ пушă пултăр.<br>
Улăмĕ çăра пултăр.

Ача турилккери хура çăкăра юрлакансенчен пĕрин хутаçне ярать.

А ч а с е м.

Виçĕ тĕслĕ выльăх-чĕрлĕх<br>
Ăшаланă пăрçа пек хăрăк пултăр.<br>
Пĕр вĕçĕ шыв патĕнче пултăр,<br>
Тепĕр вĕçĕ картара пултăр.

Ачасем урайне ăшаланă пăрçа, тулă сапаççĕ.

А ч а с е м. Тавтапуç кил хуçине! (*Тухса каяççĕ.*)

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем. Сурхури, Çĕнĕ çул ячĕпе саламласа тухрăмăр. Кукăль çимĕç пухрăмăр. Хутаçри тутлă çимĕçе кăшт каярах çийĕпĕр.

Ачасем, эпĕ каласа хăварнăччĕ ĕнтĕ, çăкăр е хăпарту çынсемшĕн чи хаклă апат-çимĕç тесе. Ачасем, хăпартупа çăкăра хисеплесе вăйă выляр-и? Сирĕн выляс килет-и?

А ч а с е м. Выляс килет.

В о с п и т а т е л ь. Атьăр-ха алăсене хытă тытса, пысăк çаврака çăкăр форми евĕр тăватпăр.

Сурхури уявĕпе

Пĕçертĕмĕр хăпарту (*алăсене тытса утатпăр*).<br>
Çакăн пек пысăкскер (*алăсене çӳлелле çĕклетпĕр*),<br>
Çакăн пек пĕчĕкскер (*ларатпăр*),

Çакăн пек тутлăскер (*çавракана кĕретпĕр*),
Çакăн пек çавраскер (*тухатпăр*).
Хăпарту, хăпарту,
Кам килĕшет – кăмăл ту (*алă çупатпăр*).

Воспитатель. Маттур, ачасем. Сурхури уявĕнче çынсен тĕрлĕрен маска тăхăнас йăла пур. Çак маскăсене тăхăнса выляма юратаççĕ. Эпир те паян маскăсем тăхăнса выльăпăр.

Воспитатель.

Сарă ача, сар ача,
Тух-ха урама.

Ачасем.

Мĕн тума?
Мĕн тума?

Воспитатель. Вăйă выляма. (*Ачасене пуçа тăхăнмалли хĕвел маскине кăтартать.)* Ачасем, пăхăр-ха, Сурхури уявне уявлама мĕн килнĕ?

Ачасем. Хĕвел.

Воспитатель. Хĕвел савăннипе енчен енне сиксе ташлать. *(Ташланă пек силлесе кăтартать.)* Сирĕнпе вăл питĕ выляс кăмăллă. Ачасем, сирĕн те хĕвелпе выляс килет-и?

Ачасем. Выляс килет.

Воспитатель. Ку вăййа эпир группăра вылянăччĕ. Вăйă йĕркипе хĕвеле чĕнмелли сăмахсене аса илер-ха.

Ачасем (*пурте пĕрле*).

Çутат, Хĕвел, вăйлăрах,
Çулла пулĕ шăрăхрах,
Хĕл кунĕсем ăшăрах,
Çурхи кунсем çутăрах.

Воспитатель. Хĕвел «вĕри» тет те ачасене хăвалама пуçлать.

Илемлĕ кĕвĕ янăрать. Выляса пĕтерсен ачасем лараççĕ.

Воспитатель. Ачасем, пăхăр-ха пирĕн капăр чăрăш айне (*ачасене çӳлелле çĕклесе кăтартать*). Хĕл Мучи сире валли асамлă хутаç хăварнă. Сирĕн пĕлес килет-и, мĕн унта?

Ачасем. Пĕлес килет.

Воспитатель. Пăхăр-ха ăна. Уçатăп. Вăйă пытанса ларнă иккен хутаç ăшĕнче. Вăйă ячĕ «Ӳссен эсĕ кам пулан?». Сирĕн ӳссен кам пулассине пĕлес килет-и?

Ачасем. Пĕлес килет.

Воспитатель. Сирĕн хутаçран пĕр карточка илмелле. Унта мĕнле професси çыннине ӳкернĕ, ӳссен çавă пулатăр.

Илемлӗ кӗвӗ илтӗнет. Воспитатель ларакан кашни ача патне пырса хутаҫран карточка туртса кӑларма сӗнет. Ачасем черетпе хӑйсен професси ҫинчен каласа параҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем. Вӑйӑ выляса мӗн пӗлтӗмӗр эпир?

А ч а с е м. Ӳссен кам пулассине.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирӗн чӑрӑш питӗ илемлӗ, капӑр. Чӑрӑш тӑрринче ҫӑлтӑр мӗнле хитре йӑлтӑртататать. Хӑйӗн ҫинчен пире юрӑ юрлама чӗнет.

Ачасем юрӑ юрлаҫҫӗ.
Яркая звездочка на небе горит,
Детям у елочки мама говорит…

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ҫакӑнпа пирӗн уяв вӗҫленсе пырать. Мӗнле уявсене паллӑ турӑмӑр-ха эпир паян?

А ч а с е м. Сурхури, Раштав уявӗсене паллӑ турӑмӑр. Иисус Христос Турӑ ҫурални ҫинчен мультфильм куртӑмӑр.

В о с п и т а т е л ь. Тӗрӗс каларӑр. Тата эпир ташларӑмӑр, юрларӑмӑр. Чӑваш йӑлипе ҫынсене Ҫӗнӗ ҫул ячӗпе саламларӑмӑр. Кукӑль ҫимӗҫ пухрӑмӑр. Халӗ пурте пӗрле группӑра пуҫтарнӑ тутлӑ апат-ҫимӗҫе ҫийӗпӗр, чей ӗҫӗпӗр.

Ҫакӑнпа эпир сирӗнпе сывпуллашатпӑр. Чипер юлӑр. Тепре тӗл пуличчен.

**Литература**

*Артемьева Т.В., Михайлова С.Г.* Ачасене шкулччен вӗрентмелли тӗслӗх программа.
*Махалова И.В.* Воспитание здорового ребенка на традициях чувашского народа.
Ҫӑлкуҫ. Родник. Хрестоматия.

***Н.Г. Иванова**, Канаш районӗн*
*Ухманти «Пилеш» ача сачӗн воспитателӗ*

## АСЛӐ ҪӖНТЕРӲ КУННЕ СУМА СӐВАТПӐР

*(Аслӑ ушкӑнта иттернӗ спортпа музыка уявӗ)*

**Тӗллев:** ачасен патриотизм туйӑмне аталантарасси, Тӑван ҫӗр-шыва юратма вӗрентесси.

**Задачӑсем:** ачасене Тӑван ҫӗр-шывӑн аслӑ вӑрҫи тата Ҫӗнтерӳ кунӗ ҫинчен ҫӗнӗ пӗлӳ парасси, тӑван халӑх тунӑ паттӑрла ӗҫсемшӗн мӑнаҫлӑх туйӑмне аталантарасси.

Тӑван ҫӗр-шыва хӳтӗлеме кирлине ӑнлантарасси; ҫар ҫыннисене, вӑрҫӑ паттӑрӗсене, ветерансене хисеплеме хӑнӑхтарасси.

**Словарь ӗҫӗ**: зенитчик, мина, палӑк, окоп.

**Маларах туса ирттернӗ ӗҫ:** Аслӑ вӑрҫӑ ҫинчен калаҫусем ирттернӗ, «Тӑван ҫӗр-шыва хӳтӗлекенсем» альбома пӑхнӑ; юрӑсемпе сӑвӑсем вӗреннӗ.

**Материал:** карҫинккасем (2), кӑшӑл (2), кегли (10), вӗрен, хӗрлӗ хӑюсем,

бинтсем, «минăсем» (пластмасс кĕленчесем), çемçе мечĕксем, фонограмма, матрос воротникĕсем тата симĕс тĕслĕ футболкăсем, Георги лентисем.

**Уяв юхăмĕ**

«Прощание славянки» (кĕвви *В. Аганкинăн*) кĕвĕ янăрать. Ачасем зала кĕреççĕ, икĕ ушкăнпа хире-хирĕç тăраççĕ: «Моряксен» ушкăнĕ (моряк воротникĕсемпе) тата «Зенитчиксем» ушкăнĕ (симĕс футболкăсемпе).

1-мĕш воспитатель. Çу уйăхĕн 9-мĕшĕ – Çĕнтерӳ кунĕ. Нумай çул иртнĕ пулин те пурте çак паллă куна астăваççĕ, чыслаççĕ. Çак кун эпир Тăван çĕр-шыва хӳтĕленĕ салтаксене аса илетпĕр.

1-мĕш ача.

Чаплă юрăсем юрлатпăр
Хитре уçă сасăпа,
Раççей Çарне ыр сунатпăр
Эпир ăшă кăмăлпа.

2-мĕш ача.

Çĕнтерӳпе эсĕ тухрăн
Мĕнпур вăрçă вутĕнчен,
Пин-пин паттăрсем çуратрăн
Йывăр хĕрӳ кунсенче.

3-мĕш ача.

Аçа çиçĕм пек хăватлăн
Çапса ватрăн тăшмана.
Эсĕ паттăр, эсĕ вăйлă,
Пирĕн шанчăк яланах.

Ачасем «День Победы» юрă юрлаççĕ (кĕвви *А. Белоусовăн*, сăвви *П. Некрасовăн*).

2-мĕш воспитатель. Нумай хуласемпе ялсенче Тăван çĕр-шыва хӳтелекенсене чысласа палăксем лартнă. Палăксем умĕнче яланах çунса тăракан çулăм.

*(Ачасене слайдсем кăтартаççĕ.)*

Акă пăхăр. Ку паллă мар салтакăн вилтăприйĕ. Кунта та яланах çулăм çунса тăрать. Çак палăк Мускавра Кремль стени çумĕнче вырнаçнă. Ăна Аслă вăрçăра пуçне хунă пур салтака халалласа лартнă.

Пирĕн ялта та палăк пур. Ăна пирĕн ялтан тухнă, вăрçă хирĕнче пуçĕсене хунă паттăрсене чысласа лартнă. Плитасем çинче вĕсен ячĕсене çырнă.

Хĕр ачасем хĕрлĕ хăюсемпе ташă ташлаççĕ.

1-мĕш воспитатель. Халĕ шăп тăрса çĕр çинчи мирлĕ пурнăçшăн пуçне хунă паттăрсене аса илер. Вĕсене чыс та мухтав!

Ачасем ура çине тăраççĕ. (Фонограмма – метроном сасси.)

1-мĕш воспитатель. Ачасем, эсир пурте: арçын ачасем те, хĕр ачасем те –çĕр-шывăн пулас хӳтĕлевçисем. Эсир еплерех çирĕп те хастар пулассине халĕ курăпăр тата тĕрĕслĕпĕр.

Паян икĕ ушкăн ăмăртать – «Моряксем» тата «Зенитчиксем». Кашни эстафетăра ĕçе (задание) хăвăртрах тунă ушкăн çĕнтерет.

**1-мĕш эстафета**. «Ялав вырнаçтармалла» (*икĕ ушкăнри арçын ачасем хутшăнаççĕ).*

Ачасем пĕрерĕн колоннăсемпе тăраççĕ, малта тăракансен аллинче – ялав. Кашни колонна умĕнче – кăшăлсемпе конуссем. Сигналпа кашни колоннăран пĕрер ача ялав тытса кăшăлтан кăшăла сикет, конуссем хушшипе чупать, каялла чупса çитет, ялавне тепĕр ачана парать. Черетпе пурте çак задание (ĕçе) тăваççĕ. Юлашки арçын ача ялава вырнаçтарса лартать те колоннăна тăрать.

**2-мĕш эстафета**. «Аманнă салтака пулăш» *(хĕр ачасем хутшăнаççĕ).*

Хĕр ачасем пĕр-пĕрин хыççăн икĕ колоннăпа тăраççĕ. Сигналпа конус тавра икĕ хĕр ача чупать, «аманнă салтака» пулăшать (аллине бинтпа çыхать), каялла таврăнать.

1-мĕш воспитатель. Шăплăх вăхăтĕнче, çапăçусем хушшинче салтаксем каннă, юрăсем юрланă, мирлĕ пурнăçа аса илнĕ. Тепĕр чухне вара ташласа та илнĕ. Юрăпа ташă вĕсене вăй панă. Юрлама, ташлама эпир те юрататпăр.

Ачасем «Морячка» ташă ташлаççĕ (сăвви тата кĕвви *О. Газмановăн*).

**3-мĕш эстафета**. «Минăллă хир тăрăх утасси».

Ушкăнсем икшерĕн тăрса икĕ колоннăпа тăраççĕ. Пĕрне тутăрпа куçĕсене çыхнă, тепри ăна «минăллă хир» тăрăх уттарать – ачасем пластмасс кĕленчесем хушшипе утаççĕ, каялла тӳрĕ утса каяççĕ.

**4-мĕш эстафета**. «Тăшман окопне лектер».

Ачасем икĕ колоннăпа пĕрерĕн тăраççĕ. Вĕсен аллисенче пĕчĕк мечĕксем, хирĕç – «тăшман окопĕ» (карçинкка).

Сигналпа ачасен черетпе мечĕксене карçинккана пемелле. Карçинкккара мечĕк нумайрах ушкăн çĕнтерет.

**5-мĕш эстафета**. «Вĕрен туртасси».

Ушкăнсем сигналпа вĕрен туртаççĕ. Тупăшакансенчен хайсен енне туртса каçарнă ушкăн çĕнтерет.

Ачасем пукансем çине лараççĕ.

1-мĕш воспитатель. Ачасем, совет салтакĕсем нимĕç фашисчĕсенчен хамăр çĕр-шыва кăна мар, пĕтĕм Европăна ирĕке кăларнă. Çавăнпа та пирĕн салтаксене чысласа нумай çĕр-шыврва палăксем лартнă. Болгари çĕр-шы-

вĕнче Пловдив хула пур, çавăнта «Алеша» палăк тăрать *(слайд кăтартаççĕ).*

Алеша – салтак, вăл хĕвел тухăçнелле пăхать, аллинче – автомат. Палăк питĕ çӳллĕ вырăнта вырнаçнă, ăна таçтан та курма пулать.

«Алеша» юрă янăрать (сăвви *К. Ваншенкинăн*, кĕвви *Э. Коломановскин*).

1-мĕш ача.

Чыс туса пуçа пĕкетпĕр
Хаклă палăк умĕнче.
Чечексем çитĕнтеретпĕр
Тăрăшса ун çумĕнче.

2-мĕш ача.

«Салтаксем кунта çывраççĕ», –
Тет хуллен ват асатте.
Утнă-мĕн вĕсем вут витĕр
Чаплă Çĕнтерӳ патне.

3-мĕш ача.

Паттăрсем мире сыхланă,
Хунă пирĕншĕн пуçне.
Пăхаттирсене кам манĕ?
Палăк упрĕ ыр ятне.

Ачасем «Защитники Отечества» юрă юрлаççĕ (кĕвви *Н. Нужинăн*, сăвви *В. Ковтунăн*).

1-мĕш воспитатель. Ачасем, çакăнпа пирĕн уяв вĕçленет. Пурте аван ăмăртрăр – ăмăртура туслăх çĕнтерчĕ. Ман шутпа, сирĕн мăн аслаçăрсем сирĕнпе мухтаннă пулĕччĕç.

Ачасене Георги лентисене (хăюсем) параççĕ.

Георги ленти – Çĕнтерӳ кунĕн палли. Çак лентăна (хăйăва) çакса çӳрени вăрçăра пуçне хунă паттăрсене хисепленине пĕлтерет.

2-мĕш воспитатель. Уяв ячĕпе сире пурне те. Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе саламлатпăр!

**Литература**


*Кузнецова Л.В., Захарова Г.П., Дерябина М.Ю.* Ачасене шкулччен вĕрентмелли программа. – Шупашкар, 2009.

*Артемьева Т.В., Трофимов Г.Ф.* Пĕчĕккисен кĕнеки: хрестомати. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2006.

*Антонова З.С.* Пĕрле вулар-ха: хрестомати. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1991. «Дошкольное воспитание». – № 4. – 2018.



***С.А. Ильина**, Канаш районĕнчи Карăклăри «Хĕвел» ача сачĕн воспитателĕ*

## ЮМАХРИ ÇУЛ ÇӲРЕВ

*(Мероприятие 3–4 çулти ачасем валли хатĕрленĕ)*

**Тĕллев:** дидактика вăййисене усă курса пуплеве ăслас пултарулăха аталантарасси, ачасен тавра курăмне ӳстересси.

**Задачăсем:**

• ачасен çыхăнуллă пуплевне аталантарасси;

• тискер чĕр чунсен çурисене пĕрреллĕ тата нумайлă хисепре усă курма пĕлнине çирĕплетесси; пĕлекен хайлава палласа илме тата калама пĕлнине, юмах туппине тупма пĕлнине çирĕплетесси;

• геометри фигурисен тĕсне тата формине уйăрма тата калама пĕлнине çирĕплетесси (тăваткал, çаврашка, виçкĕтеслĕх);

«Йăва» вырăс халăх юмахĕпе кăсăкланас туртăма аталантарасси;

• алă пӳрнисене аталантарасси;

• вырăс халăх пуканипе кăсăкланас туйăма вăйлатасси; ачасене вырăс халăхĕн йăли-йĕркипе, культурипе интересленсе хавхалантарасси; ачасене пĕр-пĕринпе тата аслисемпе хутшăнма хăнăхтарасси.

**Сăмах йышне аталантарасси:** шалçа пăрçи, кашкăр çури, кашкăр çурисем, мулкач çури, мулкач çурисем, тилĕ çури, тилĕ çурисем, упа çури, упа çурисем, штамп, пичет.

**Кирлĕ хатĕрсем:** кавир, геометри фигурисем (тăваткал – 4 шт., çаврашка – 4 шт., виçкĕтеслĕх – 4 шт.), «Йăва» вырăс халăх юмахĕ валли хатĕрленĕ бибабо пуканесем, «Йăва» вырăс халăх юмахĕ тăрăх хатĕрленĕ мнемо çул (мнемодорожка) (ача шучĕпе), вырăс халăх пукани «Кĕрпе пики» («Крупеничка»), хĕрлĕ тата хура шалçа пăрçи, икĕ михĕ, вылямалли «Мулкач пӳрнескесем» пуканесем («Зайчики на пальчики») (ача шучĕпе), мольберт (3 шт. ), хĕрлĕ тĕслĕ сăрă, аласене шăлмалли хут (ача шучĕпе), «хăмла çырли» штамп (ача шучĕпе).

**Ĕç йĕрки:**

1. Вăйă майĕпе сывлăх сунни.
2. «Саплăк шыраса туп» дидактика вăййи.
3. Мнемо çулпа ĕçлесси. «Йăва» юмахăн пуçламăшне аса ил.
4. Алă пӳрнисене аталантармалли «Шалçа пăрçине пуçтар» вăйă.
5. Кану саманчĕ: «Мулкач ларать пашкаса» («Мулкач пӳрнескесем» пуканесене усă курса) вăйă.
6. «Ку камăн çури?» дидактика вăййи.
7. Штампсемпе «Упа валли кучченеç» ӳкересси.
8. Вăйă картинче вылямалли «Çаврака» («Каравай») вăйă.
9. Рефлекси.

**Ĕç юхăмĕ**

**1. Вăйă майĕпе сывлăх сунни.**

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăхăр-ха, паян пирĕн пата хăнасем килнĕ. Вĕсене сывлăх сунар-ха.

Ырă ир, юлташсем!

Ачасем, сире юмахсем килĕшеççĕ-и? (*Ачасен хуравĕсем.*)

Юмахсем асамлă çĕр-шывра пурăнаççĕ. Эпĕ сире çав асамлă çĕр-шыва чĕнесшĕн. Унта эпир кавир самолетпа çитĕпĕр. (*Воспитатель кавир самолета тытать. Кавирĕ вара шăтăк. Шăтăкĕсем геометри фигурисем евĕр.)*

**2. «Саплăк шыраса туп» дидактика вăййи.**

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăхăр-ха, кавир шăтăклă. Пирĕн кавире сапламалла. Мана сирĕн пулăшу кирлĕ. Манăн хатĕр саплăксем пур. Вĕсем геометри фигурисем евĕрлĕ. Çак саплăксене сирĕн тĕрĕс вырăна хурса кавире саплама тивет.

Атьăр ĕçе тытăнар.

Ачасем геометри фигурисене сасăпа каласа, вĕсен тĕсне асăнса саплăксене кавир çине хурса тухаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем. Халĕ вара çул çӳреве кайма вăхăт çитрĕ. Пурте пĕрле кавир çине ларăр та куççене хупăр, ман хыççăн асамлă сăмахсене калăр.

Пирĕн кавир пĕлĕтре,

Мĕн кĕтет-ши-ха пире?

Эпир вара юмаха лекĕпĕр. Мĕнле юмаха лекессине пĕлес тесен вара юмах туппине тупмалла.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, куççене уçма пултаратăр. Тупмалли юмаха тимлĕн итлĕр.

Чӳрече çинче выртаймарĕ, çул тăрăх чупса кайрĕ. Кам вăл? *(Йăва.)*

Маттур, ачасем, тупсăмне тупрăр.

**3. Мнемо çулпа ĕçлесси. «Йăва» юмахăн пуçламăшне аса ил.**

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сĕтел хушшине вырнаçса ларăр. Мĕнле лармаллине манса ан кайăр: тӳрĕ ларма тăрăшăр, урасене пĕрлештерĕр. Пăхăр-ха, сĕтел çинче ӳкерчĕксем пур. Вĕсем çине тимлĕ пăхсан «Йăва» юмахăн пуçламăшне аса илме пулать. Ан васкăр, эпĕ сире пулăшăп.

Пурăннă тет карчăкпа старик. Старик карчăкран ыйтать тет:

– Карчăк, йăва пĕçерсе çитер-ха.

– Мĕнрен пĕçерес-ха? Çăнăх çук.

– Эх, карчăк, кĕлет урайне шăл, пуçтарăнĕ те.

**4. Алă пӳрнисене аталантармалли вăйă «Шалçа пăрçине пуçтар».**

Карчăк вара çапла турĕ: шăлчĕ, пуçтарчĕ, астумасăр шалçа пăрçин мих-

хине тăкса ячĕ. Ачасем, атьăр-ха карчăка шалçа пăрçине пуçтарма пулăшăпăр: хĕрлĕ тĕслĕ шалçа пăрçине ак çак миххе, хурине вара ак çак миххе ярăр. Асăрханулларах пулăр.

К а р ч ă к. Тавтапуç сире, ачасем, кĕлете тирпейленĕшĕн. Халĕ эпĕ йăва пĕçерме хатĕр.

В о с п и т а т е л ь. Карчăк хăймапа чуста çăрчĕ, йăва йăваларĕ, çу çинче ăшаларĕ, чӳрече çине сивĕнме хучĕ. Чӳрече çинче йăван выртас килмерĕ, çул тăрăх кусса кайрĕ.

Ачасем, йăва кама тĕл пулчĕ? (*Ачасен хуравĕсем.*)

Мулкач йăвана мĕн каларĕ? (*Ачасен хуравĕсем.*)

Йăва мĕн хуравларĕ? (*Ачасен хуравĕсем.*)

М у л к а ч. Юрĕ, çапла пултăр. Эпĕ сана çимĕп, анчах та сире манăн юлташсемпе выляма сĕнесшĕн.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр вĕсемпе выльăпăр.

**5. Кану саманчĕ: «Мулкач ларать пашкаса» («Мулкач пӳрнескесем» пуканесене усă курса).**

М у л к а ч. Сисетĕп, кунта кашкăр килет. Пирĕн часах тарас пулать. Ачасем, пире пытанма пулăшăр-ха.

В о с п и т а т е л ь. Кусса пырать йăва çулпа, ăна хирĕç… (*Ачасен хуравĕсем.*)

Тĕрĕс. Кашкăр йăвана мĕн каларĕ? (*Ачасен хуравĕсем.*)

Йăва мĕн хуравларĕ? (*Ачасен хуравĕсем.*)

К а ш к ă р. Юрĕ, çимĕп эпĕ сана, эпĕ ырă кашкăр. Анчах манран темшĕн пурте хăраççĕ. Вăрманта чупнă хушăра пĕтĕм чĕр чунсем манран хăраса хăйсен çурисене çухатса пĕтерне. Хамăн çурасене те çухатрăм. Ачасем, çурасене тупма пулăшăпăр-и?

**6. «Ку камăн çури?» дидактика вăййи.**

Маттур, ачасем, пулăшрăр çурасене тупма.

К а ш к ă р. Тавтапуç, ачасем. Пулăшрăр мана çурасене тупма.

В о с п и т а т е л ь. Йăва малалла кусса кайрĕ. Ăна хирĕç… (*Ачасен хуравĕсем.*) Тĕрĕс, вăл ачасене мĕн терĕ? (*Ачасен хуравĕсем.*) Йăва мĕн хуравларĕ? (*Ачасен хуравĕсем.*)

У п а. Эсĕ мана хăмла çырли çитермесен эпĕ сана çисе яратăп.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, йăвана пулăшăпăр-и? (*Ачасен хуравĕсем.*) Хăмла çырли пиçеймен, ăçтан тупăпăр-ши? (*Ачасен хуравĕсем.*) Эпĕ сире штампсемпе усă курса хăмла çырли ӳкерме сĕнетĕп.

**7. Штампсемпе «Упа валли кученеç» ӳкересси.**

В о с п и т а т е л ь. Эпĕ çырласене пуçтарма карçинккасем хатĕрлерĕм. Эпĕ штампа хĕрлĕ тĕслĕ сăрă çине пусатăп, кайран карçинкка çине пичет лартатăп. Пăхăр-ха, мĕнле хитре çырласем пулаççĕ. Ĕçе пуçăнар, ачасем. Типтерлĕ ĕçлĕр. Ĕçлесе пĕтерсен аласене хутпа шăлăр.

У п а. Тавтапуç сире, ачасем. Савăнтартăр мана. Мĕнле хитре, тутлă çырласем ўкертĕр. Сывă пулăр.

В о с п и т а т е л ь. Йăва малалла кусса кайрĕ. Ăна хирĕç… (*Ачасен хуравĕсем.*)

Т и л ĕ. Сывă-и, йăва? Мĕнлерех эсĕ лайăххскер. Паян сан çуралнă кун пулнине пĕлтĕм, анчах темшĕн саншăн салам юрри никам та юрламан.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр-ха тилĕпе пĕрле туслă тăрса йăвана салам юрри юрласа парар.

**8. Вăйă картинче вылямалли «Çаврака» («Каравай») вăйă.**

Т и л ĕ. Тавтапуç, ачасем, савăнтартăр мана. Анчах эпĕ питĕ ывăнтăм.

Й ă в а. Эпĕ те.

Т и л ĕ. Кайрăмăр, йăва, эпĕ сана карчăкпа старик патне ăсатса ярăп.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн те ача садне таврăнма вăхăт çитрĕ. Шăппăн кавир самолет патне пырар та тытăнар, куçсене хупар та вĕçсе каяр.

**9. Рефлекси.**

Ачасем, эпир сирĕнпе ăçта пултăмăр?

Карчăка мĕнле пулăшрăмăр?

Çак юмахăн тĕп сăнарĕ кам?

Çул çўревре кампа тĕл пултăмăр?

Сире ытларах мĕн асра юлчĕ?

**Литература**

*Артемьева Т.В.* Ачасене шкулччен вĕрентмелли тĕслĕх программи. Пуплеве аталантарасси. Илемлĕ литературăпа паллаштарасси. Вырăс (тăван мар) чĕлхине вĕрентесси /Т.В.Артемьева, С.Г.Михайлова, Н.В.Иванова. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015.

*Гербова В.В*. Развитие речи в детском саду: младшая группа – М.: МОЗАИКА-СИНТЕЗ, 2017.

От рождения до школы. Основная образовательная программа дошкольного образования /под ред. Н.Е. Вераксы, Т.С. Комаровой, М.А. Васильевой. 4-е изд., перераб. – М.: МОЗАИКА-СИНТЕЗ, 2016.

*Никитина А.В*. «Нетрадиционные техники рисования в ДОУ: пособие для воспитателей и родителей». – СПб.: КАРО, 2007.

*Полянская Т.Б.* Использование метода мнемотехники в обучении рассказыванию детей дошкольного возраста. – СПб., 2010.

*Скворцов М.И.. Скворцова А.В*. Чувашско-русский, русско-чувашский словарь. – Изд. 3-е, стереотип. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006.

*Шайдурова Н.В*. Традиционная тряпичная кукла: учебно-методич. пособие. – СПб.: Детство-Пресс, 2011.

***Е.А. Казакова****, Чăваш Республикин Вăрмар районĕнчи «Çăлкуç» ача сачĕн воспитателĕ*

## МОЙДОДЫР ПОСЫЛКИ

(Мероприятие 4–5 çулти ачасем валли хатĕрленĕ)

**Тĕллев:** ачасене харпăр гигиенăна пăханма хăнахтарасси; ыйтусене хуравлама, илемлĕ литературăна юратма вĕрентесси, ачасен пуплевне аталантарасси; тавра курăмне ӳстересси.

**Материал**: хитре посылка, харпăр хăй гигиенин япалисем: супăнь, супăнь савăчĕ, шăл щетки, шăл пасти, стакан, пит шăлли, сăмса тутри, тура.

### Вăйă йĕрки

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн группăна паян почтальон посылка илсе килчĕ. Акă вăл (*кăтартать*). Халĕ эпир ăна уçса пăхатпăр, камран пулнине пĕлетпĕр. (*Посылкăна уçать*). Ачасем, кунта çыру та пур (*вулать*).

Манăн хаклă ачасем,
Сирĕн пата çыру çыратăп.
Çакăн пек сиртен ыйтатăп:
Таса пулччăр пит-куçсем!
Парне ярса панă май
Сиртен çав тери ыйтатăп:
Савăнар куллен ялан,
Кĕрешер наянлăхпа.
Таса мара ал памастăп,
Ун патне хăнана каймастăп.
Хам эпĕ ялан çăвăнатăп.
Мойдодыр тесе ал пусатăп.

В о с п и т а т е л ь. Кам ярса панă-ха ку посылкăна?

А ч а с е м. Мойдодыр.

В о с п и т а т е л ь. Мойдодыр сире час-часах çăвăнма ыйтать. Мĕн ярса панă-ха вăл пире? (*Супăнь кăларать.*) Ку мĕн? Кам пĕлет?

А ч а с е м. Супăнь.

В о с п и т а т е л ь. Пăхăр-ха, ачасем, мĕнле хитре вăл. (*Чĕркенĕ хутне уйăрса чикет те супăнь кăтартать.*) Мĕнле тутлă шăршă кĕрет унран! Супăнь мĕн тума кирлĕ? (*Ачасем хуравлаççĕ.*) Тĕрĕс, супăнь тап-таса çăвăнма кирлĕ. *(Посылкăран супăнь савăтне илет.)*

– Ку мĕнне кам пĕлет?

А ч а с е м. Супăнь савăчĕ.

В о с п и т а т е л ь. Мĕн тума кирлĕ-ха вăл? Тĕрĕс, супăнĕ лăймака, çавăнпа ăна савăт çине хурса упрамалла. (*Посылкăран пит шăлли кăларать.*)

– Ку тата мĕн?

А ч а с е м. Пит шăлли.

В о с п и т а т е л ь. Мĕнле тап-таса вăл, чăлт шурă, çемçе. (*Темиçе ача*

*патне пырать те вĕсен пичĕсене пит шăллисемпе сĕртĕнсе илет.*)

– Ачасем,  пит шăлли мĕн тума кирлĕ?

А ч а с е м. Питпе алăсене çăвăннă хыççăн шăлса типĕтме.

В о с п и т а т е л ь.  Тĕрĕс, питпе алăсем çунă хыççăн йĕпе ан пулччăр тесен таса пит шăллипе шăлса типĕтмелле. Женя, тархасшăн, унпа мĕнле тĕрĕс шăлăнмаллине кăтарт-ха. (*Ача кăтартать.*) Тата мĕн ярса панă-ши пире Мойдодыр? Мĕн ку, Андрей? Тĕрĕс, салфетка. Мĕн тума кирлĕ вăл? (*Ачасем хуравлаççĕ*). Тĕрĕс, апат çинĕ хыççăн тута-çăвара салфеткăпа шăлса тасатмалла. Таньăна эпир çакна мĕнле тумаллине кăтартма ыйтасшăн. (*Таня воспитатель пулăшнипе тутине тасатать.*)

Мойдодыр пире парнесем те ярса панă (*сăмса тутрисем кăларать те пурне те валеçсе парать*). Сăмса тутри мĕн тума кирлĕ? (*Ачасем хуравлаççĕ.*) Халĕ сирĕн алăра сăмса тутрисем. Вăл сирĕн кĕсьере кашни кунхи япала. Сăмса тутри яланах таса пулмалла. Унпа вăйă та выляма пулать.

***«Тутăр пăрахмалла»*** *хускануллă вăйă.*

В о с п и т а т е л ь (посылкăна силлесе кăтартать, вăл сас кăларать). Ачасем, çынна тирпей-илем кĕртекенни тата мĕн пулма пултарать?

В о с п и т а т е л ь.  Тĕрĕс, тура. Унпа мĕнле усă курмалла? Çапла, çӳçе турама.  Тата мĕн ярса панă Мойдодыр? (*Шăл щетки, шăл пасти.*)

В о с п и т а т е л ь.  Ачасем, пире Мойдодыр ярса панă супăнь савăчĕ, пит шăлли, тура, шăл пасти, шăл щетки яланах таса та типтерлĕ пулма кирлĕ.

Юлашкинчен воспитатель В. Давыдов-Анатрин «Эх, маттур-çке Укçине» сăввине вулать (кĕскетнĕ).

Эх, маттур-çке Укçине»,
Пĕлмест пирĕн Укçине
Больница мĕн иккенне.
Вăл халиччен чирлемен,
Тухтăр патне çӳремен.
Манăн йăмăк Укçине
Тĕлĕнтерет çынсене.
Ялта çук тек ун пекки,
Пĕвĕпелле пĕчĕкки.
Анчах çӳрет тап-таса
Хăйпе хăех савăнса.
Çӳçне турать, якатать,
Шăлĕсене тасатать.
Эх, маттур-çке Укçине,
Сыхлать хăйĕн сывлăхне!
Пӳртре-çуртра тирпейлет,
Ялан йĕрке пултăр тет,
Тусан-кирĕк пĕттĕр тет,

Вĕсем маншăн тăшман тет.
Анчах каллех ун çинчен
Калам-ха тепĕр хутчен.
Пĕлмест пирĕн Укçине
Больница мĕн иккенне.
Вăл халиччен чирлемен,
Тухтăр патне çӳремен.

***И.Г. Кожевникова**, Муркаш районĕнчи*
*27-мĕш номерлĕ «Путене» ача сачĕн воспитателĕ*

## АННЕСЕН УЯВĔ

*(Мероприятие тăватă çулхи ачасем валли хатĕрленĕ)*

**Тĕллевĕ:** уявра хаваслă кăмăл-туйăм çуратасси.

**Мероприятин задачисем:**

• ачасене физкультурăпа спорта явăçтарасси, спорт ăмăртăвĕсемпе кăсăклантарасси.

• ачасен çивĕчлĕхне, хăвăртлăхне, чăтăмлăхне тата тӳсĕмлĕхне аталантарасси.

• амăшĕсене хисеплеме вĕрентесси;

• ырă кăмăллă, хастар тата хăюллă пулма вĕрентесси.

**Кирлĕ хатĕрсем:** кăшăлсем, пахча çимĕç (теттесем), карçинккасем, пысăк чашăксем, виçĕ ешчĕк, вылямалли савăт-сапа, пукане тум-тирĕ, пĕчĕк совоксем тата шăпăрсем, хут.

**Кӳртĕм ĕç:** воспитателĕн малтанах ачасене икĕ ташă вĕрентмелле тата сăвăсем валеçмелле.

### Ĕç йĕрки

Юрă янрать. Пӳлĕме пĕр-пĕрин хыççăн а ч а с е м утса кĕреççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Паян эпир юратнă, хитре, лайăх тата хисеплĕ аннесене уяв ячĕпе саламлатпăр!

Çак кĕрхи кун пурте аннесене саламлаççĕ. Анне – чи çепĕç сăмах çĕр çинче. Анне тесе эпир чи çывăх, чи хисеплĕ пĕртен-пĕр çынна калатпăр.

Пире кам ачашшăн лăпкать пĕчĕкрен?

А ч а с е м. Анне.

В о с п и т а т е л ь. Чипер çын тăвасшăн çунать чĕререн.

А ч а с е м. Анне.

В о с п и т а т е л ь. Кам тĕлĕкĕнче те курать-çке пирех?

А ч а с е м. Анне.

В о с п и т а т е л ь. Килте пуринчен тăрать иртерех.

А ч а с е м. Анне.

В о с п и т а т е л ь. Кам ир вучах чĕртнĕ, апат пĕçерет.

А ч а с е м. Анне.

В о с п и т а т е л ь. Ĕне суса кĕнĕ, ăш сĕт ĕçтерет?

А ч а с е м. Анне.

В о с п и т а т е л ь. Кам пултăр? Пĕлеççĕ туссем вăл камне.

А ч а с е м. Вăл пирĕн телей-çке, вăл пирĕн анне.

1-м ĕ ш а ч а.

Тем-тем сăмах каласшăн
Ача тăсать алне.
Вăл туртăнать хавассăн
Хăй амăшĕ патне.
Анне!
Çак ят чи çывăх,
Чи чаплă çĕр çинче.
Пурнать вăл ĕмĕр сывă
Кашни çын чĕринче.

2-м ĕ ш а ч а.

Анне кулли –
Хĕвел шевли.
Анне кулли –
Чи илемли.
Анне кулсан
Чунра аван.
Юрлас килет,
Ташлас килет.

Юрă янăрать. Пӳлĕме С ă т ă р ç ă кĕрет.

С ă т ă р ç ă. Ау-уй! Эсир кунта мĕн тума пуçтарăннă? Мĕнле таса тата хăйсем!

В о с п и т а т е л ь. Сывлăх сунатăп! Пирĕн паян аннесен уявĕ.

С ă т ă р ç ă. Уяв шухăшласа тупнă та!

В о с п и т а т е л ь. Каçарăр та, эсир кам пулатăр?

С ă т ă р ç ă (*пичĕсене пăркаласа*). Эпĕ – Сăтăрçă! Сирĕн уяв мана пĕртте килĕшмест. Эпĕ питĕ сăтăр тума тата пурне те кансĕрлеме юрататăп. Халĕ вара сирĕн уява та пăсатăп. Паянхи уяв пулмасть!

В о с п и т а т е л ь. Эсир пирĕн уява мĕнле майпа пăсасшăн?

С ă т ă р ç ă. А-а-а эпĕ-и? Эпĕ сире паян веçех пăтраштарса пĕтеретĕп. Йĕретĕп, тапăртататăп тата сире савăнма памастăп. Çапла!

В о с п и т а т е л ь. Мĕн тума йĕмелле, тапăртатмалла? Эпир сире уява чĕнетпĕр. Юрать-и?

С ă т ă р ç ă. Юрать. Анчах та эпĕ нимĕн те тума пĕлместĕп.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Сăтăрçăна амăшне пулăшма вĕрентетпĕр-и?

А ч а с е м. Вĕрентетпĕр.

С ă т ă р ç ă. Питĕ аван! Эпир халĕ мĕн тăватпăр: сикетпĕр, чупатпăр е кăшкăратпăр?

В о с п и т а т е л ь. Çук. Сăтăрçă, пăх-ха: пирĕн ачасем амăшĕсене кĕпейĕм мĕнле çуса пулăшаççĕ.

«Кĕпе-йĕм çăватпăр» ташă.

С ă т ă р ç ă. Эпĕ питĕ сăтăр тума юрататăп. *(Теттесене, пукане тумĕсене, савăт-сапана сапаласа пĕтерет.)*

В о с п и т а т е л ь. Сăтăрçă, кун пек тума юрамасть. Çак япаласене халь кам пуçтарать?

С ă т ă р ç ă. Пĕлместĕп.

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн ачасем теттесемпе вылянă хыççăн вĕсене хăйсемех пуçтарса хураççĕ. Пăх-ха, ачасем теттесене мĕнле хăвăрт пуçтараççĕ.

**«Теттесене пуçтар» вăйă.**

Виçĕ ешчĕк кăларса лартаççĕ. Вĕсем çине ӳкерчĕксем çыпăçтарнă, савăтсапа, тум-тир тата тетте. Ачасен Сăтăрçă сапаласа пĕтернĕ япаласене кирлĕ ешчĕке чиксе хумалла.

С ă т ă р ç ă. Эсир аннĕрсене тата мĕн туса пулăшатăр?

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн ачасем амăшĕсене пахчари çимĕçе пуçтарса кĕртме пулăшаççĕ.

**«Пахча çимĕçсене пуçтар» вăйă.**

Вăйă йĕрки: кăшăлсем ăшне пахча-çимĕç хумалла. Кăшăлсене хирĕç карçинккасем пĕр метртан лартмалла. Ачасен пахча çимĕçсене карçинккасем ăшне куçармалла.

С ă т ă р ç ă. Ачасем, питĕ маттур та эсир, эпĕ те паян аннене пулăшатăп. Халĕ вара эсир мĕн тăватăр?

В о с п и т а т е л ь. Халĕ вара ачасем амăшĕсене тутăрсем çуса çакма пулăшаççĕ.

**«Тутăрсем çуса çак» вăйă.**

Вăйă йĕрки*:* вăрăм çип кармалла. Ăна хирĕç япаласемпе чашăк тăрать. Пĕр ача япаласене «çăвать», теприне кайса парать. Лешĕ вара çакса тăрать, прищепкăпа çаклататать.

С ă т ă р ç ă. Сирĕн çине пăхса мана тунсăх пусрĕ. Эпĕ сăтăр тума тата çӳпçап салатма юрататăп. (*Çӳп-çап сапалать.*) Эсир çӳп-çап шăлма пĕлетĕр-и?

В о с п и т а т е л ь. Çак ĕçе пурнăçлама ачасен шăпăр тата совок пур. Пăхса тăр, çӳп-çапа вĕсем часах пуçтарса пĕтереççĕ

**«Çӳп-çап шăл» вăййă.**

Вăйă йĕрки: ваййа 2–3 ача хутшăнать. Кайран улшăнаççĕ. Çӳп-çап (*чăмăртанă хут татăкĕсем*) сапаламалла. Ачасен çӳп-çапа кăшăл ăшне шăпăрпа тата совокпа пуçтармалла. Кам нумайрах тата хăвăртрах пуçтарса пĕтерет, çав çĕнтерет.

С ă т ă р ç ă. Сирĕн ачасем веçех тума пĕлеççĕ. Амăшĕсем вĕсемпе питĕ савăнаççĕ пуль. Халĕ эпĕ те аннене пулăшма вĕрентĕм.

В о с п и т а т е л ь. Амăшĕсене пулăшакан ачасем çине пăхма питĕ кăмăллă. Мĕн пур аннен хăйĕн ачисене маттур та ырă кăмăллă çитĕнтерес килет.

Пурне те ташă ташлама чĕнетĕп!

Ушкăнпа ташă ташлаççĕ.

С ă т ă р ç ă. Паянхи уяв чи лайăххи. Паян эпир аннесене саламлатпăр. Хура пĕлĕтсем аяккалла çухалччăр. Хĕвел пирĕн валли хĕртсе пăхтăр. Сывă юлăр! Тепре тĕл пуличчен!

Тухса каять.

В о с п и т а т е л ь. Аннесем хăйсен ачисене питĕ хытă юратаççĕ. Ачасем, эсир те аннĕрсене юратăр. Пур ĕçре те ăна итлĕр тата пулăшăр. Сăтăрçă пек ан пулăр. Халĕ вара аннĕрсене хăвăр аллăрсемпе хатĕрленĕ парнесене парнелеме пултаратăр.

Ачасем амăшĕсене саламласа парнесем парнелеççĕ.

***А.В. Малова,***
*Канаш районĕн Уçырмари ача сачĕн воспитателĕ*

## ПĔЧĔК ТĔПЧЕВÇĔСЕМ

*(Мероприятие 2–3 çулхи ачасем валли хатĕрленĕ)*

**Тĕллевĕ:** хăйăр (кинетикăлла хăйăр), унăн пахалăхĕсем пирки пĕлӳ ӳстересси.

**Задачăсем:**

• Хăйăр (кинетикăлла хăйăр) пахалăхĕсемпе ачасене паллаштарасси (типĕ хăйăр тăкăнать, йĕпе хăйăртан тĕрлĕ формăллă япала тума пулать).

• Йĕпе хăйăр çинче йĕрсем юласси пирки пĕлӳ пысăклатасси.

• Алă тупанĕ туйăмне аталантарасси, сăнав ĕçĕпе кăсăкланас туртăма вăйлатасси.

• Алă пӳрнисене япалапа ĕçлесе аталантарасси.

• Хăйăрпа тирпейлĕ выляма вĕрентесси, ачасене пĕр-пĕринпе хутшăнма хăнăхтарасси.

**Кирлӗ хатӗрсем:** икӗ тирӗк типӗ хӑйӑр, хӑйӑрпа шыв валли сӗтел, шӑвармалли савӑт-сапа, кинетикӑлла хӑйӑр, ывӑссем, пӗчӗк мечӗксем, «чӗрӗп мечӗксем» (массаж тумалли), хӑйӑртан йӑваламалли тӗрлӗ формӑллӑ савӑтсем, икӗ ҫаврака шӑтӑклӑ арча, вылямалли Чӗрӗп.

**Малтанхи ӗҫ:** «Чӗрӗп ятне суйлани» юмаха вулани, вылямалли чӗрӗпе сӑнани.

**Усӑ курнӑ мелсем:** педагог ыйту пани, хӑйӑрпа irттернӗ сӑнав ӗҫӗ, вӗреннине ӗҫре ачасемпе ҫирӗплетни.

### Ӗҫ юхӑмӗ

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпир Чӗрӗп ҫинчен юмах вуланине астӑватӑр-и? Эсир юмаха тимлӗн итлени ӑна ҫав тери килӗшнӗ, ҫавӑнпа та вӑл паян пирӗн пата хӑнана килме шут тытнӑ. Ӑҫта вара вӑл? Пытанса ларма та ӗлкӗрнӗ. Пӑхӑр-ха, ура йӗрӗсем. Ҫак ура йӗрӗсем тӑрӑх кайсан эпир Чӗрӗпе тупатпӑр тесе шутлатӑп. *(Ачасем ура йӗрӗсемпе утса йывӑҫ хыҫӗнче Чӗрӗпе тупаҫҫӗ.)* Атьӑр сывлӑх сунар ӑна.

П у р т е *(пӗрле). Сывӑ-и, Чӗрӗп?!*

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Чӗрӗп мӗнле?

А ч а с е м. Ырӑ кӑмӑллӑ, илемлӗ, йӗплӗ.

В о с п и т а т е л ь. Чӗрӗп пире выляма сӗнет. Эсир хатӗр-и унпа выляма?

«Тӗлӗнмелле арча» дидактика вӑййи.

В о с п и т а т е л ь. Эсир мӗнле шухӑшлатӑр, мӗн-ши ку арчара? *(Арча кӑтартать.)* Ачасем, арча патне пырӑр та черет тӑрса ҫаврака шӑтӑкӗнчен япала кӑларӑр. Мӗн вара унта? *(Мечӗксем.)*

Мечӗксем мӗнле? Атьӑр халӗ вӗсене алӑпа йӑвалар. Мӗнле мечӗксем? *(Ҫаврака, яка.)*

Ачасем, эсир халь сӗтел хушшине ларӑр. Чӗрӗп пирӗн валли асамлӑ хӑйӑр илсе килнӗ. Вӑл ӑна сире пайласа парас тет.

Воспитатель кашни ачана ывӑс ҫине хӑйӑр хурса парать.

В о с п и т а т е л ь. Мӗн тӑватпӑр халӗ эпир? Чӗрӗп, мӗн тумалла вара пирӗн?

Чӗрӗп хӑлхаран воспитателе пӑшӑлтатса калать.

В о с п и т а т е л ь. Халӗ пирӗн мечӗке хӑйӑр ҫинче йӑвалантармалла. Мечӗксене илӗр те хӑйӑр ҫинче ак ҫапла йӑвалантарӑр. Хӑйӑра якатас тесе мечӗке пусӑрӑнтарма юрать. *(Воспитатель ачасене кӑтартать.)*

Ачасем, мӗн пулчӗ пирӗн? Хӑйӑр купара выртатчӗ, халӗ эпир ӑна тикӗслерӗмӗр. Пӑхӑр-ха, арчан тепӗр ҫаврака шӑтӑк пур. Атьӑр арча патне пырар та черет тӑрса мӗн выртнине унтан кӑларар. Мӗн вара унта? Пӑхӑр-ха, мӗнле

тӗлӗнмелле мечӗксем. Ку мечӗксем сан евӗрлӗ, Чӗрӗп. Ҫапла-и, ачасем?

В о с п и т а т е л ь. Халӗ ҫак мечӗксене хӑйӑр ҫинче йӑвалантармалла. Мечӗксене илӗр те хӑйӑр ҫинче ак ҫапла йӑвалантарӑр. *(Воспитатель ачасене кӑтартать.)* Мӗн пулса тухрӗ, ачасем? *(Ачасен хуравӗсем.)* Ҫапла, маттур, ачасем. Мӗн чул йӗр хӑварчӗҫ «чӗрӗп мечӗксем»?

Енчен те ҫийӗнчех тӑваймасан ачапа уйрӑммӑн ӗҫлени.

**Пӗтӗмлетӳ.** Йӗпе хӑйӑр ҫинче йӗрсем юлаҫҫӗ.

**Кану саманчӗ.**

Пурӑннӑ тет вӑрманта йӗплӗ Чӗрӗп. Ҫӑмха пек ҫаврака, урасӑр *(хӑйсене ыталаҫҫӗ).*

Алӑ ҫупма пӗлмен вӑл – ҫат, ҫат, ҫат *(алӑ ҫупаҫҫӗ).*

Сукмакпа утса пыма пӗлмен вӑл – тӑп, тӑп, тӑп *(вырӑнта утаҫҫӗ).*

Ик уран сикме пӗлмен вӑл – трӑст, трӑст, трӑст *(сикеҫҫӗ).*

Сӑмсипе хускатнӑ вӑл кӑна – шмӑк, шмӑк, шмӑк.

Ачасем вӑрмана килнӗ, унта Чӗрӗпе тӗл пулнӑ.

Алӑ ҫупма ӑна вӗрентнӗ – ҫат, ҫат, ҫат *(алӑ ҫупаҫҫӗ).*

Сукмакпа утма вӗрентнӗ – тӑп, тӑп, тӑп *(вырӑнта утаҫҫӗ).*

Ик уран сикме вӗрентнӗ – трӑст, трӑст, трӑст *(вырӑнта сикеҫҫӗ).*

Чупма та вӗрентнӗ *(вырӑнта чупаҫҫӗ)* …

В о с п и т а т е л ь. Мӗн-ха, Чӗрӗп? *(Чӗрӗп хӑлхаран воспитателе пӑшӑлтатса калать.)*

Ачасем, Чӗрӗп пире типӗ хӑйӑрпа вылямалли сӗтел патне пыма сӗнет, хӑйӑртан панулми йӑвалама ыйтать. Панулми йӑвалатпӑр-и Чӗрӗп валли, ачасем? *(Ачасен хуравӗсем.)*

Халӗ тӗрлӗ формӑллӑ савӑт илӗр те типӗ хӑйӑр тултарӑр. Панулмисем пулчӗҫ-и? *(Ҫук.)*

Мӗншӗн? Типӗ хӑйӑртан мӗн те пулин йӑвалама пулать-и? *(Ҫук.)*

Типӗ хӑйӑрпа мӗн пулса иртрӗ? *(Тӑкӑнать.)*

Мӗнле хӑйӑртан йӑвалама пулать? *(Йӗпе хӑйӑртан.)*

Хӑйӑрӗ йӗпе пултӑр тесен мӗн тумалла-ха, ачасем? *(Йӗпетмелле.)*

Ҫапла, ачасем, маттур. Ҫавӑн пек тӑватпӑр та.

Воспитатель пӗр ачине хӑйӑра йӗпетме хушать, хӑй пӑлхатса тӑрать.

В о с п и т а т е л ь. Йӗпе хӑйӑртан панулми йӑвалама пулать-ши? Тӗрлӗ формӑллӑ савӑт илӗр те йӗпе хӑйӑра алӑ тупанӗпе тултарӑр, унтан савӑта ывӑс ҫине ҫавӑрса хурӑр.

Ачасем, сӗтел хушшине ларӑр. Сирӗн ывӑс ҫинче йӗпе хӑйӑр хатӗр. Халӗ вара панулми йӑвалама тытӑнӑр. Маттур, ачасем. Типӗ хӑйӑртан мӗн те пулин йӑвалама пулать-и? *(Ачасен хуравӗсем.)* Мӗнле хӑйӑртан йӑвалама пулать? *(Ачасен хуравӗсем.)*

**Пĕтĕмлетӳ**. Типĕ хăйăртан йăвалама пулмасть. Йĕпе хăйăртан тĕрлĕ формăллă япала тума пулать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Чĕрĕп хавас, мĕншĕн тесен эсир ăна нумай панулми йăваласа пană. Ăна паян сирĕнпе хăйăрпа выляни питĕ килĕшрĕ. Атьăр халĕ унпа сывпуллашатпăр та ăçтан тупнă, çавăнта ăсататпăр. Сывă пул.

**Рефлекси.**

Ачасем, пирĕн пата кам хăнана килчĕ? *(Чĕрĕп.)*

Вăл мĕн илсе килчĕ? *(Хăйăр.)*

Чĕрĕп валли мĕн йăваларăмăр? *(Панулмисем.)*

Мĕнле хăйăртан йăваларăмăр? *(Йĕпе хăйăртан.)*

Мĕнле шутлатăр, типĕ хăйăртан панулми йăвалама пулать-и? *(Çук.)*

Мĕншĕн? *(Вăл тăкăнать.)*

**Литература**

*Боголюбова Г.Б.* Проект «Сохранение эмоционального благополучия детей раннего возраста через игры с песком, водой и сыпучими материалами».

*Карпухина Н.А*. Реализация содержания образовательной деятельности. Ранний возраст. Практическое пособие. – Воронеж: ООО М-КНИГА, 2017.

Интернет ресурсĕ: https://nsportal.ru/detskiysad/raznoe/2015/11/08/proekt-sohranenie-emotsionalnogo-blagopoluchiya-deteyrannego-vozrasta.

*Скворцов М.И., Скворцова А.В.* Чувшско-русский, русско-чувашский словарь. Чебоксары. Чуваш. кн. изд-во, 2010.

***Н.П. Михайлова,***

*Вăрмар районĕнчи «Çăлкуç» ача сачĕн воспитателĕ*

## ÇĔНТЕРӲ КУНĔ

*(Мероприятие 6–7 çулти ачасем валли хатĕрленĕ)*

Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи чаплă çĕнтерӳпе вĕçленнĕренпе 75 çул çитрĕ. Пĕтĕм халăх çак сумлă куна чыслăн кĕтсе илме хатĕрленет. Эпир те уява хисеплĕ, лайăх кĕтсе илес тесе çак сценарине çыртăмăр. Ку ĕç ача садĕнче ĕçлекен воспитательсене, музыка ертӳçисене усăллă пуласса шанас килет.

**Уяв тĕллевĕ.** Ачасене Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи вĕçленнĕренпе 75 çул çитнине аса илтересси.

**Задачисем.** Паттăрсене яланах асра тытмалли, вĕсен паттăрла ĕçĕсене нихăçан та манмалла марри çинчен вĕрентесси.

Вăрçă тата тыл ветеранĕсене, аслă çынсене хисеплеме, яланах пулăшма вĕрентесси.

## Уяв юхăмĕ

Илемлетнĕ залра ветерансем, курма килнĕ хăнасем, ачасен ашшĕ-амăшĕсем лараççĕ.

В о с п и т а т е л ь (ертсе пыракан) кĕрет.

Е р т с е   п ы р а к а н.

Тӳпе йăлтăр таса,
Сывлăш уçă ытла!
Кĕрлесе, янраса
Вăранать ял-хула.

Кашнин сăн-питĕнче
Çутă савăнăç куран.
Епле хӳхĕм тĕнче –
Çĕнтерӳ уявĕ паян.

(*П. Афанасьев*)

Хаваслă кĕвĕ янăрать. Зала  а ч а с е м  кĕреççĕ.
Вĕсем ялавсемпе илемлĕ ташă ташлаççĕ.

Е р т с е   п ы р а к а н. Хаклă ветерансем, курма килнĕ хăнасем, ачасем! Паян эпир сирĕнпе чи аслă уява ирттерме пуçтарăнтăмăр. Раççей халăхĕ çулсерен майăн 9-мĕшĕнче 1941–1945 çулсенчи Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче фашистла Германие çĕнтернине анлă уявлать. 1945-мĕш çулхи майăн 8-мĕшĕнче СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Указĕпе майăн 9-мĕшĕ Çĕнтерӳ кунĕ пулнине пĕлтернĕ. Кашни çулах уяв кунне анлă паллă тăваççĕ.

1-м ĕ ш   а ч а. Фашистла Германи Совет Союзне 1941-мĕш çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче вăрă-хурахла тапăнса кĕнĕ. Фашистсем пире чура тăвасшăн пулнă.

2-м ĕ ш   а ч а. Малтанхи тапхăрта тăшман сасартăк тапăннипе хула хыççăн хула тытса илнĕ. Пирĕн хуласемпе ялсене вăл çунтарнă, çынсене пере-пере вĕлернĕ.

3-м ĕ ш   а ч а. Анчах пĕтĕм совет халăхĕ тăшмана хирĕç кар тăнă. Çĕнтерӳ çулĕ йывăр пулнă. Кашни кун эшелонсем пирĕн салтаксене фронта илсе кайнă.

Хĕр ачасем тутăрсемпе сулласçĕ, арçын ачасем марш кĕввипе колоннăпа утаççĕ. Воспитатель хыççăн стена çумĕпе салтаксем пек утса темиçе колонна тăваççĕ. Кĕвĕ чарăнсан ачасем хăйсен вырăнĕсене вырнаçса ларасçĕ.
Виçĕ  а ч а  зал варрине тухать.

1-м ĕ ш   а ч а.

Сасартăк тревога янрарĕ ирпе.
Сасартăк пĕр харăс тăрса
Эпир вĕтлĕх витĕр, сăрт урлă, хирпе
Васкарăмăр аслă вăрçа.

2-м ĕ ш   а ч а.

Эпир – малтисемччĕ; çĕнме çĕкленсе
Кĕрейрĕмĕр çулăм ăшне,

Ахлатрĕ тавралăх шартах чĕтренсе,
Тем шăхăрчĕ: хăшĕ – хăшне!

3-м ĕ ш  а ч а.

Вăл вут пек снаряд-мĕн шартлатрĕ çумра,
Сӳ килчĕ, сӳ кайрĕ хĕрӳ…
Пĕрех çирĕп шанчăк çуралчĕ чунра,
Ун ячĕ – асту – Çĕнтерӳ!  (*А. Алка*)

Ачасем «Пурте герой пулар-и?» (сăвви *И. Малкайăн*, кĕвви *Г. Лебедевăн*) юрă юрлаççĕ.

Герой тени мĕн тени те
Герой тени мĕн тени?
Вĕри чунлă çын тени те
Ĕçре паттăр çын тени.
Герой тени мĕн тени те
Герой тени мĕн тени?

Чи хастарлă çын тени,
Çĕнтерӳçĕ çын тени.
Пурте герой пулар-и те
Пурте герой пулар-и?
Çĕр-шыв ятне ырлар-и те
Ун хăватне çĕклер-и?

Е р т с е  п ы р а к а н. Нумай çемьере фронтран килнĕ виç кĕтеслĕ çырусем сыхланса юлнă. Вĕсене фронтран аттесем, пиччесем çырса янă. Унта вĕсем часах киле çĕнтерӳпе таврăнатпăр тесе çыраççĕ.

Зал варрине а р ç ы н  а ч а  тухать, ун аллинче пĕчĕк виçкĕтеслĕх. Вăл ăна уçать те вулать.

Аван-и, хаклă ман Максим,
Салам, юратнă ывăлăм,
Вăрçă хирĕнчен çыратăп,
Ыран çапăçăва каятăп.
Аркатсанах фашистсене

Таврăнăп çĕнтерӳпе.
Ман эс тунсăх самантсенче
Сыхла, упра аннӳне.
Чипер пурнăр. Эх, салху.
Ыталатăп. Сан ачу.

Зал варрине икĕ хĕр ача тата икĕ арçын ача тухаççĕ. Вĕсем фронтран янă çырусене вулаççĕ.

1-м ĕ ш  а ч а.

Манăн хаклă тăвансем!
Каç. Чĕтреç çурта çутисем.
Канăç памаç асаилӳсем.
Сирĕн хаваслă сăнсем.

2-м ĕ ш  а ч а.

Аса илеп уй-хирсене,
Пĕтĕм тус-юлташсене,
Хура чăтлăх вăрмансене,
Пирĕн пĕчĕк кив пӳрте.

1-м ĕ ш  а ч а.

Манăн пичче, аппасем,
Ыран çапăçăва каятăп.

Инкеке лекнĕ çĕр-шыва
Тăшмансенчен тасататăп.

2-м ĕ ш  а ч а.

Нимĕçсене аркатма
Пĕтĕм вăй-хала пухатăп.
Ырă курса пурăнма
Сире ăнăçусем сунатăп.

Воспитательсем «Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем» (сăвви *Ю. Плотниковăн*, кĕвви *А. Сергеевăн*) юрă юрлаççĕ.

Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем…
Вăрăм пулчĕç, йывăр пулчĕç çулĕсем.
Киле çитнĕ инçетрен,
Юнлă вăрçă хирĕнчен,
Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем.
Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем –
Иртнĕ вăрçăн ĕмĕрхи хыпарçисем.
Савăнтарнă та пире
Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем.
– Хаклă мăшăр, ман юратнă ачасем, –
Çырăвне çапла пуçлатчĕç аттесем. –
Аркатсассăн тăшмана
Кĕтсе илĕр ак мана,
Хаклă мăшăр, ман юратнă ачасем.
Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем…
Паян кун та упранаççĕ-ха вĕсем.
Çулăм витĕр тухнисем,
Куççульпе йĕпеннисем,
Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем.

Е р т с е  п ы р а к а н. Вăрçăра арçынсем кăна мар, хĕрарăмсем те çапăçнă. Вĕсем тухтăрсем, медсестрасем, санитаркăсем, летчиксем, разведчиксем, связистсем, партизансем пулнă. Нумай салтак пурнăçне çăлса хăварнă. Чыс та мухтав вĕсене, пирĕн хĕрарăм салтаксене.

Х ĕ р  а ч а с е м тухаççĕ. Пĕр хĕр ачин пуçĕнче хĕрлĕ хĕрес ӳкернĕ косынка, хулпуççинчен сумка çакса янă (унта бинт, вата, йод). Ыттисен пуçĕнче хĕрлĕ хăюллă çĕлĕк. Вĕсем сăвă вулаççĕ.

Амăшне каларĕ хĕрĕ
Вăрттăн, ерипен:
«Эп вăрçа каятăп, – терĕ, –
Маншăн ан шиклен». (*П. Хусанкай*)
Инçетри çурçĕрте çил кашлать иртенпе,
Чăрăшсем силленеççĕ умра.
Вут-кăварлă чунпа, чи хĕрӳ чĕрепе
Партизанка çӳрет вăрçăра. (*В. Алентей*)
Пульăсем шăхăраççĕ, снаряд çурăлать.
Осколокпала аманнă салтак.
Медсестра та кунтах, вăл пăшăлтатать:
«Суранна çыхса ярăп, çăлăнăпăр ак».
Çапăçу хирĕнчен вăй-хал тупса
Алă вĕççĕн пике йăтса тухрĕ ăна.
Епле ырă хĕр, Тур пилленĕ ăна

Нумай салтака вилĕмрен хăтарма.

Е р т с е  п ы р а к а н. Вăрçă нумай çын пурнăçне аркатрĕ, нумайăшне тăлăха хăварчĕ. Чăваш республикинчен фронтра 160 пин çын çапăçрĕ, вĕсенчен 90 пин ытла çын Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн пуçне хучĕ. 54 пин ентеше орденсемпе медальсем парса наградăларĕç, 75-шĕ Совет Союзĕн Геройĕ ята илме тивĕç пулчĕ.

Арçын ачасем «Салтаксен ташши» ташă ташлаççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Тăван çĕр-шыва хӳтĕлесе пуç хунă ентешсене асăнса палăксем лартнă. Çав палăксене ял çыннисем, шкул ачисем тирпейлесе, чысласа тăраççĕ. Уяв кунĕсенче палăксем умне чечек çыххисем хураççĕ.

Ачасем сăвăсем вулаççĕ.
Ял варринче шап-шурă палăк…
Çын чарăнать унта çитсен.
Карта… чечек… пĕр пĕчĕк алăк,
Чун пăлханать шала кĕрсен.
Мĕн чухлĕ ят унта вулатпăр,
Йалтах эпир пĕлен ятсем.
Вĕсем камне аван чухлатпăр:
Асаттесем те аттесем.

Тахçан вĕсем пура пуранă,
Ӳстернĕ ешĕл йывăçсем.
Тыр-пул пухса уйра тарланă
Çын тулăх пурăнтăр тесе.
Кайран… тăшмансене аркатнă
Хăрушă пушара кĕрсе,
Пире валли телей упранă,
Чакмасăр, çапăçса, тӳнсе.
(*В. Тимаков*)

Вĕсем таврăнмарĕç яла.
Эпир пурăнар.
Фронтран кам килмен каялла –
Чи çутă сăнар. (*М. Андреев*)

Е р т с е  п ы р а к а н. Халĕ вăрçăра пуç хунă ентешĕмĕрсене, тыл паттăрĕсене асăнса пĕр минут шăп тăратпăр.

Йывăр пулнă вăрçă вăхăтĕнче, анчах та çынсем шанăça çухатман. 1945-мĕш çулхи майăн 9-мĕшĕнче Германие тĕппипех парăнтарнă. Нумай халăхсем ирĕке тухнă. Тĕнче ирĕккĕн сывласа янă. Урамсенче çынсем юрăсем юрланă, ташланă, пĕр-пĕрне ыталаса саламланă, макăрнă.

Майăн 9-мĕшĕ – Çĕнтерӳ уявĕ – пирĕн халăхăн аслă, мăнаçлă, куççульлĕ уявĕ. Ăна халăх калама çук хаклă хакпа туптанă. Кашни çул майăн 9-мĕшĕнче çĕнтерӳ салючĕ параççĕ. Каçхи тӳпе тĕрлĕ тĕслĕ çутăсемпе ялкăшать.

Виçĕ ача зал варрине тухса «Уяв салючĕ» сăвă вулать.

Тӳпере халь çурăлаççĕ
Пысăк чечек çыххисем.
Çутăра йăлтăртатаççĕ
Вĕсен симĕс çулçисем.
Астра евĕр курăнаççĕ
Хĕрлĕлле те кăвакла.

Кашнинчех-çке ылмашаççĕ,
Тепре пăхан – сарăлла.
Ак кайран юхать-çке
Ылтăн юхан шыв.
Мĕн-ши ку?

А ч а с е м (*пурте пĕрле*). Уяв салючĕ!

«Уяв салючĕ!» ташă.

Ачасем зал варрине тухса хитре тăраççĕ. Вĕсем хăмпăсемпе хусканусем тăваççĕ. Кашни ача аллинче çиплĕ (15 см тăршшĕ) хăмпă, ăна сылтăм алăпа тытнă, аялалла антарнă.

1–4 такт – хусканмасăр тăраççĕ.

5–8 такт – аллисене кăкăр тĕлне çитиччен ерипен çĕклеççĕ.

Юрă пуçламăшĕнчен пуçласа 24-мĕш такт таранччен кашни тактпа ураран ура çине пусса ерипен хусканусем тăваççĕ (сылтăмалла-сулахаялла), алăри хăмпăсене те çав еннеллех суллаççĕ.

24–27 такт – хăмпăсене икĕ алăпа тытаççĕ.

25 такт – хăмпăсене çӳлелле ывăтаççĕ, хăмпăсем мĕнле аялалла аннине куçсемпе сăнаççĕ те пĕр чĕркуççи çине лараççĕ, аллисене айккинелле сараççĕ, унтан аялалла антараççĕ.

28 такт – хăмпăсене илсе ура çине тăраççĕ.

29 такт – хăмпăсене çӳлелле ывăтаççĕ.

30–31 такт – хăмпăсемпе пĕшкĕнсе лараççĕ.

Çакна тата тăватă хутчен тăваççĕ, хăмпăсене 6-мĕш хут çӳлелле ывăтса ярсан чĕркуççи çине пĕшкĕнсе лараççĕ. Ачасем юлашки 2 тактра хăмпăсене алла илсе ерипен тăраççĕ.

Кĕвĕ вĕçленсен ачасем черетпе сăвă вулаççĕ.

Тек ан кĕрлетĕр вăрçă тĕнчере,
Ĕç шавĕ çеç вăраттăр уй-хире.
Мĕн-ма эпир пĕлместпĕр пурăнма?
Унта-кунта тухатпăр-ха вăрçма.
Шел мар-и çыннăн кун-çулне татма?
Ай, ăс пухасчĕ туслă пурăнма! (*Г. Ефимов*)

Мир пурнăça! Вилĕм вăрça!
Пĕтĕм тĕнче халь
Хăватлăн калать:

П у р т е.

Мир пурнăça!
Мир пурнăça!
Пĕтĕм тĕнче ылханать:

П у р т е.

Вилĕм вăрça!
Вилĕм вăрça!

Шкул ачи çырать тетраде:
«Ан пултăр вăрçă тĕнчере!».
Ĕç çынни пырать плакат йăтса:
«Ан пултăр вăрçă тĕнчере!».
Мĕн пур çын калать пĕр сасăпа:

П у р т е. «Ан пултăр вăрçă тĕнчере!».

Ачасем «Ташă» (сăвви *В. Давыдов-Анатрин*, кĕвви *Г. Хирбюн*) юрă юрлаççĕ.

Ташă пуçлар, ташă пуçлар, тантăшсем,
Юрлар савăк, юрлар савăк юрăсем.
Пирĕн пурнăç – çуркунне,
Юхтăр юрă инçене.
Эпир çамрăк, эпир çамрăк паттăрсем,
Çĕнĕ пурнăç, çĕнĕ пурнăç калчисем.
Пирĕн пурнăç – çуркунне,
Юхтăр юрă инçене.
Çутă ĕмĕт, çутă ĕмĕт чĕрере,
Çиçтĕр ĕмĕр, çиçтĕр ĕмĕр-ĕмĕре,
Пирĕн пурнăç – çуркунне,
Юхтăр кĕвĕ инçене.

«День Победы» (сăвви *В. Харитоновăн*, кĕвви *Д. Тухмановăн*) юрă янăрать, ачасем ветерансене, курма килнĕ хăнасене хăмпăсем, хăйсем туса хатĕрленĕ открыткăсене парнелеççĕ. Уяв программи вĕçленет.

***В.В. Мурзукова****, Канаш районĕн*
*Сиккассинчи «Хурăн» ача сачĕн воспитателĕ,*
***А.А. Мурзуков****, Канаш районĕн*
*Сиккассинчи «Хурăн» ача сачĕн музыка ертӳçи*

## ЧЫС ТА МУХТАВ РАÇÇЕЙ САЛТАКĔСЕНЕ

*(Мероприятие 5–6 çулхи ачасем валли хатĕрленĕ)*

**Ĕç тĕллевĕ:** ачасене çĕр-шыв хӳтĕлевçисен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарасси.

**Задачăсем:** салтак профессийĕсемпе çар техникин ячĕсене çирĕплетесси; патриотизм туйăмне вăйлатасси; ал-ура çаврăнăçулăхне аталантарасси; сывлăха çирĕплетме пулăшакан хăнăхусене куллен харпăр хăй тĕллĕн тума хавхалантарасси.

### Уяв юхăмĕ

**Ум сăмах – уяв ячĕпе саламлани.**

Е р т с е  п ы р а к а н. Ырă кун пултăр, хаклă хăнасем тата пĕчĕк тусăмăрсем! Эпир паян çакăнта Çĕр-шыва сыхлакансен кунне паллă тума пуçтарăнтăмăр. Асăннă уяв вăл пирĕн çĕр-шывра тата пĕтĕм тĕнчере мир

пултăр тесе тăрăшакансен уявĕ. Кунĕн-çĕрĕн салтаксемпе командирсем юратнă Тăван çĕр-шывăмăрăн чиккисене тăшмансем тапăнасран сыхлаççĕ. Эпир вара лăпкă пурнăçпа киленсе ача садне çӳретпĕр, вĕренетпĕр, ĕçлетпĕр. Çавăнпа та Раççейĕн хăюллă та патвар салтакĕсене ăшшăн саламлатпăр, хăйсен тивĕçĕсене тĕрĕс пурнăçласа пынишĕн савăнатпăр, вĕсемпе мухтанатпăр. Айтăр-ха эпир те пулас çĕр-шыв хӳтĕлевçисене тăваллăн алă çупса кĕтсе илер.

**Ялавсемпе ташлани.**

Ачасем О. Газмановăн «Вперёд, Россия!» юррипе кĕрсе виçшерĕн-виçшерĕн колоннăна тăраççĕ, ташлаççĕ. Ташă вĕçĕнче çурма çавракана тăраççĕ.

**Сăвăсем калани.**

Ачасем Мелани Никифоровăн «Çĕр-шыв хӳтĕлевçи» сăввине вулаççĕ.

1- м ĕ ш а ч а. Мирлĕ пурнăç хуралçи! Салам! Паян санăн пысăк уяв.
Мухтав сана, паттăр салтак, çĕр-шыва хӳтĕленĕшĕн тав!
2- м ĕ ш а ч а. Тăван çĕр-шыв пуçран хакли, кашни çыннах вăл – чи кирли.
Унăн ăшши – чĕре тулли, пуянлăхĕ – кашнин валли.
3- м ĕ ш а ч а. Тăван çĕр-шыв çирĕп пул сан ывăл-хĕрӳ те хур курман.
Тăван çĕр-шыв, эс сыв пулсан тăван йăву та пулĕ сан.
4- м ĕ ш а ч а. Тăван çĕр-шыв çирĕплĕхĕ вутлă арминчен килет,
Çапăçмашкăн питĕ вирлĕ харсăр салтак çеç пĕлет.
5- м ĕ ш а ч а. Салтак ятне илес тени – пасар кулач çини мар.
Йывăрлăхра нуша тӳсни – сала йытти пулни мар.
6- м ĕ ш а ч а. Салтак служби пит тăварлă, çăкăрĕ те ват пек йӳçĕ.
Пурнăçĕ ун вут-кăварлă, çавăнпа хисеплĕ ячĕ.

**«Мальчишка – будущий солдат» юрă.**

*(*Сăмахĕсем *А.И.Пилецкаян,* кĕвви *В.Трубачевăпа Д.Трубачевăн)*

Е р т с е п ы р а к а н. Халĕ вара ăмăртусене пуçлăпăр. Пирĕн хушăра кахалсем те, юлхавсем те çук. Пулас салтаксене ăмăртусене хастар хутшăнма чĕнетпĕр! 2 ушкăна пайланăпăр. Паллах, малтан шăм-шака хускатмалла.

**Хусканусем «Пирĕн армине – салют!».**

Ачасем сывлăха çирĕплетмелли ĕçсем/хусканусем тăваççĕ.

Е р т с е п ы р а к а н. Эсир туслă, ачасем, чăн-чăн салтак пекех. Çапах та аттесем пекех хăюллă, вăйлă пулас тесен пĕлӳ те, хытă тарăшни те кирлех! Апла пуçларăмăр тĕрĕслеме! Хăш ушкăн хăвăртрах тата тимлĕрех?

**«Постри салтак» конкурс.**

Пукан çинче салтак пиншакĕ, пилотка тата пăшал выртать. Сигнал парсан сирĕн чупса çитмелле, тумсене тăхăнмалла, хăвăрт чупса кайса пукан йĕри-тавра чупса çаврăнмалла, тум-тире типтерлĕ хывса хумалла, эстафетăна теприне памалла. Хăш ушкăн маларах вĕçлет.

Е р т с е  п ы р а к а н. Ку конкурс валли икĕ атте кирлĕ. Малалла эсир мĕнле тĕл пеме пĕлнине тĕрĕслетпĕр. Аттесем карçинкка тытса тăраççĕ, ачасен мечĕксене тĕл персе кĕртмелле.

**«Тĕл перекен» конкурс.**

Е р т с е  п ы р а к а н. Сире киле ĕç парса янăччĕ. Хутран самолёт тумалла пулнă. Халĕ вара кам чи инçерех вĕçекен самолет тунине пĕлĕпĕр.

**«Лётчиксем» конкурс.**

Кашни ача ашшĕпе пĕрле тунă самолета вĕçтерет.

**«Кавалеристсем» конкурс.**

Ушкăнсем «лашасем çине утланса» ăмăртаççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Пирĕн арçын ачасем чăннипех те пит маттур, уяв ячĕпе аттесене «Десантниксен ташши» парнелеççĕ.

**Десантниксен ташши.**

Арçын ачасем «ВДВ, с неба привет» юрă кĕввипе ташлаççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Чăн-чăн салтакăн вăйлă та, хăюллă та, ăслă та пулмалла. Тĕрĕслесе пăхар.

**«Тупсăмне пĕл» конкурс.**

Ушкăнсем çар техникин ячĕсем çинчен хывнă тупмалли юмахсен тупсăмне пĕлмелле тупăшаççĕ.

Тупмалли юмахсем:

1. Чунĕ çук, юнĕ çук, кайăкран хытă вĕçет. *(Самолет.)*
2. Эпĕ çав тери пысăк техника, ӳтĕм манăн тимĕртен,
   Мĕн пур тăшмана хăратса перетĕп эп снарядсенчен. *(Танк.)*
3. Шыв айĕнчи тимĕр кит çĕрĕн-кунĕн çывăрмасть,
   Çĕрĕн-кунĕн çывăрмасть, тăшмансенчен вăл сыхлать. *(Шыв айĕнчи карап.)*
4. Хăй килĕнчен аякра, çӳрет тинĕсре. *(Карап.)*

Е р т с е  п ы р а к а н. Чăннипех маттур пирĕн ачасем. Ку конкурса та ăнăçлă хутшăнтăр. Малалла хĕр ачасем арçын ачасене сăвă парнелесшĕн.

1- м ĕ ш  х ĕ р  а ч а. Паттăр салтак пур çинче усал тăшман нимех мар.
Раççей çарĕ пур çинче хăрушлăхран хăрар мар.

2- м ĕ ш  х ĕ р  а ч а. Тăван çĕр-шыв чысĕшĕн сыхă тăрать Раççей çарĕ.
Халăх пурлăх тĕрекĕшĕн пурте пĕрле кар тăрар-и?

3- м ĕ ш  х ĕ р  а ч а. Салтак пулса курмасăр пурнăç хакне чухлаймăн,
Çапăçура пулмасăр нуша мĕнне пĕлеймĕн.

4- м ĕ ш  х ĕ р  а ч а. Тăшман çĕлен, эс ан ĕнен, ăна шансан чунсăр юлан.
Ялан сыхă тăрсан кăна тăшман пуçне эс çĕнтерен.

5- м ĕ ш х ĕ р а ч а. Вăрçă вăл – чи хăрушши! Хӳтĕлевçĕ, сыхă тăр!
Тăшманпа кĕрешесси – вăй виçсе выляни мар.

6- м ĕ ш х ĕ р а ч а. Мирлĕ пурнăçăн тĕрекĕ! Санран вăйли ним те çук.
Мирте пулсан пурте пулĕ, миртен асли ним те çук.

**«Поздравляем мальчиков» юрă.**

Хĕр ачасем юрлаççĕ.

Е р т с е п ы р а к а н. Çапла. Манпа пурте килĕшеççĕ пуль тесе шутлатăп. Чăнах та, пирĕн аттесем чи ăслисем, чи маттуррисем. Килĕшетĕр-и эсир манпа, ачасем?

А ч а с е м (*харăс*). Килĕшетпĕр!

Е р т с е п ы р а к а н. Аттесем маттур пулнине тепĕр хут çирĕплетсе хăварар. Икĕ атте кирлĕ каллех.

**«Мина уйĕ» конурс.**

Илемлĕ юрă янăрать. Аттесен куçĕсене çыхаççĕ, карçинккасем параççĕ. Сигнал хыççăн палас çинчи «минăсене» (кубиксене) пуçтармалла. Палăртнă вăхăтра кам ытларах кубик пухать?

Е р т с е п ы р а к а н. Пирĕн ушкăнри хĕр ачасем мĕн пур арçынсене «Ангелсен ташши» парнелесшĕн. Хапăл туса кĕтсе илетпĕр вĕсене.

**«Ангелсен ташши».**

Е р т с е п ы р а к а н. Çакăнпа пирĕн уяв вĕçленчĕ. Аттесене, асаттесене, кукаçисене, пиччесемпе шăллăмсене тепĕр хут уяв ячĕпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр. Ырă ĕçсем туни, садикре хамăра аван тытни, аслисене итлени – çаксем пурте аттесемшĕн чи лайăх парне пулĕç. Яланах сапăр пулăр. Çавăн пекех юратнă çыннăмăрсем валли эпир пĕчĕк парнесем те хатĕрлерĕмĕр.

Ачасем ашшĕсене хăйсем ăсталанă парнесене параççĕ.

**Литература**


Пирĕн уявсем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1991.

Пĕрле вулар-ха: хрестомати. 2-мĕш кĕнеке. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1987.

Чăваш музыки ача садĕнче: хрестомати. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1995.

Чăваш халăх сăмахлăхĕ: вак жанрсем. 5 том. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984.



***Л.В. Тарасова**, Йĕпреç районĕн Хурамалти*
*«Весна» ача сачĕн музыка ертӳçи*

## ÇУРХИ ВĂРМАНТА

*(Мероприятие 3–4 çулти ачасем валли хатĕрленĕ)*

**Тĕллевĕпе задачисем**: ачасене çулталăкăн вăхăчĕпе – çуркуннепе тата çурхи çанталăкăн уйрăмлăхĕсемпе паллаштарасси; ачасен вăрманти ӳсен-тăрансемпе чĕр чунсем çинчен пĕлĕвне ӳстересси; çут çанталăкри çыхăнусем çинчен ăнлантарасси, ăна упрама вĕрентесси, ачасен пуплевне аталантарасси.

**Усă курмалли хатĕрсем:** «Çурхи вăрман» декораци (уçланкă, йывăççем, хĕвел, пĕлĕтсем); теттесем (вату мучи пукане, чĕрĕп, мулкач, упа, уяр нăрă); гуашь сăрри (хура тĕсли), мамăк сырнă патаксем, уяр нăрă ӳкернĕ хутсем.

**Умĕнхи ĕçсем:** Çут çанталăка сăнани, «Хĕвелпе çумăр», «Упалла» вăйăсене выляни. Тискер чĕр чунсене ӳкерчĕксем çинче пăхса сăнани. Чĕр чунсем çинчен хайлавсем вуласа пани. Пластилинран мулкач тума вĕренни. «Хĕвел ялкăшать», «Пирĕн картишĕнчи йывăççем», «Çумăр çăвать» темăсемпе ӳкерни.

**Уяв йĕрки**

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, паян питĕ илемлĕ çанталăк. Хĕвел ăшăтса пăхать. Эпĕ сире вăрмана уçăлма чĕнетĕп. Каятпăр-и?

Кайăксен сасси илтĕнет.

В о с п и т а т е л ь.

Шурă юр ирĕлет,  
Çеçен хир чĕрĕлет,  
Ешĕл курăк ӳсет...  
Ку хăçан пулать-ши?  
(*Çуркунне.*)

В о с п и т а т е л ь. Тĕрĕс, çуркунне. Ачасем, йĕри-тавралла пăхăр-ха. Мĕнле хитре çурхи вăрманта! Чим, пире кунта вăрман хуралçи – ватă Мучи кĕтет. Сывлăх сунатпăр, Мучи!

М у ч и. Сывă-и, ачасем? Мĕнле сăлтавпа эсир вăрманта?

В о с п и т а т е л ь. Мучи, эпир сан пата хăнана килтĕмĕр, çурхи вăрманпа паллашасшăн.

М у ч и.

Эпĕ шур сухаллă  
Кăмăллă Мучи.  
Пирĕн вăрман аслă,  
Эп ун хуралçи!

В о с п и т а т е л ь. Çуркунне вăрманти Мучин ĕçĕ питĕ нумай: пурне те пулăшмалла, йĕрке тытмалла. Çуркунне кун тăршшĕ вăрăмланать, çумăр

та çăвать, йывăççем çинче çулçăсем сарăлаççĕ, ешĕл курăк ӳсет, пирвайхи чечексем çурăлаççĕ, кайăксем юрлаççĕ.

– Ачасем, пăхăр-ха, çумăр пĕлĕчĕсем хĕвеле хупларĕç, часах çумăр çума пуçлать. Сунчăксем илме маннă эпир, мĕн тăвăпăр?

М у ч и. Эсир çумăртан йывăç айне пытанма пултаратăр.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпир мĕнле йывăç айне пытантăмăр? (*Хуравсем.*) Тĕрĕс, хурăн. Хурăн йывăçĕ пулни пирки мĕнле пĕлтĕр-ха эсир? (*Хуравсем.*)

Пирĕн çĕр-шывра хурăн йывăçĕ анлă сарăлнă. Вăл илемлĕ те шурă вулăллă йывăç. Кĕркунне çулçисене тăкать. Акă çумăр та чарăнчĕ. Атьăр, ачасем, хĕвеле чĕнетпĕр.

Хĕвел, тух,
Хĕвел, тух!
Хĕрлĕ йăва паратăп.
Хĕвел, тух,
Хĕвел, тух!
Хĕрлĕ явлăк паратăп.

М у ч и. Маттурсем, акă хĕвел те ялкăшса пăхма тытăнчĕ. Эпĕ кăштах канма ларам-ха. *(Тунката çине ларать.)* Ай-уй! Ман пӳрнене мĕнле йĕп тăрăнчĕ-ши?

В о с п и т а т е л ь. Тен, чĕрĕп хăйĕн йĕппине çухатса хăварнă. Ачасем, Мучи мĕнле йĕппе пӳрнине тăрăнтарнă-ши? Паллах, чăрăш йĕппипе.

Мучи, асăрхан, чăрăш йĕппи питĕ шĕвĕр.Чăрăш йывăçĕн çулçă вырăнне – лăсăсем (йĕпсем). Чăрăш лăссисене, ытти çулçăллă йывăççем пек, кĕркунне тăкмасть. Çавăнпа та ун пирки çапла калаççĕ: хĕлле те, çулла та пĕр тĕслĕ. (*Чăрăш, хыр.*)

Ачасем, акă чĕрĕп тус чăрăш айне пытаннă. Вăл йĕплĕ çăмха пулса выртнă, çавăнпа та эпир ăна асăрхаймарăмăр. (*Чăрăш айĕнче чĕрĕп тетте.*) Мĕнле шутлатăр, мĕншĕн чĕрĕпсем çăмха пек чăмăртанаççĕ? Чĕрĕпе ачашласан мĕн пулать-ши? Чĕрĕпе пĕрле илсе кайма юрать-ши? (*Ачасен хуравĕсем.*)

В о с п и т а т е л ь. Чĕрĕп – вăрман чĕр чунĕ, çавăнпа та ăна пĕрле ача садне илсе каймăпăр. Вăрманта ăна пурăнма аванрах пулĕ.

Малалла утар-ха. Ачасем, вăрманта шавлама юрать-и? Мĕншĕн юрамасть? (*Хуравсем.*)

Тĕрĕс, шавласан вăрманти чĕр чунсене хăратса пĕтерĕпĕр. Акă курăк хушшинче мулкач тус ларать (*Тетте мулкач*). Вăл питĕ пĕчĕк те пулăшусăр. Амăшĕ ăна вăхăтлăха пĕччен хăварнă, хăй апат шырама кайнă пулĕ. Эпир мулкача юмахсенче тăтăшах тĕл пулатпăр. Мĕнле чĕнеттĕмĕр-ха эпир ăна? Тĕрĕс, хăравçă мулкач. Мĕншĕн хăравçă-ха вăл? Мулкач вăрманта мĕнрен хăрать?

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, илтетĕр-и? Такам хыттăн мĕкĕрет.

Йывăç айĕнче упа ларать.

У п а. У-у-у, ачасем, атьăр-ха пĕрле выляр, çуркуннешĕн савăнар!

В о с п и т а т е л ь. Атьăр выляр!

**«Упалла» вăйă**.

Ачасем сăвă калаççĕ, унтан упаран тараççĕ. Упа ачасем хыççăн чупать.

Кил, кил выляма,
Ан кил, ан кил çапăçма.
Упа килет у-у-у!
Ларап, тăрап, тарса хăтăлап!

Упа ачасемпе сывпуллашать, каять.

М у ч и. Ачасем, ман вăрманта кайăксем те, чĕр чунсем те, йывăççемпе чечексем те нумай. Анчах та инкек сиксе тухрĕ-çке пирĕн.

В о с п и т а т е л ь. Мĕн пулчĕ тата?

М у ч и. Вăрманта илемлĕ хурт-кăпшанкăсем йышлăн вĕçетчĕç. Халĕ вара вĕсем тĕссĕр те илемсĕр пулса юлчĕç.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр-ха хурт-кăпшанкăсене илемне тавăрма пулăшар. Акă кунта нăрă. Ăна вир-вир е уяр теççĕ. Вир-вир нăрă кĕлетки çак пайсенчен тăрать: пуçĕ, кăкăр пайĕ, хырăм пайĕ. (*Воспитатель нăрă кӳлепин ӳкерчĕкне кăтартать.)*

Тата уярăн чупмашкăн урисем, вĕçмешкĕн çуначĕсем пур. Анчах та унăн çуначĕсем тĕссĕр те илемсĕр пулса тăнă. Атьăр-ха вĕсене илемлетер. Уяр çуначĕсем мĕн тĕслĕ? Тĕрĕс, хĕрлĕ тĕслĕ, хура пăнчăсемпе палăрса тăраççĕ.

Ачасем хут çине ӳкернĕ уярсене илемлетеççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ уяр нăрăсене вĕçтерсе яма та юрать.

Ачасем сăвă каланă май уярсене уçланкăри курăк çине хураççĕ.

Уяр, вĕç, уяр, вĕç!
Уяр пулас пулсассăн
Çӳлтен çӳле вĕçсе кай!
Çумăр пулас пулсассăн
Курăк çине вĕçсе лар!

Мучи ачасене тав тăвать, сывпуллашса йывăççем хушшинче çухалать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн ача садне таврăнма вăхăт çитрĕ. Сире çурхи вăрманта килĕшрĕ-и? Вăрманта мĕнле чĕр чунсене тĕл пултăмăр? Мĕнле йывăççене куртăмăр? Пирĕн вĕсемпе мĕнле пулмалла? (*Хуравсем.*)

Ешĕлех халь курăксем,
Чăрăшсем те хурăнсем.
Тĕрлĕ тĕслĕ чечексем,
Илĕртеççĕ çеçкисем.

Вĕсене эс ан тивсем,
Çĕнĕ çĕр çинчи илем.
Эпир – садик ачисем,
Çут çанталăк тусĕсем!

**Литература**

Чăваш халăх пултарулăхĕ. Ваттисен сăмахĕсем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2007. – 382 с.

Çăлкуç – Родник: хрестомати. – Чебоксары, 2006. Г.П. Захарова, М.Б. Кожанова и др.

Праздники на земле Улыпа: методическое пособие для дошкольных образовательных учреждений / под ред. Р.Б. Кузьминой. – Чебоксары: Изд-во Л.А. Наумова, 2006.

*Соломенникова О.А*. Ознакомление с природой в детском саду. Младшая группа. – Мозаика–Синтез, 2014.

***Л.В. Фомина**, Тăвай районĕн Тăвай ялĕнчи*
*«Асамат кĕперĕ» ача сачĕн воспитателĕ*

## МĂНКУН УЯВĔ

*(Шкулчченхи ӳсĕмри (6–7 çулхи) ачасемпе иртермелли уяв сценарийĕ)*

**Уяв тĕллевĕ:** ачасене тăван халăхăн авалтан аталанса пынă мăнкун йăли-йĕркипе паллаштарасси.

**Уяв задачисем:** ачасен чăваш пуплевне аталантарасси; тавра курăмне ӳстерессi; вăйă-юрăсене хутшăнма хавхалантарни; фольклор вăййисене харпăр хăй тĕллĕн ăслама вĕрентесси; тавçăрулăхпа пултарулăха аталантарасси; пĕр-пĕринпе хутшăнса туслă та кăмăллă пулма вĕрентесси.

**Кирлĕ хатĕрсем:** сĕтел, хĕретнĕ çăмартасем, кăчкă, кулич, кашăксем.

**Малтанхи ĕç:** ачасене сăвăсемпе юрăсем вĕрентни, вăйă йĕркисемпе паллаштарни, зал илемлетсе хатĕрлени.

### Уяв юхăмĕ

Залра илемлĕ чăваш юрри илтĕнет. Сĕтел çинче сăрланă çăмартасем, кулич тата кăчкă ларать. Чăваш тумĕсем тăхăннă е р т с е  п ы р а к а н с е м п е  а ч а с е м кĕреççĕ.

1-м ĕ ш  а ч а.

Ылтăн хĕвел, сар хĕвел
Ирĕлтерет шур юра.
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать
Пур çĕрте те урамра.

2-м ĕ ш  а ч а.

Аслă Мăнкун çитнипе
Манăн чунăм савăнать.

Аслă Мăнкун çитнипе
Пĕтĕм ача савăнать.

1-мĕш ертсе пыракан. Ырă кун пултăр, ачасем! Эпир сире курма питĕ хавас. Мăнкун – çуркуннехи чи çутă тата чи савăнăçлă уявсенчен пĕри. Вăл пуринчен те аслăраххи, пысăкки шутланать. Ăна аслисем те, ачасем те чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Çавăнпа паянхи уяв та савăнăçлă иртессе шанатпăр. Мĕншĕн тесен эпир ăна Мăнкуна халаллатпăр.

2-мĕш ертсе пыракан. Ĕлĕк Мăнкун кивĕ çула ăсатса Çĕнĕ çула хаваслăн кĕтсе илни шутланнă. Ăна кун таврăнсан чун кĕнĕ кун – юнкун пуçланă та тепĕр юнкунччен палăртнă. Çынсем çак кун пĕр-пĕрне: «Христос чĕрĕлнĕ!», «Чăн чĕрĕлнĕ!» – тесе саламлаççĕ, виçĕ хут чуптăваççĕ те Мăнкун çăмарти параççĕ.

1-мĕш ертсе пыракан. Мăнкун уявĕн йăли-йĕркисем питĕ нумай. Çамрăк хĕрсемпе каччăсем хĕвел «вылянине» курас тесе пӳрт тăррине хăпарнă. Ачасемпе ваттисем ирхине ирех урама хĕвел тухăç енчен хĕвел тухнине курма чупса тухнă. Аслисем ачасене Хĕвелпе Вупăр çапăçни çинчен халап каласа панă. Ачасем хĕвел валли чĕнӳ-йыхрав сăввисене вуланă. Чăвашсем ĕненнĕ тăрăх, çак кун хĕвел те ташласа тухнă.

3-мĕш ача.

Хĕвел, пăх, хĕвел, пăх,
Ачу шыва кайнă тет.
Турчăкапа туртса ил,
Тетте кĕпе тăхăнтарт,
Пылпа кулач сĕрсе пар!

4-мĕш ача.

Хĕвел, хĕвел, хĕвел, тух,
Хĕветĕре курма тух!
Хĕветĕре пулмасан
Хĕветлене курма тух!

2-мĕш ертсе пыракан. Ачасем, атьăр эпир те пĕрле харăс хĕвеле чĕнсе пăхар.

Пурте (*пĕрле*). Пăх, Хĕвел, пăх, Хĕвел, Мăнкун çитрĕ, хĕрлĕ çăмарта сана паратăп.

Илемлĕ юрăпа Хĕвел ташласа кĕрет.

Хĕвел. Сывă-и, ачасем? Мĕнле пурăнатăр?

Ачасем. Питĕ аван, Хĕвелĕмĕр. Кĕтсе ывăнтăмăр эпир сана. Çутă хĕвелсĕр тунсăхласа çитрĕмĕр.

Хĕвел. Курăнать, ачасем. Кăшт чĕрĕлме тупмалли юмахсем парам-ха сире.

Çулленех пĕр пике килет, çутă кунсем илсе килет. *(Çуркунне.)*

Шур пичкере икĕ тĕслĕ сăрă. *(Çăмарта.)*

Каçа хирĕç пытанать, ирпе ирех тупăнать. *(Хĕвел.)*

Патакпа хĕртеççĕ, чулпа хĕстереççĕ, кăварпа пĕçереççĕ, çĕçĕпе ваклаççĕ, çавăнпа та мана пурте юратаççĕ. *(Çăкăр.)*

Шурă чиркў, ниçтан кĕме алăк çук. *(Çăмарта.)*

Пылпа кулач сĕрсе пар,
Алла хĕрлĕ маття пар,
Хĕрли – сана, шурри – мана!
Ытти пурте… *(Мăнкуна.)*

Маттур! Маттур, ачасем! Тупсăмсене питĕ лайăх пĕлетĕр! Тата сăвăсем пĕлетĕр-и?

1-м ĕ ш   е р т с е   п ы р а к а н. Паллах, пĕлеççĕ, Хĕвел! Ачасем, Хĕвеле такмаксем юрласа кăтартар-и?

Ачасем такмаксем калаççĕ.

5-м ĕ ш   а ч а.

Эпĕ шурă çăмарта
Питĕ юрататăп.
Чăх çăмарта тăвасса
Сыхласа тăратăп.

6-м ĕ ш   а ч а.

Анне сухан шуратать,
Хуппине вăл пуçтарать,
Мăнкун валли çăмарта
Унпала вăл саратать.

7-м ĕ ш   а ч а.

Мăнкун ячĕпе тесе
Парнелерĕ асанне
Ик кĕсьеллĕ, пит хитре
Мăкăнь çеçкеллĕ кĕпе.

8-м ĕ ш   а ч а.

Мăнкун çитрĕ, ачасем.
Рет кĕтеççĕ тăвансем.
Эпир, ача-пăчасем,
Ирттеретпĕр вăйăсем.

2- м ĕ ш   е р т с е   п ы р а к а н. Мăнкун питĕ хаваслă уяв. Вăл савăнăçлă иртгĕр тесе ачасем тĕрлĕ вăйă вылянă.

А ч а. Ачасем, атьăр эпир те Мăнкун вăййисене вылятпăр.

А ч а с е м. Вылятпăр, вылятпăр.

А ч а. Мĕнле вăйă вылятпăр?

А ч а с е м. Çăмарталла!

А ч а. Кам варринче тăрать? Атьăр шутлатпăр! (*Шăпа ярса пĕрне варрине тăратаççĕ.)*

Ку – каять,
Ку – чупать,
Ку – юлать,
Ку – тытаканни пулать.

«Сарайӗнчи сар чăххи» юрăпа ачасем выляма пуçлаççӗ. Вăйă карти тăваççӗ, варрине пӗр ача тăрать. Варринчи ача куриччен пӗр-пӗрне çăмарта парса яраççӗ. Çăмарта камра пулнине пӗлмелле. Пӗлеймесен ачан мӗн те пулин туса кăтартмалла. Вăйă виçӗ хутчен пырать.

1-мӗш ертсе пыракан. Ывăнтăр пуль кăштах. Канар-ха ак ларсах. Эпӗ сире Хӗвелпе усал Вупăр карчăк çапăçни çинчен халап каласа парăп.

Хӗлӗпе усал сывлăшсем Хӗвеле тапăннă. Çак усал сывлăшсене усал Вупăр янă. Вӗсем Хӗвеле тӳперен туртса антарасшăн пулнă, çавăнпа та Хӗвел тӳпере час-час курăнман. Чăваш паттăрӗсем Хӗвеле çăлма шутланă. Нумай паттăр пуçтарăннă тет. Вӗсем ваттисенчен пехил илсе хӗвел тухăç енне Хӗвеле çăлма кайнă. Çичӗ кун та çичӗ каç çапăçнă каччăсем Вупăр карчăк тарçисемпе. Паттăрсем карчăк тарçисене çапса аркатнă. Вупăр вара çӗр айне кӗрсе тарнă.

Çамрăксем Хӗвеле çӗклесе тӗрленӗ сурпан çине хунă. Хӗвел тухăç енчи чи çӳллӗ сăрт çине хăпарнă. Унта чи çӳллӗ йывăç çине улăхса Хӗвеле тӳпене вырнаçтарнă. Хӗвел патне амăшӗ чупса çитнӗ, кăкăр сӗчӗпе тăрантарнă. Вăйсăр Хӗвел çиçсе кулса янă.

Ваттисем каланă тăрăх, кашни çул Мăнкун умӗн чăваш паттăрӗсем Хӗвеле çăлма каяççӗ. Çак куна халалласа чăвашсем Мăнкун уявлаççӗ.

2-мӗш ертсе пыракан. Халап интереслӗ-и, ачасем?

Ачасем. Питӗ интереслӗ.

2-мӗш ертсе пыракан. Пирӗн арçын ачасем те пулас паттăрсем тесе шутлатăп эпӗ. Çавăнпа та вӗсене вăййа чӗнер-ха. Кам вăйлăрах пулнине пӗлер. Хӗр ачасем вара арçын ачасене пулăшма пултараççӗ.

**«Камăн нумайрах çаврăнать» вăйă**.

Вылякансем пӗçернӗ чăх çăмартисене çавăрса яраççӗ. Камăн нумайрах çаврăнать, çав çӗнтерӳçӗ пулса тăрать.

**«Ан ӳкер» вăйă**.

Вылякансем икӗ ушкăна пайланаççӗ. Ачасен кашăк çинчи çăмартана ӳкермесӗр палăртнă çӗре çитсе килмелле. Маларах çитекен ушкăн – çӗнтерӳçӗ.

**«Кам паттăр?» вăйă.**

Икӗ вылякан пиçнӗ çăмартасене пӗр-пӗринпе лектереççӗ. Камăн аллинчи çăмарта çӗмӗрӗлмест, çав çӗнтерет.

Хӗвел. Ах, маттур та ачасем! Эсир мана хăвăр пултарулăхăрпа питӗ кăмăла çӗклерӗр. Эпӗ те сире валли кучченеç хатӗрлерӗм. *(Хӗвел: «Христос чӗрӗлнӗ!» – тесе хӗретнӗ çăмарта валеçсе тухать.)*

Ачасем. Чăн чӗрӗлнӗ!

9-м ĕ ш  а ч а.

Çанталăк ăшă кунсерен,
Тăван тавралăх чĕрĕлет.
Уяв пуçланчĕ килсерен,
Кашни çурта Мăнкун кĕрет.

10-м ĕ ш  а ч а.

Мăнкун, Мăнкун терĕмĕр,
Мăнкун уявĕ çитрĕ те.
Мăнкун пăтти çиййĕпĕр,
Çăмарта активĕпĕр.

1-м ĕ ш  е р т с е  п ы р а к а н. Хисеплĕ ачасем, çакăнпа пирĕн уяв вĕçленет. Паян эпир чăваш вăййисене вылярăмăр, сăвă каларăмăр. Малашне та хамăр чăваш пулнине туйса Чăваш çĕрĕн йăли-йĕркисене пăхăнса тăрасса шанатăп. Мăнкун ячĕпе сире, ачасем! Тепре тĕл пуличчен!

***А.Н. Хорайкина**, Хĕрлĕ Чутай районĕн «Хĕвел» ача сачĕн воспитателĕ*

## ЧĂВАШ ВĂЙЙИСЕН АСАМЛĂ ТĔНЧИНЧЕ

*(5-6 çулхи ачасем валли хатĕрленĕ спортпа вăйă-кулă сценарийĕ)*

**Тĕллевĕ:** шкул çулне çитмен ачасене чăваш халăхĕн кусса çӳрекен вăййисене вĕрентесси, тăван ен йăли-йĕркипе паллаштарасси.

**Задачăсем:** ачасене хăвăрт чупма, ритм туйăмне, çаврăнăçулăхне аталантарма вĕрентесси; тăван çĕр-шыва юратма вĕрентесси; чăваш халăхĕн куçăмлă вăййисемпе малалла паллаштарасси; физкультура занятийĕнче ачасен чăвашла пуплевне аталантарасси.

**Малтанхи ĕç:** чăваш халăх вăййисене ачасемпе пĕрле вĕренни.

**Кирлĕ хатĕрсем**: упа, тилĕ, пакша маскисем, çемçе фигурăсем (пуфиксем).

### Вăйă-кулă юхăмĕ

Е р т с е  п ы р а к а н. Ачасем, эпир паян асамлă чăваш тĕнчине каятпăр. Эсир манпа кайма килĕшетĕр-и?

А ч а с е м. Килĕшетпĕр.

Е р т с е  п ы р а к а н. Апла пулсан кайрăмăр. Асамлă тĕнчере манăн юлташсем пурăнаççĕ. Вĕсем пире кĕтеççĕ, вăйă-кулă йĕркелеме пулăшма килĕшрĕç. Малтанласа пирĕн пурин те пĕрле çакăн пек сăмахсем калас пулать:

Харăс тăрăр,
Тапăртатса ярăр,
Çĕр-шыври хаваслă юмахсен тĕнчине
Тӳрех лекме пулăшăр!

**«Çил ачисем» вăйă.**

Пурте алăсемпе тытăнса карталанса тăрар. Пирĕнтен пĕрне ертсе пыраканĕ пулма суйлас пулать. Ыттисем – çил ачисем пулаççĕ. Ертсе пыраканĕ ушкăн варрине тухать те тĕрлĕ сигнал парать. Эпир вара хушнă хусканусене тăватпăр.

Сигналсем:

«Çил çурçĕртен вĕрет» тесен вылякансен ертсе пыракана хирĕç çурăмпа çаврăнса тăмалла.

«Кăнтăр çилĕ вĕрет» тесен пĕр-пĕрин çине пăхмалла.

«Юр вĕçтерет» тесен йĕри-тавра çаврăнмалла.

«Çил тăмалчĕ» тесен ура çинче калла-малла сулланмалла.

«Çил шăпланчĕ» тесен хускалмасăр тăмалла.

Е р т с е  п ы р а к а н. Акă эпир тĕлĕнмелле илемлĕ асамлă чăваш тĕнчинче. Кайăксем юрлаççĕ, лĕпĕшсем вĕçеççĕ. Ачасем, пире хирĕç мĕнле чĕр чун килет-ха?

Ачасем умне упа маски тăхăннă г е р о й тухать.

У п а. Эпĕ Упа-утаман, ик урапа утакан. Эсир вара камсем пулатăр?

Е р т с е  п ы р а к а н. Эпир ача сачĕн пепкисем.

У п а. Эсир мĕн ятлă?

Е р т с е  п ы р а к а н. Пирĕн ятсене «Эпĕ Ванюк ятлă» вăйăран пĕлме пултаратăн. Халĕ эпир сана çав вăййа выляса кăтартатпăр.

**«Эпĕ Ванюк ятлă» вăйă.**

Вылякансем хушшинче ертсе пыракана – Ванюка суйлаççĕ. Ванюк вăйă картин варрине тухать. Ачасем алла-аллăн тытăнаççĕ те юрласа йĕри-тавра çаврăнаççĕ, сăмахлаççĕ:

Савăнаççĕ чĕр чунсем,
Хĕпĕртеççĕ кайăксем,
Çӳл тӳпе хĕвеллĕ,
Ачасем телейлĕ.
Тухăр пурте урама
Пĕр-пĕринпе выляма.

Вылякансем тарса саланаççĕ. Ванюк вĕсене хăвалать. Хăваласа çитсе тытнă ача Ванюк пулать. Вăл хыттăн калать: «Эпĕ Ванюк ятлă» тет те вылякансене хăвалама пуçлать.

У п а. Пирĕн асамлă тĕнчере эсир мĕн туса çӳретĕр?

Е р т с е  п ы р а к а н. Эпир чăваш вăййисене выляса пăхас тата вĕренес шутпа килтĕмĕр. Эсĕ пире мĕнле те пулин вăйă вĕрентейместĕн-ши?

У п а. Юрать, вĕрентес пулать. Вăйă ячĕ – «Суккăр упа».

**«Суккăр упа» вăйă**.

Шăпа тăрăх ертсе пыракана – суккăр упана суйлаççĕ. Унăн куçне тутăрпа çыхаççĕ. Суккăр упа аллине сарса пăрахса вылякансене тытма пуçлать. Вылякансем «Суккăр упана» аллисемпе сĕртĕнсе йĕкĕлтеççĕ, ун çумĕнчен тăватă уран упаленсе тараççĕ, куклене-куклене лараççĕ. Хăш ачана упа тытать, çав ача «Суккăр упа» пулса тăрать. Вăйă çапла малалла тăсăлать.

Е р т с е п ы р а к а н. Тавтапуҫ сана, Упа-утаман, ик урапа утакан, пире хаваслă вăйă вĕрентнĕшĕн, пирĕн малалла каяс пулать. Чипер юл, тепре тĕл пуличчен.

У п а. Чипер кайăр, тепре тĕл пуличчен.

Е р т с е п ы р а к а н. Тĕлĕнмелле илемлĕ асамлă чăваш тĕнчинче! Кайăксем юрлаҫҫĕ, лĕпĕшсем вĕҫеҫҫĕ. Ачасем, пире хирĕҫ мĕнле чĕр чун килет-ха?

Ачасем умне тилĕ маски тăхăннă герой тухать.

Т и л ĕ. Эпĕ хитре Тилĕ – чее тус. Эсир вара камсем пулатăр?

А ч а с е м. Эпир ача сачĕн пепкисем.

Т и л ĕ. Пирĕн асамлă тĕнчере эсир мĕн туса ҫӳретĕр?

Е р т с е п ы р а к а н. Эпир чăваш вăййисене выляса пăхас тата вĕренес шутпа килтĕмĕр. Эсĕ пире мĕнле те пулин вăйă вĕрентейместĕн-ши?

Т и л ĕ. Юрать, вĕрентес пулать. Вăйă ячĕ – «Тилĕпе хурсем».

**«Тилĕпе хурсем» вăйă.**

Вылякансем хушшинче тилле суйлаҫҫĕ. Ыттисем – хурсем пулаҫҫĕ. Хурсем ҫаран ҫине симĕс курăк ҫине тухаҫҫĕ. Хур уттипе ҫӳреҫҫĕ. Кĕтмен ҫĕртенех тилĕ чупса тухать те хурсене хăвалама пуҫлать. Хурсем ки-как! ки-как! тесе пĕр ҫĕре пуҫтарăнаҫҫĕ.

Т и л ĕ. Халех ҫисе яратăп сире!

Х у р с е м. Ан ҫи пире!

Т и л ĕ. Ҫиетĕп!

Х у р с е м. Итле-ха, епле юрă юрлатпăр эпир: ки-как!, ки-как!

Хурсем юрланăҫемĕн вĕҫме пикенеҫҫĕ. Тилĕ вĕсене хăвалама тытăнать. Тытнă хурĕ вара тилĕ пулса тăрать. Вăйă ҫапла малалла тăсăлать.

Е р т с е п ы р а к а н. Тавтапуҫ сана, хитре Тилĕ – чее тус, пире хаваслă вăйă вĕрентнĕшĕн. Пирĕн малалла каяс пулать. Чипер юл, тепре тĕл пуличчен.

Т и л ĕ. Чипер кайăр, тепре тĕл пуличчен.

Е р т с е п ы р а к а н. Тĕлĕнмелле илемлĕ асамлă чăваш тĕнчинче! Кайăксем юрлаҫҫĕ, лĕпĕшсем вĕҫеҫҫĕ. Ачасем, пире хирĕҫ мĕнле чĕр чун килет-ха?

Ачасем умне пакша маски тăхăннă герой тухать.

П а к ш а. Эпĕ Пакша – хитре хӳре кăпăшка. Эсир вара камсем пулатăр?

А ч а с е м. Эпир ача сачĕн пепкисем.

П а к ш а. Пирĕн асмлă тĕнчере эсир мĕн туса ҫӳретĕр?

Е р т с е п ы р а к а н. Эпир чăваш вăййисене выляса пăхас тата вĕренес шутпа килтĕмĕр. Эсĕ пире мĕнле те пулин вăйă вĕрентейместĕн-ши?

П а к ш а. Юрать, вĕрентес пулать. Вăйă ячĕ – «Ҫивĕч пакшасем».

**«Ҫивĕч пакшасем» вăйă.**

Вылякансенчен пĕрне йытă пулма суйлаҫҫĕ. Ыттисем вара пакшасем пулаҫҫĕ. Пакшасем ятарласа хатĕрлесе хунă ҫемҫе «йăвасене» (пуфиксем) вырнаҫаҫҫĕ. «Ҫивĕч пакшасем»

тесен пакшасем (ачасем) хăйсен йăвисенчен тухса айккăн-майккăн сиккелеме пуçлаççĕ. Йытă вара вĕсене хăвалама тытăнать. Тытнă ача йытă пулса тăрать. Вăйă çапла малалла тăсăлать.

Е р т с е  п ы р а к а н. Тавтапуç сана, Пакша – хитре хӳре кăпăшка, пире хаваслă вăйă вĕрентнĕшĕн. Пирĕн малалла каяс пулать, чипер юл, тепре тĕл пуличчен.

П а к ш а. Чипер кайăр, тепре тĕл пуличчен.

Е р т с е  п ы р а к а н. Ачасем, паянхи чăваш вăййисен асамлă тĕнчинчи çул çӳрев вĕçленсе пырать. Хамăрăн ача садне каялла таврăнма çакăн пек сăмахсем калар-ха:

Харăс тăрăр,
Тапăртатса ярăр,
Ачасем, маттур тăрар,
Каллех ача садне таврăнар.

***Л.В. Шарова**, Етĕрне хулин «Росинка»*
*ача сачĕн физкультура занятийĕсене ертсе пыракан*

## КАЙĂКСЕН УЯВĔ

*(Мероприятие 4–5 çулхи ачасем валли хатĕрленĕ)*

**Ĕç тĕллевĕ**: таврари пурнăç тĕслĕхĕсемпе тата ятарласа йĕркелнĕ лару-тăрупа анлăрах усă курса ачасене çут тĕнче пулăмĕсене лайăхрах, тарăнрах пĕлсе пыма хавхалантарасси.

**Ĕç задачисем:** чĕр чунсем çулталăкăн тĕрлĕ вăхăчĕсенче пурăнма май-лашнине асăрхама вĕрентесси; чăваш халăх сăмахлăхĕпе паллашас сулăма аталантарасси; илнĕ пĕлӳсемпе, пухăннă хăнăхусемпе вăйăсенче тата вăй çемми ĕçĕсенче усă курма хавхалантарни; ытти ачасемпе пĕрле ĕçлесе, выляса пĕлӳ пухасси.

**Кӳртĕм ĕç:** ачасене кайăксем çинчен сăвăсем вĕрентесси.

### Уяв йĕрки

А ч а с е м  воспитательпе пĕрле çуркуннехи темăпа илемлетнĕ зала кĕреççĕ. Йĕри-тавра кайăк сасси, шыв шăнкăртатса юхни илтĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпир сирĕнпе хĕвеллĕ уçланкăна çитрĕмĕр. Йĕри-тавра пăхăр-ха, халĕ çут çанталăкăн хăш вăхăчĕ? *(Ачасен хуравĕсем.)* Çуркуннехи уçланкăра мĕнле-ши? (*Хĕвел хĕртсе пăхать, пур çĕрте те шыв шăнкăртатса юхать, кайăксем юрă шăрантарни илтĕнет.*) Айтăр-ха эпир те сирĕнпе хĕвелсем пулар, алăсем вара пирĕн ăшă, ырă, çутă шевлесем. Çав-ракана тăрса хамăр ăшă шевлесемпе пĕр-пĕрне ыталаса ăшăтар. Пурне те çуркуннехи савăнăç кӳрер.

Хĕр ачасем пире хĕвел ташши парнелесшĕн, вĕсене кĕтсе илер.
Хĕр ачасем аллисене картонран каснă хĕвелсем тăхăнса «Хĕвел ташши» ташлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Епле илемлĕ ташă. Тӳрех кăмăл çĕкленчĕ. Йăвасем çинче мĕн куратăр? Эпир паян мĕнле уява пуçтарăнтăмăр?

А ч а с е м. Кайăксен уявне.

В о с п и т а т е л ь. Эсир мĕнле кайăксене паллатăр? *(Ачасен хуравĕсем.)*

Çуркунне çитсен кайăксен пурнăçĕ улшăнать-ши?

А ч а с е м. Вĕсем хĕвел çинче хĕртĕнеççĕ, юрăсем шăрантараççĕ, хăшĕсем кăнтăр енчен таврăнаççĕ, чĕпĕ кăларма хатĕрленеççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Тĕрĕс. Кайăксем те çуркунне çитнишĕн савăнаççĕ, юрлаççĕ. Эпир те çуркуннене савса юрă юрлар.

Ачасем «Çуркунне» юрă юрлаççĕ. Сăвви *Якку Микулин*, кĕвви *Г. Лисаевăн*.

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн пата такам хăнана васкать пулмалла.

Ш ă н к ă р ч килет.

Ш ă н к ă р ч.

Салам, ачасем.
Çитрĕ, çитрĕ çуркунне,
Эп те çитрĕм васкаса.
Ай юрлам-ха юррине,
Ачасем, сире савса.

А ч а с е м. Салам, Шăнкăрч.

Ш ă н к ă р ч. Сире курманни нумай пулать. Эпĕ ăшă енчен сире валли тупмалли юмахсем илсе килтĕм. *(Шăнкăрч тупмалли юмахсем парать.)*

Сик-сик кутлă, кăс çĕлĕклĕ, пурçăн йĕмлĕ. *(Кăсăя.)*

Ларать хуран пек, хӳри ешĕл сухан пек, кăшкăрать шуйттан пек. *(Чакак.)*

Каçхине вăранать, кăнтăрла çывăрать. *(Тăмана.)*

В о с п и т а т е л ь. Ку кайăксене лайăх пĕлетпĕр. Вĕсем хĕлĕпех пирĕн патра пурăннă. Эпир вĕсене валли сырăшсем çакнă, унта çăкăр тĕпренчĕкĕсем, тулă пĕрчисем сапса панă. Вĕсене эпир хĕл каçма юлакан кайăксем тетпĕр.

**«Машинăпа кайăксем» вăйă.**

Ачасем кайăксем ӳкернĕ пуç кăшăлĕсем тăхăнаççĕ.
Пĕр ачана руль параççĕ.

Ш ă н к ă р ч. Ку кайăксене паллатăр-и? *(Шăнкăрч тупмалли юмахсем парать.)*

Хир-хир урлă, хир урлă, ял-ял урлă, ял урлă эреветлĕ-теветлĕ хĕр килет. *(Чĕкеç.)*

Хура йăмăкăн юрри хитре. *(Шăнкăрч.)*

Шур мăкăрăн тир урлă. (*Курак*.)

В о с п и т а т е л ь. Ку кайăксем вара хĕл каçма кăнтăр енне вĕçсе кайнă. Эпир вĕсене кĕтсе йăвасем хатĕрлетпĕр. Ачасем, мĕнле кайăксем валли пӳрт ăсталатпăр?

А ч а с е м. Шăнкăрчсем валли.

**«Шăнкăрч йăви ăстала» вăйă.**

3–4 ача геометри фигурисенчен шăнкăрч йăви ăсталать.

**Çерçи – воробей**

– Чим-чим-чим! – тет çерçи, –
Кам кунта пахча хуçи?
Кантăр та акма пĕлмен,
Тырă-пулă ӳстермен.

**Шăнкăрч – скворец**

Вĕçсе килтĕм кăнтăртан
Хам çуралнă тавранах.
Илсе килтĕм эп унтан
Çĕнĕ юрăсем пайтах.

**Кăсăя – синица**

Хитре кайăк кăсăя, –
Куртăм эп тăсса мăя.
Сиккелет йывăç çинче,
Тĕлĕнет унран тĕнче.

**Карăк – глухарь**

Карăк тĕкĕ пит хитре,
Йăл та йăл çиçет сĕре.
Çавăнпа пуль ун юрри
Вăрманта халь чи хитри.

**Тăрна – журавль**

– Сан ташшу хитре, тăрна,
Ташласа парсам мана!..
Эх, ташлать, ташлать тăрна,
Савăнтарчĕ вăл мана.

**Сар кайăк – иволга**

Сарă, сарă, сап-сарă,
Çурхи хĕвел сап-сарă.
Тӳпери хĕвел пекех
Сарă кайăк сап-сарă.

**Чĕкеç – ласточка**

Вăш та вăш вĕçет чĕкеç,
Чĕпписем çумра вĕçеç.
Ах, çунат тупасчĕ ман,
Вĕсемпе вĕçесчĕ ман!

**Шăпчăк – соловей**

Таврара унччен пит шăпчĕ.
Вĕçсе килтĕм те эп, шăпчăк,
Тĕрлĕ юрă шăрантартăм, –
Çынсене хаваслантартăм.

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн ачасем кайăксем çинчен сăвăсем те вĕреннĕ. Итлесе пăхар-ха.

Ш ă н к ă р ч. Маттур, ачасем! Эсир манăн тупмалли юмахсен тупсăмĕсене те пĕлтĕр, юрра-ташша та ăста. Анчах та манăн каймалла. Ĕç питĕ нумай.

В о с п и т а т е л ь. Ан васка-ха, шăнкăрчăм, эпир сана валли парне хатĕрлерĕмĕр. Ачасем сана кĕтсе сăвă вĕренчĕç тата илемлĕ шăнкăрч йăви ăсталарĕç.

Ачасем «Шăнкăрч йăви» сăвă вулаççĕ.

Çитрĕ ăшă çуркунне,
Сар хĕвел йăл-йăл кулать.
Ĕнтĕ хурăн тăррине
Çĕн йăва лартас пулать.

«Кун пек чаплă йăвана
Туса панă кам мана?» –
Тейĕ шăнкăрч савăнса,
Ярĕ çепĕç юрласа.

*А. Кăлкан.*

Ш ă н к ă р ч.

Питĕ пысăк тав сире,
Ăслă, ырă тусăмсем.
Ай юрлам-ха юррине,
Ачасем, сире савса.

В о с п и т а т е л ь. Эпир санпа урамра тĕл пулăпăр, чипер кай.

«Вĕçсе килĕр!» юрă юрласа кайăксене тăван килĕсене чĕнсе илер.

**Литература**

*Антонова З.С* Пĕрле вулар-ха (хрестомати). Иккĕмĕш кĕнеке. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1987. – 88 с.

Ачасене шкулччен вĕрентмелли программа. Кузнецова Л.В. т. ыт. – Шупашкар: Чăваш вĕренӳ институчĕн издательстви, 2009.

Ачасене шкулччен вĕрентмелли тĕслĕх программи. Пуплеве аталантарасси. Илемлĕ литературăпа паллаштарасси. Вырăс (тăван мар) чĕлхине вĕрентесси / Артемьева Т.В., Михайлова С.Г., Иванова Н.В. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015.

*Патмар И.А., Патмар Э.И., Патмар С.Э.* Тупмалли юмахсем. 1 т. – Шупашкар: Çĕнĕ вăхăт, 2007.

Пĕрле вулар-ха: хрестомати: Ашшĕ-амăшĕ, воспитательсемпе учительсем валли. – Виççĕмĕш кĕнеке /З.С. Антонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1991. – 111 с.

*Степанов И.Р., Ыдарай Н.В*. Савăк вăхăт: ача-пăча юррисен пуххи. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015.

Федеральный государственный образовательный стандарт дошкольного образования: письма и приказы Минобрнауки. – М.: ТЦ «Сфера», 2014.

Чăваш музыки ача садĕнче: хрестомати. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989. – 71 с.

***Н.С. Шпакова****, Канаш районĕн Сиккассинчи*
*«Хурăн» ача сачĕн воспитателĕ*

## ÇĔР-ШЫВА ХӲТĔЛЕКЕНСЕНЕ САЛАМЛАР!

*(Мероприятие 5–6 çулхи ачасем валли хатĕрленĕ)*

**Ĕç тĕллевĕ:** Ачасен Тăван çĕр-шыва, Раççей çарне юратас, çĕр-шыва хӳтĕлекенсене хисеплес туйăмĕсене вăйлатасси; ачасен спортпа хускану хăнăхăвĕсене, музыка пултарулăхне, тăван чăваш чĕлхипе калаçас туйăмĕсене аталантарасси.

Ачасем зала марш кĕввипе кĕрсе икĕ пысăк çавракана тăраççĕ те тĕрлĕ спорт хусканăвĕсем тăваççĕ. Унтан пĕр рете тăраççĕ.

Е р т с е п ы р а к а н. Хаклă ачасем, хăнасем! Паян февралĕн 23-мĕшĕ – Çĕр-шыва хӳтĕлекенсен кунĕ.

Çавăнпа эпир хăнана сирĕн аçăрсене, аслаçăрсемпе кукаçăрсене чĕнтĕмĕр. Айтăр-ха вĕсене алă çупса саламлар. Ачасем, калăр-ха, кам пире тата хамăр çĕр-шыва сыхлать, хӳтĕлет?

А ч а с е м. Салтаксем, çар çыннисем.

Е р т с е п ы р а к а н. Тĕрĕс. Вĕсен ĕçĕ çăмăл мар. Ирхине те каçхине, кăнтăрла та çĕрле çар çыннисем хамăр çĕр-шыва тăшмансем тапăнасран сыхлаççĕ.

1-м ĕ ш а ч а:

Хăвăртрах ӳссе çитесчĕ,
Салтак аттине тăхнасчĕ,
Хӳтĕлесчĕ çĕр-шыва,
Хамăн атте-аннене.

2-м ĕ ш а ч а.

Раççей çарĕ – вăйлă çар.
Хамăр армие мухтав!
Ун хăватлă вут-кăварĕ
Тăшмана ним мар аркатĕ.

3-м ĕ ш а ч а.

Тăраççĕ çамрăк каччăсем
Раççейĕн вăйлă çар ретне.
Часах çиçеççĕ çăлтăрсем
Вĕсен кăкăрĕ çинче.

**«Уяв маршĕ» юрă**

(Сăввине *В. Алакер* куçарнă, кĕвви *С. Максимовăн*)

1. Харăс тухатпăр эпир
Акă пурте урама,
Уявшăн хĕпĕртетпĕр,
Утатпăр малалла.

*Хушса юрламалли*:
Параппанне çапатпăр,
Тратта-татта, траттатта!
Эх, хастарлă юрлатпăр
Уявшăн савăнса.

2. Хĕрлĕ ялав çĕклетпĕр
Пуçран нумай çӳллĕрех.
Ур-ра! Ур-ра! теетпĕр,
Хавасланать чĕре.
*Хушса юрламалли.*

Е р т с е п ы р а к а н. Ачасем, çар çыннин мĕнле пулмалла?

А ч а с е м. Чее те тавçăруллă.

Е р т с е п ы р а к а н. Эпир çар çынни пулма пултаратпăр-и, тĕрĕслесе пăхар. Эпĕ сире тупмалли юмахсем паратăп, эсир хуравне тупăр. Сăввăн юлашки сăмахĕ юмах тупсăмĕ пулать.

Салтакăн çӳçĕ яп-яка
Çумра пулсассăн ун … **тура.**
Ӳт-пӳ ялан таса пулмашкăн
Çарта усă кураççĕ… **супăнь.**
Сывлăша çӳл тӳпере
Тĕрлĕ йĕрсемпе чĕрет.
Кайăкран хăвăрт вĕçет,
Ку вăл – пысăк …**самолёт.**
Пысăк тимĕр япала –
Гусеница урапа.
Шалта ларать маттур салтак,
Çулпа пырать хăватлă… **танк.**
Пичче хыççăн пысăк ӳсĕп,
Эп те кайăп салтака.
Сыхлама ăна пулăшăп
Хамăн тăван… **çĕр-шыва.**
Тĕрлĕ çар ĕçне вĕрен,
Пул хастар эс, çирĕп, вăйлă.
Нихăçан та тĕнчере
Ан пулайтăр хăрушă… **вăрçă.**

Е р т с е   п ы р а к а н.

Ачасем, пĕлетĕр-и?
Ăнăçу пулать ялан
Тус çумра пулсан –
Юлташсемшĕн куç хупман,
Çапăçура хăраман.

Малалла командăсемпе ăмăртма пуçлăпăр, хамăр туслăха тĕрĕслĕпĕр.

**1-мĕш ăмăртура** командăсен мечĕкпе персе кеглисене лектермелле. Ăмарту хыççăн пĕтĕмпе кашни команда миçе кегли лектернине пĕтĕмлетӳ туса каласа хăвараççĕ.

**2-мĕш ăмăрту.** Командăсем пĕр-пĕрин хыççăн лартнă 3 ункă витĕр тухаççĕ. Ертсе пыракан пĕтĕмлетӳ туса хăварать.

**3-мĕш ăмăртăва** сирĕн аçăрсене чĕнетпĕр. Ачасене хăйсен хулпуççи çине лартса мечĕке кубиксем хушшипе тытса пымалла.

Е р т с е   п ы р а к а н. Чăн та, пирĕн аттесем питĕ маттур. Вĕсене юрăпа савăнтарар.

**«Будем в армии служить» юрă** ( сăвви *В.Малковăн,* кĕвви *Ю.Чичковăн*).

Е р т с е   п ы р а к а н. Арçын ачасем, эсир те пулас салтаксем. Сире ушкăнри хĕр ачасем çĕр-шыва хӳтĕлекенсен кунĕ ячĕпе саламласа моряк ташши парнелеççĕ.

«На палубе матросы» кĕвĕпе хĕр ачасем ташă ташлаççĕ.

Е р т с е   п ы р а к а н. Тав сире, хĕр ачасем. Халĕ эпир «Пограничниксем» вăйă выльăпăр. Эсир пограничниксем çинчен мĕн пĕлетĕр? *(Ачасем каласа кăтартаççĕ.)* Пограничниксен яланах питĕ сыхă, тимлĕ пулмалла. Ку вăйăра, ачасем, сирĕн шăнкăравсем çакнă вĕрен айĕнчен тухмалла. Икĕ пограничник вĕсене икĕ енчен сыхлать. Хăш ача шăнкăрава лексе сасă тăвать, çавна пограничник тытать, вăйăран кăларать.

Вăйă хыççăн ачасем хăйсен вырăнĕсене кайса లараççĕ. Икĕ ача тухса сăвă калать.

Юратнă çар çинчен паян
Савса юрлатпăр юрăсем.
Мире сыхлаççĕ тăшманран
Хастар Раççей салтакĕсем.

Вăрçă нихçан та ан алхастăр
Хуласенче те ялсенче.
Ӳссе çитсе пуласчĕ паттăр,
Сыхласчĕ мирлĕ тӳпене.

Зал варрине тетте автомат тытнă арçын ачасем тухаççĕ. Вĕсем О. Газмановăн «Россия» кĕввипе ташă ташлаççĕ.

Е р т с е   п ы р а к а н. Паянхи кун эпир тепĕр хут çарта пулнă арçынсене, пиччĕрсене, аслаçăрсене тата кукаçăрсене чун-чĕререн саламлатпăр. Вĕсене ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

Арçынсем пулман пулсан
Çара камăн каймалла?
Килте атте пулмасан
Пурнăç йывăр пулмалла.

Манăн атте пит маттур,
Ăслă, вайлă та правур,
Пур ĕçе те пултарать,
Юрлама та юратать.

Атте ырă та хаваслă,
Вăл йĕркене юратать.
Пушă вăхăт тупăнсассăн
Манпа вылять, савăнать.

Аттене эп ыталатăп,
Хăлхинчен пăшăлтататăп:
– Сана хытă юрататăп,
Ялан çумра пулма ыйтатăп.

Атте пек пулас килет,
Çирĕп кăмăллă, хастар.
Çĕр-шыва сыхлас тесен
Ачашланма кирлĕ мар.

Саламлап асаттене,
Юратап кукаçие,
Пархатарлă ĕçпеле
Вĕсем сыхланă çĕр-шыва.

Тавах тăван Раççей çарне,
Унăн мухтавлă салтакне.
Ĕмĕрсемпе мире сыхлать вăл
Лăп пурнăçра, вăрçăсенче.

Ачасем пĕр рете тăрса «Пурте герой пулар-и?» юрă юрлаççĕ
(сăвви *И. Малкайăн*, кĕвви *Г. Лебедевăн)*.

Е р т с е  п ы р а к а н. Пирĕн уяв вĕçленчĕ. Хамăр арçын ачасене эпир вăйлă, паттăр, ӳссен çĕр-шывăн чăн-чăн хӳтĕлевçисем пулма сунатпăр. Халĕ ачасем уява килнĕ ханасене хăйсем тунă парнесемпе савăнтарасшăн.

***Т.Н. Яковлева**, Йĕпреç районĕн Хурамалти*
*«Весна» ача сачĕн воспитателĕ*

## *Тупмалли*


УМСĂМАХ ................................................................................................. 3

ШКУЛЧЧЕНХИ ВĔРЕНӲ УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕНЧЕ УЯВСЕМ ИРТТЕРЕССИ .. 4

ТĂВАН ЧĔЛХЕ – АТТЕ ĂС-ПУÇĔ, ТĂВАН ЧĔЛХЕ – АННЕ САССИ .............. 7

ÇАМРĂК КĔРЕШӲÇĔН ШКУЛĔ................................................................10

ПĔЧĔК ТЕНКĔ ПАТНЕ ХĂНАНА ...............................................................13

ЫРĂ, ЧĂТĂМЛĂ ПУЛСАССĂН ТĔНЧЕ ТЕ ПУЛĔ ÇУТĂРАХ ...........................17

СУРХУРИПЕ РАШТАВ УЯВĔ .....................................................................20

АСЛĂ ÇĔНТЕРӲ КУННЕ СУМА СĂВАТПĂР.................................................28

ЮМАХРИ ÇУЛ ÇӲРЕВ ...............................................................................32

МОЙДОДЫР ПОСЫЛКИ............................................................................36

АННЕСЕН УЯВĔ.........................................................................................38

ПĔЧĔК ТĔПЧЕВÇĔСЕМ...............................................................................41

ÇĔНТЕРӲ КУНĔ .........................................................................................44

ЧЫС ТА МУХТАВ РАÇÇЕЙ САЛТАКĔСЕНЕ ..............................................50

ÇУРХИ ВĂРМАНТА.....................................................................................54

МĂНКУН УЯВĔ ...........................................................................................57

ЧĂВАШ ВĂЙĂИСЕН АСАМЛĂ ТĔНЧИНЧЕ..............................................61

КАЙĂКСЕН УЯВĔ........................................................................................64

ÇĔР-ШЫВА ХӲТĔЛЕКЕНСЕНЕ САЛАМЛАР!............................................67

БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии

Учебное издание

**Шкулччен хи вĕренӳ организацийĕсенче ирттермелли мероприятисем**
**Мероприятия для проведения в дошкольных образовательных организациях**

Сценарисен пуххи
Сборник сценариев

*На чувашском языке*

Составители – *Н.В. Доброва, Л.А. Смирнова*
Редактор *Р.К. Игнатьева*
Компьютерная верстка *И.В. Матвеева*

Формат 60x90/16. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Тираж: 50 экз. Заказ № 37.

Чувашский республиканский институт образования
428001, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М.Горького, 5.

Отпечатано в типографии «Перфектум».
г. Чебоксары, ул. К. Маркса, д. 52.
Тел.: (8352) 32-05-01